67
43422



Энтип Ваççи

# ПЫЛ ÇУНĂ ИР

Национальная библиотека ЧР
4-043422

Талантпала хавхаланăх килĕшӳсĕр.
Тулман, ан пултăр сăмахĕрлĕх парне.
Ĕҫри йĕнша тăванлăх кирлĕ — ӳстер,
Тупталантăр торлĕх!—тет, Васкнă тете.
Сăпайлă ирă ӑна — кулăшла илемĕ,
Вăлак ҫут чăнлĕха хӳтĕлекен...!
Пуҫа тайса „Пил булă вăр илемлĕ —
ниҫтан ан вилтĕр! Ҫун — ан тӳлеклен!..

В. [illegible]
1981 ҫул.

*Аннем чĕри тапать ман кăкăрта,*
*Тасалăхĕ ун — йăшă кăмăлта,*
*Эп саврăм унпала этемлĕхе,—*
*Мухтав сана, анне, ĕмĕрлĕхе!*

*Атте чĕри тапать ман кăкăрта,*
*Вăл харсăр арăслан та, кăйкăр та,*
*Вĕрентрĕ вăл мана тĕрĕслĕхе,—*
*Мухтав сана, атте, ĕмĕрлĕхе!*

*Туссен чĕри тапать ман кăкăрта,*
*Вăл нихăçан сӳнми шĕл-кăвартан,*
*Ун йăшшинче упрарăм пĕрлĕхе,—*
*Мухтав сире, туссем, ĕмĕрлĕхе!*

*Савни чĕри тапать ман кăкăрта,*
*Чуна чĕм кĕртекен хевти пуртан*
*Вăл чĕртрĕ туйăмри хĕрӳлĕхе,—*
*Мухтав сана, савни, ĕмĕрлĕхе!*

*Çĕршыв чĕри тапать ман кăкăрта:*
*Мĕльюн чĕре, юнташлă йыш пуртан,*
*Упрать ытарайми ирĕклĕхе,—*
*Мухтав сана, Çĕршыв, ĕмĕрлĕхе!*

*Пур сивĕнми чĕре ман кăкăрта:*
*Вăл — халăхăн, хăрми тĕп тымартан*
*Вăй-хал парать вăл вилĕмсĕрлĕхе...*
*Тав, халăхăм, сана ĕмĕрлĕхе!*



АКЧ К84.09(=Чу
Чу
Э67

*Энтип Ваççи*

# ПЫЛ ÇУНĂ ИР

Сăвăсем
Поэмăсем

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1979

С(Чув)2
Э 67

Энтип В. И.

Э 67 Пыл çунă ир. Сăвăсемпе поэмăсем. Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви, 1979 ç.

272 с.

«Пыл çунă ир» — Чăваш Совет çĕршывĕпе Раççейĕн ытарайми илемлĕ çутçанталăкĕ çинчен, пултаруллă ĕçре тăван ялĕсене те, хăйсене те улăштарса çĕнетекен ĕçченсем çинчен, кĕрлевлĕ-васкавлă вăхăт çинчен, тĕлĕнтермĕшлĕ илем шыракан-тăвакан этемĕн хавасĕпе хуйхи-суйхи, хавалĕпе хавхаланăвĕ çинчен, иртнипе хальхи пурнăç, малашлăх ĕмĕт çинчен хывнă сăвăсемпе поэмăсенчен тăракан кĕнеке.

Энтип Ваççи произведенийĕсен чĕлхи сĕтеклĕ те сăнарлă, шухăш туйăмĕ диалектикăлла аталануллă, янăравĕ нумай сасăллă, палитри пуян та çутă.

С(ЧУВ.)2

4-43492

Э $\frac{0743-125}{М\ 136(03)-79}$ 48—79

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1979 ç.



# ПЫЛ ҪУНӐ ИР

## ВĂРÇĂ ТĔЛĔКĔ.

Вăрантăм та çĕрле, сехĕрленсе ӳксе,—
Çĕр кисренет! Мĕн пулнă? Мĕн пуçланнă?!
Асать вут-çиçĕм! Ахăрса, кĕрĕслетсе,
Тем çывхарать! Пăхатăп — кантăк ваннă...
Чăлл! çуталать самантлăха мĕнпур тĕнче.
Тем шартлатать, тем арканать — хăрушă!
Йăлтăртатать кăвак шевле куç умĕнче —
Куç йăмăхать! Ним курăнмасть пĕр хушă.
Часрах — тул ирĕкне! Тен, эп... чăн тамăкра?!
Ак вĕрлĕке чĕтревлĕн хыпашлатăп...
Сасартăк... асăрхап та ăшă çумăра! —
Вут-çиçĕмпе ыталанса ташлатăп...

## АЧАЛĂХ

Шăп икĕ талăк çил-тăман ӳлерĕ.
Сенкер пăрпа тĕрленчĕ чӳрече.
Татах, татах анне ĕçрен килмерĕ —
Çапаççĕ авăн чăтлăх леш енче.

Вĕреп, вĕреп — çук, ирĕлмест ним чухлĕ
Пасарнă пăрăн чĕнтĕрĕ-тĕрри:
Юн, ӳт ăшши пĕр чĕптĕм те çук пулĕ...
Ак тĕлĕретĕп: сивĕ çав тери!

Чӳречере — епле илемлĕ чăтлăх!
Эрешлĕ лăпăс-лăпăс йывăççем.
Тем илĕртмест, тем ăшăтмасть çак хăтлăх:
Ырхан чакак, хăть эс вĕçсе иртсем!..

...Юр пейзажа хĕвел кăшт ирĕлтернĕ —
Çакна сăнатăп пит хĕпĕртесе:
Кăсăясем яла илсе çитернĕ
Çунаттисем çинче çурхи тĕсе!

## САЛТАК ÇЫРĂВĔСЕМ

— Хĕвел ачи Энтип, сар çӳçлĕ каччă,
Васкавлăн кĕр-ха, кĕр-ха ман пата!
Аллу сан ырă, çăмăл пулаканччĕ —
Çырусене эс ăшшăн вулаканччĕ:
Хыпар илсеттĕм — уç-ха çак хута!..

Салтак çырăвĕсем... Е виç кĕтеслĕ,
Е тар шăршиллĕ çӳп-çӳхе конверт...
Кашни пĕр кукăр-макăр вĕт йĕркеллĕ,
Сăмах тăхлан е хĕртнĕ хурçă тĕслĕ...
Уçма — хăрушă, вуласси — хĕн-терт!

Аппа-инке! Салтак тете-пиччемĕр!
Каçарăр — таврăнни, таврăнманни:
Эп — çылăхлă... Анчах — мана питлеймĕр...
Тем тĕрлĕ хура-шур кăтартрĕ чĕмсĕр
Ир çитĕнтернĕ вăрçă самани!

Чее юмахçă пек, вуланă майăн
Илемлететтĕм эп çырусене:
Хавас сăмах хушаттăм пуль нумаййăн,
Салам çине салам... Пурах пуль айăп:
Пит пулăшас килетчĕ çынсене!

Çук сăмахран телей туни те пулчĕ.
Илтсе салтак чĕри кăшкăрнине,

Хура хыпаран йӳҫ куҫҫуллӗ хучӗ
Ыр хыпара, тен, тухрӗ... Тӳсӗм пурччӗ —
Никам курмастчӗ эп макӑрнине...

Те ӗненетчӗҫ, те — сӳнменшӗн шанӑҫ —
Хӑш чух пулатчӗҫ ӗненем пекки...
Тен, парнеленӗ пӗр самантлӑх канӑҫ?
Асапчӗ те — сӑвап сунатчӗ ман ӗҫ!
Чакатчӗ терт, пырсан ҫынсен екки.

...Ҫапла шанма, кӗтме пӗлен тӑванӑм
Вӗрентрӗ мар-ши ӗненме ырра? —
Эп шухӑшлатӑп ӳснӗҫем хавалӑм...
...Халь пурнӑҫ чӑнлӑхне хӑш чух айваннӑн
Илемлететӗп мар-ши сӑввӑмра?..

## ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ

Варкăшать ялав çилпе илемлĕн —
Усăнать, юр-çумăрпа шӳсессĕн.
Çĕнĕ чух çунать вăл вут-хĕлхемлĕн —
Шурăхать, хĕм-çулăмĕ сӳнсессĕн.

Ялавсем хăш чух çынла йĕреççĕ —
Хĕрлĕ куççуле çилсем шăлаççĕ,
Тумлисем ăша çунса кĕреççĕ —
Юн хĕлхемĕ, ĕненӳ пулаççĕ...

Пурнăçра, кĕрешӳре яланлăх
Çуралать çапла чи çирĕп пĕрлĕх —
Çавăнпа ман алăри ялавăм
Чĕрепе ӳтри юн тĕслĕ, хĕрлĕ.

Ялавсем пире вăй-хал кӳреççĕ —
Пулассишĕн кĕрешме чĕнеççĕ.
Йывăрлăх килсен, вута кĕреççĕ —
Чĕр юнпа пĕветĕнсе, çĕнеççĕ!

— Анне, камсем вӗҫеҫҫӗ тӳпере,
Кӑвак тӗтре ӑшне кӗре-кӗре,
Ик юплӗн е тӳп-тӳррӗн ретленсе,
«Ҫурлин-кӗрлин! Кӗрлин-ҫурлин!» тесе?

— Тӑрна карти-ҫке, ыльӑм, ҫур енне
Васкать чун-кӑмӑл туртнӑ ҫӗр енне...

— Анне, камсем вӗҫеҫҫӗ пит ҫӳлте,
Варкӑштарса шап-шурӑ пӗлӗте,
Ертӳҫӗ хыҫҫӑн хурлӑн кӑшкӑрса,
Ҫӑп-ҫӑмӑл мамӑк ҫӗрелле тӑкса.

— Шур акӑшсем-ҫке, ыльӑм, кӗр енне
Васкаҫҫӗ кӑмӑл туртнӑ ҫӗр енне...

— Анне, кала: тухса кӗрле-ҫурла
Пит йывӑр та инҫе-инҫе ҫула,
Ҫак вӗҫен кайӑксем мӗн-ма, мӗн-ма
Кунта анмаҫҫӗ чӗпӗ кӑларма?

— Тен, анӗҫ, ыльӑм, пурӑна киле —
Тавра чечекленсен... Ҫурла-кӗрле...

## ХĔВЕЛ ТĔТТĔМЛЕННĔ ЧУХ

Куçăм — кăн-кăвак çеçке,
Пиçнĕ тулă хумĕ — çӳçĕм...
Ирĕк хир хуçи кĕтӳçĕн
Кăмăлĕ хавасчĕ-çке?!

Йӳçĕ эрĕм, кикенек
Шăршипе анрарăм пулĕ —
Какăр шăп. Тавра — тӳлек.
Çул — вăрçтарнă вăкăр çулĕ...
Аслатиллĕ çумăра
Сиснĕн, пăчăхать чĕре те.
Вĕршĕн вĕркĕшет умра.
Эрлĕк сулханне кĕретĕп.
Çарăм * тăршшĕ пушшăма
Шарт! çапатăп аслатиллĕн —
Тен, пăрахĕ вăл шума
Ман хыçран çĕлен пек тимлĕн...
Урнă евĕр мĕкĕрет
Куç айне юн аннă вăкăр.
Пĕлĕт çук çĕртех кĕрлет
Тип аçа — шăрт-шартсăр, вăйсăр...
...Мĕн тери хитреччĕ ир!
Кун та, кăмăл та ак сӳрĕк.
Мĕншĕн тĕксĕмленчĕ хир?
Йӳрĕк çил антарчĕ нӳрĕк.

---

* Ç а р ă м с е м — юханшыв ячĕ.

Хуралать хĕвел хĕрри!
Çутçанталăкра — пăлхавăр.
Кайăк-шăрчăксен юрри
Хÿтлĕхре шăпланчĕ хăвăрт.
Кĕпĕрленчĕ выльăх тем —
Пуçланассăн кашкăр çуйĕ...
Йытă найкăшать. Кичем.
Çивĕчленчĕ сисĕм-туйăм...
...Мĕн тери хитреччĕ кун!
Ылтăн хĕлĕхне карсассăн,
Хĕвеле итлетчĕ чун —
Килĕшÿллĕччĕ пур сасă.
Хĕвелçаврăнăш пуçра
Ĕмĕтĕм çунат саратчĕ —
Шухăша тĕнче тавра
Çавăрса илсе каятчĕ...
Халь ак... çур хĕвел хура!
Самантран — унки хупланĕ...
...Кăтăклатăп вăкăра
Майраки панчен:
— Лăплан эс...

Куç тишкерме пуçларĕ тĕнчене —
Эп илеме пикентĕм тĕпчеме:
Тин шăтнă хĕрлĕ курăк калчинче,
Шыв юхăмĕн кăвак вутчулĕнче,
Çеçке кăларнă çулăм чĕлхинче,
Вĕçме хăтланнă кайăк чĕппинче
Эп илеме пикентĕм тĕпчеме —
Куç тишкерме пуçларĕ тĕнчене...

Тин шăтнă хĕрлĕ курăк калчинче,
Шыв юхăмĕн кăвак вутчулĕнче —
Тин пиçнĕ çĕр çырлиллĕ ĕшнере
Хĕрачапа тĕл пуличчен пĕрре
(Унччен, тен, пĕлеймен те тĕлĕнме!) —
Шыранă эп тĕлленнĕ илеме
Шыв юхăмĕн кăвак вутчулĕнче,
Тин шăтнă хĕрлĕ курăк калчинче...

Çеçке кăларнă çулăм чĕлхинче,
Вĕçме хăтланнă кайăк чĕппинче —
Куçне, çӳçне, питне, пĕвне-сине
Асăрхиччен вăрман хĕрачинне
(Ан айăплăр ачалăх тăнлăхне!) —
Шыранă эп тĕнче вăрттăнлăхне
Вĕçме хăтланнă кайăк чĕппинче,
Çеçке кăларнă çулăм чĕлхинче...

## АННЕ ХАЛАЛĔ

Çутă ĕмĕтсен çуначĕ çĕклесен хулна,
Хĕвелпе пĕрле хĕмлен те — тух, ачам, çула.
Умăнта — илем шыравĕ, аслă çул, инçет,
Иксĕлми ĕç, каксĕр пурнăç — йалт сана чĕнет!
Тен, тăван ене çĕнетĕн, каймăн инçете —
Пурнăç тăвăн йăх тымарĕ тарăн çĕр çинче.
Е тухса кайма тӳр килĕ ӳснĕ кил-çуртран —
Кĕрлĕ-çурлă, юр-пăр урлă утăн эс çуран.
Ан шиклен çултан! Эс — çамрăк! Уçă алăку.
Пушă, шăтăк çех ан пултăр йăтнă кутамкку.
Кăмăлу çех тӳрĕ пултăр, уçă та чипер!—
Пурнăç таппипе хăюллăн утăмна ĕнер.
Шуçăм çутинчен хĕм илтĕр вĕçсĕр тĕлĕнӳ.
Чĕрӳнте хунав ан ятăр тĕлсĕр кӳренӳ.
Систермесĕр ан ермештĕр пăнтăх е кĕве —
Хăш чухне хĕн уйăрмашкăн çĕнĕпе кивве...
Сив сăмах та, тен, амантĕ хӳтсĕр чĕрӳне —
Пурпĕрех куç айĕн ан пăх çут тĕнче çине.

Тен, инкек-синкек те курăн... Тӳс йалт арçынла!
Такăнса ӳксессĕн — тăр та талпăн малалла.
Тен, сана вĕрентеймерĕм ар пулса çитме.
Йăваран siксе пуçлаççĕ кайкăрсем вĕçме...
Сисĕнми пулсан сасартăк ĕмĕрхи чĕнӳ —
Пĕл: ăна чĕртсе вăратĕ çĕр е ват аннӳ.
Ĕненетĕп: çын эс пулăн — ĕççынни ятне
Халăхпа пĕрле çĕклейĕн çут хĕвел патне.

## ХУРҪĂ ЧАН

Пулсаччĕ ыр йăла пирти хресченĕн:
Хаяр хĕл хушшинче тăман тухсан,—
Ҫулти ҫын тĕлсĕр ан аташтăр тенĕн,—
Ял кунĕн-ҫĕрĕн янрататчĕ чан.

Пĕри — ҫултан тухса кайса, ҫĕтетчĕ.
Тепри, ҫав чанăн сассине илтсе,
Чи тĕксĕм тăвăлта килне ҫитетчĕ —
Вăй-хал пĕтсен, шуса, упаленсе...

Таҫти уй-хирĕн шур юрне ашатăп —
Ҫĕкленчĕ кутсăр-пуҫсăр ҫил-тăман.
Ҫухалчĕ ялăм ҫулĕ — аташатăп...
Ăҫта сассу, чĕнӳллĕ хурҫă чан?!

И-43422
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБ...

## ТЕЛЕЙ КАЙĂКĔ

Хавшанă çĕр çинче асатчĕ-ха синкер,
Анчах — ун терчĕпе килĕшменрен кăра тăн —
Асаматри тĕсрен, çеçкесенчен сенкер
Телей кайăкĕсем тĕлĕкĕмре кураттăм...
Вĕркетчĕ таврара çерçи, курак, чакак,
Вăрçа пăхмасăрах юрлатчĕ шăпчăк, шăнкăрч.
Çўреттĕмччĕ çунса — хўхлес пекех ак-ак —
Пĕр ĕмĕтпе супса... Калатчĕç: ўкнĕ ăншăрт...
Салхуччĕ эп час-час — илĕртнĕрен инçет
Тăван сас-тĕссене илтмен-курман пуль лайăх,
Ыйтаттăм тўперен: «Ăçта вĕçсе çўрет
 Ман ĕмĕт-тĕлĕкри сенкер çунатлă кайăк?!»

Инçет çул-йĕрĕпе çўрерĕм эп самай —
Çăтмах кайăкĕсен асаматла илемлĕ,
Вут-кăварла тĕкне курса сăнанă май
Туймарăм хама хам çĕр çыннинчен телейлĕ...

...Тăван çĕр çулĕпе утатăп ялалла —
Килетĕп хăнана... Татах кунтан, тен, кайăп.
Сасартăк!.. Чун хуппи кĕрслетрĕ папакла —
Умра лара парать сенкер çунатлă кайăк!
Çăтмах кайăкĕнчи тĕссем унра пурах,
Анчах та вĕсемлех пит капăр вăл тееймĕн.
...Такамшăн çак илем ятран... кăвак курак —
Эп курнăçрăм унпа тăван енре телейлĕн.

## МĔНЛЕ ПУРНАН?

— Мĕнле пурнан? — ыйтать манран хресчен,
Эп инçетрен яла пырса çитсен.
Те шӳтлесе, те чăнласах калатăп:
— Тунката кăклатăп...

— Мĕнле пурнан? — чăрр! тинкерсе куçран,
Ыйтать те ырă тус-тăван манран:
— Хуллен-хуллен-çке... Чăвашла,— вăлтатăп,—
Çăлтăр шутлатăп...

— Мĕнле пурнан, ачам? — ыйтать анне,
Çунаттине сарса ик хул çине.
— Аван! Чипер! — вăтанарах кулатăп,—
Телей шыратăп...

Çыран... Пăр куписем мĕльюн çул ĕлĕкрех,
Сив çурçĕртен шуса, çĕре амантнă.
Юр, çумăр шывĕсем çурса кĕре-кĕрех
Çав пĕчĕк шăйрăка çултан-çул тарăнлатнă.

Пит чăнкă халь çыран — пирченейми суран?..
Тĕпчевçĕ хирургла ăна куллен сăнатăп,
Хăрушă чир историне вулатăп —
Тăван çĕр пулăшу ыйтать манран!
Çĕр чăмăрĕ си-сийĕн чăмăртаннă...
Мĕскершĕн çав сийсен кашнийĕн тĕрлĕ тĕс?
Чи юлашки хăла тĕспе сăрланнă...
Мĕнле çĕр суранне халь тӳрлетес?

Çыранăн нӳр тĕпне хĕвел ӳкмест — пит тĕксĕм.
Ĕнтĕркесе çитсе, хăпартăм та çӳле —
Çĕр пичĕ чечекре! Эп лартнă йывăç тĕм-тĕм
Ӳссе кайса çĕре сиплет епле!

## ÇИТЕТ ХАВАСЛĂ МАЙ!

Хăмач сутаççĕ лавккара:
Çитет хаваслă Май!
Нихçанхинчен кунта вара
Паян çынсем нумай.

Хĕвел çути, йăлт ухтарса
Иртсе витринăран,
Кĕрет, куçа йăмăхтарса,
Яр-уçă кантăкран.
Вĕçсе анать хăмач çине —
Хĕм авăрса ухать.
Пике вылятрĕ хаччине —
Ана касма пăхать!
Леш — йăлт сикет те пит çине —
Хăть шыв сапса сÿнтер!
— Хăмачĕ шеп! Хăш — пиччĕн, э?
Хăш енĕ ун тÿнтер? —
Пĕр карчăк çулăм чĕлхине
Пăхать лÿчĕркесе.—
Пит хÿхĕм тĕртнĕ пусмине —
Хурлаймăн тиркешсе!

Вут çиппине сÿтсе илсе
Вĕçне кăшт йĕпетет:
— Çăра пĕветнĕ-çке! Пĕлсе!
Шупкалмĕ тĕсĕ! — тет.—
Илес пуль — йÿтетет мăнук:

«Уяв çитет яла —
Илемĕн иккĕ тан, ман — çук
Вутран вĕри ялав...»
Суту сĕтелĕ — вут-кăвар!
Вут-çулăм пит пике
Йăл-ял кулса ĕçлет вăр-вар —
Чаксах пырать тĕрке.
Виçе хĕç евĕр йăлл та ялл
Çиçет ан вутĕнче.
— Хăмач айнех пулать пуль ял! —
Шўтлерĕ ĕмпичче.
— Туянтăм акă — çурт тăрне
Лартас, ялав туса,—
Çынсем калаççĕ пĕр-пĕрне,
Хĕвел умне тухса.
Ак çитрĕ клуб хуçи Анук —
Сар йĕтĕн çўç пике.
— Юлмарĕ сан валли — ан ух! —
Йĕплет ăна инке...
Ялйыш кăмăлĕнче вĕрет
Хавхалану хевти!
Чакмасть, ўссех пырать черет:
Унта — ватти-вĕтти...

Хăмач сутаççĕ лавккара:
Çитет хаваслă Май.
Нихçанхинчен кунта вара
Паян çынсем нумай.
Тăратăп эп те ялйышпа
Шăв-шавлă черете,
Çурхи ирĕклĕхри ăшша
Туйса чун-чĕрепе.

Ĕç чĕртнĕ аслă пĕрлĕхре
Эп çĕклĕп хавала,
Вăй илĕп демонстрацире
Аса, чун-кăмăла.
Мĕльюн çын утĕ ман çумра
Рет-рет, юрла-юрла.
Çĕкленĕ вăйлă аллăмра
Ялав хĕм-çулăмла.

Çураки вĕçленчĕ! Уçă, савăк
Кăмăлĕ хастар ял çыннисен —
Сывлăш çавăрма, канма пĕр авăк
Май пулсан, хавасланать хресчен.
Чĕрĕлĕх сĕткенĕ витнĕ вăрлăх
Калчине сăмсалантарнă уй.
Çĕрĕпе лӳшкерĕ çумăр вăйлăн,
Ирпеле — пуçланĕ акатуй!
...Хурăнлăх. Илемлĕ, хӳтлĕ вырăн.
Кивĕ çулçă витнĕ кăпăш çул.
Шăплăха та итлеймерĕм ыррăн —
Ман умра, хыçра çынсем тем чул.
Ирĕк ĕшнене чи ятлă-сумлă
Ватăсем ак çитрĕç чи малтан.
Вĕсене сырса та илнĕ çумлăн
Утакан çынсем картан-картан.
Акатуй пуçланасси те çывăх.
Халăх — çĕр чечекĕсен пуххи.
Пĕр-пĕрне сунаççĕ ырлăх-сывлăх:
— Мĕнлерех пурнатăн? Лайăх-и?
— Лайăх-ха. Чипер! — шавлать ялйышăм.
Кăмăлăм тулать, çакна илтсен.
«Çĕр çынни, малашлăхшăн пил йышăн! —
Тетĕп ăшăмра.— Кĕтни, çитсем!»
Паллă ĕмĕртен кашни чăвашшăн
Акатуй мĕнле хĕрӳ иртни.

Эп ун çĕн сĕмне халь чыс тăвасшăн —
Шутсăр килĕшет мана çĕнни!
Килĕшет çак уява чылайăш
Машинпа килни, тум капăрри.
Ял сăн-пичĕ çĕнелни пит лайăх,
Шеплĕ чĕрере хавал пурри.
Илĕртет хĕвеллĕ, ăшă туслăх,
Варлăрах пек этемпе этем.
Вăхăт иртнĕçем халь пурнăç тулăх —
Çăкăрлă çын пулĕ-и кичем?!
Перекет-пехечĕ пур хресченĕн —
Çакă мар-и чи пахи, ырри.
Çĕрĕçлевçĕ халь хавассăр темĕн —
Ав, епле янрать кунçул юрри!
Пархатарлă ĕçĕнче те шавлă
Каннă чух та хăй тивĕçлĕхне
Çухатман чăваш çынни нушаллă,
Кӳренӳллĕ пулмĕ ĕмĕрне.
Çĕнелӳ çĕршывĕ, çĕр ĕçченĕн
Паянхи шăпишĕн тав сана!
Çавăнпа пуçлать, вĕçлет пит меллĕн
Хăй акатуйне чăваш — сăна.

Хĕвелĕ! Çунтарать те çунтарать!
Çанталăкĕ — тӳсме çук шăрăх.
Эшкер Эрхипĕ çумăр çутарать,
Шыв уçласа çут пăрăх тăрăх.
Шăнкăртатать, шилет фонтан —
Шарлакĕ авăк! Асамат кĕперĕ
Çутать Эрхип ял хирĕнче — ăмсан!
Вăл — ăрăмçă, эппин — типпе çĕнтерĕ.
Çĕр çыннине хальччен курман хăват
Тăван çĕршывăм панăран-ши — курăр! —
Сĕт çумăрĕ, çу çумăрĕ çăвать —
Çын хăй çутаракан сипетлĕ çумăр.
— Çаран — ем-ешĕл. Курăкĕ — рехет!—
Мухтарĕ çумăр ăстине кĕтӳçĕ.
Ав, пахчара та сывлăм пĕрĕхет —
Унта та тутлă çимĕç ӳсĕ.
Йĕпхӳ е шалкăм — хăшĕ кирлĕрех,
Çавна этем çутарĕ тараватлăн
Сехет, пĕр кун е эрнешер — пĕрех:
Хевти — çĕршер пин киловатт ун.
— Кун пек тип çулсенче пĕччен хресчен
Хăрушă выçлăхпа аптранă ĕлĕк,—
Аса илет ман тус.— Хальхи ĕçчен
Уй чӳкĕ тумĕ, хумĕ çĕлĕк...
...Сипетлĕ çумăр! Те ăшша пиçсе,
Те юхăм юррине ытараймасăр,

Эрхип хăй кĕчĕ ун айне çиçсе —
Питне ÿпĕнтерсе, йăл кулчĕ сассăр.
Вара, кăшт çÿçенсе те киленсе,
Хаваслăн хăйĕн çумăрне итлерĕ —
Çÿлтен çÿле илемлĕн çĕкленсе,
Ун çийĕн çунчĕ асамат кĕперĕ.

## ПЫЛ ÇУНĂ ИР

Кураттăм тĕслĕ, çутă тĕлĕк,
Вăрантăм та — епле хитре тавра!
Янрать пек сывлăшра пин-пин йĕс хĕлĕх,
Пылаклă шăрăш уçлăхра.

Пыл çунă ир! Те чĕрлĕх туйĕ
Çĕркаç пуçланнă çутçанталăкра?!
Хальччен таçта упраннă çутă туйăм
Вăранчĕ те йăлл! йăлкăшрĕ куçра.

Ак çиçкĕнчĕ вут-шăнăр тăрăх
Те киленӳ, те хĕпĕртӳ кĕвви...
Йăмра çулçи çинче — шевлеллĕ сăрă,
Сĕтеклĕ ун кашни тĕрри-çĕвви.

Урамсене каç витнĕ пурçăн —
Епле çӳхе вăл, ешĕл, йăлтăркка!
Эй, ырă-çке! Эх, çаврăнать-çке пуçăм!
Эй, ан таптасчĕ ешĕл курăка!..

Пиçен йĕппи тумла çутатнă,
Сĕрлев — çап-çамрăк чечексем тавра...
Аçта та пыл йӳçет! Тĕнче пыл татнă!
Темле йăвашлăх, çепĕçлĕх чунра.

Йăмра çулçи те, çĕр те уççăн
Систернĕн туйăнать: «Çын, ырă ту...»
Тăван Çĕршыв! Пыл сывлăмлĕ ман куçăм:
Унта — пыл çунă ир, ман юрату.

Арçынттей пичче çава туптать.
Шур сухалĕ — хĕвĕнче.
Шакмак сакки — мăк çинче.
Çави аври — кăк енче,
Çивчĕш — сунтал хĕмĕнче.
Мăлатукĕ — чан! та чан!
Мăн улăхра — ян! та ян!

Арçынттей пичче çава туптать
Çавра юрă ĕнĕрле-ĕнĕрле,
Çирĕп хурçа тĕрле-тĕрле,
Сывлăмпала хĕртĕнтерсе,
Сывлăшĕпе сивĕнтерсе,
Тĕкĕрченпе шăла-шăла,
Текерлĕкрен кула-кула...

Арçынттей пичче утă çулать:
Шуçăм шевли — куçĕнче,
Шухăш шавĕ — пуçĕнче,
Чалăш çави — аллинче,
Чечек шăрши — сăмсинче,
Ӳчĕ — мунча ăшшинче,
Ӳлтĕк сасси — хăлхинче...

Арçынттей пичче утă çулать
Ушкăн умĕн ута-ута,

Улăп сăртне улăха-улăха,
Вар сулхăнне ана-ана,
Варкăш çилпе савăна-савăна...
Çичĕ хресчен çава сулать —
Çаран çеçки паккус пулать.

Арçынттей пичче капан хывать.
Валем — хĕвел хĕмĕнче,
Валĕ — пике умĕнче,
Чикĕ — каччă аллинче,
Чикĕм — пĕлĕт айĕнче...
Утă ăшне варăнса,
Ураланать ват ăста!

Арçынттей пичче капан хывать
Шет чикĕме шайла-шайла,
Шăчă тавра майла-майла,
Шалаш енне авра-авра,
Шĕвĕр тăрне çавра-çавра —
Шеп капанран тĕлĕнсе,
Шăхлич калать киленсе.

Ейӳ тĕтри пек шурĕ каçĕ.
Çава çĕççи чĕрет тĕме.
Хĕрсем-хĕрарăмсем васкаççĕ
Кĕрекаçа шыва кĕме.
Епле утаççĕ! Шӳт те кулă...
Ĕçре вăйран кайман пекех,
Çак самантра чи ятлă-сумлă
Инке те чунĕпе пикех.
Ак пиçиххи, кĕпе те тутăр
Ӳкет çемçе паккус çине.
Пăхатăп унталла — тем пултăр!
Тем чакăрттарчĕ куçсене...
Тӳпе çути — сар çу... Хастаррăн
Сăнатăп — хатĕрскер вилме! —
Йӳн виткĕç хӳттинчен хăтарнă
Чи килĕшӳллĕ илеме...
Пăшăлтататăп: «Ырă пӳлĕх,
Эс пур пулсан, каçар мана...»
Ай, хĕрĕсем! Ах, йăрăс пӳллĕ!
Инки... Хĕрарăм те ăна!
Кашнин вут-çулăм тулнă ӳчĕ
Çиçет, шалтан чăлл çутăлса.
Хум вăйӑинче шевле чăлт сӳнчĕ —
Епле шыв тăрă та таса!..
Вут янă евĕр шăнăр витĕр,
Хускалтăм, çӳçенсе илсе.

Тем чăштăр турĕ! Курчĕç?! Вилтĕм!
Йĕс çулçупа хупла, çӳçе!
Лешсем — чăнах-ши темĕн сисрĕç?! —
Шыва чăмаççĕ! Çуйхашу!
Алхасрĕç, вутăш евĕр ишрĕç.
— Эй, чунсăр хум, лăплан, ан шу! —
Тесе эп кăшкăрма та хатĕр,
Те кĕвĕçсе, те ăмсанса:
Вĕсем ытла хăюллă, харсăр —
Кăшт вăтанасчĕ, иçмасса.
Мĕн тăвăн, хум чăнах та чăрсăр —
Çук уншăн вăтану тени...
...Шыва чăматăп вăрттăн, чăмпăрт:
Ун лĕп ытамĕнче савни.

Илĕм-тилĕм! Илĕм-тилĕм! —
Илтĕнет чепчен сассилĕн,
Илĕртӳллĕн, ҫил кассилĕн,
Туйăнать чечек шăршилĕн.

Утă хӳшĕ — манăн килĕм.
Шуҫăм. Тăтăм илĕм-тилĕм.
Курăк ҫийĕн хĕр шăрҫиллĕн
Сывлăм ӳкнĕ илĕм-тилĕм,
Пĕрĕхет вăл вут ҫутиллĕн
Утнă май эп илĕм-тилĕм.
Эс—хыҫран! Чĕп ҫунаттиллĕн —
Те юри, те илĕм-тилĕм!..
Туйăнать тăрна таршилĕн
Пирĕн вăйă — илĕм-тилĕм...

Тунсăх чакрĕ. Иртрĕ ҫиллĕм.
Тĕнчере ҫук пек хĕн, вилĕм...
Илтĕнет чепчен сассилĕн:
Илĕм-тилĕм! Илĕм-тилĕм!

## МУНЧА ЮРРИ

Çитрĕ кĕтнĕ шăмат каç.
Мунча хутрĕ ыр анне.
Милĕк пĕçерет акка.
Ăшăтать инке шывне.
Асанне те кив лаçра
Лакăмран сĕрет сăра.

Эх, каяс пульваскарах!
Аяр-аяр-аярах!

Тин пултарнă мунчана
Атте кĕчĕ чи малтан.
Ура тапса маччана
Çатăлтатрĕ кăмăлтан.
Лĕштĕр анчĕ уртăнса —
Сĕрĕм йӳççи тутанса!..

— Ĕç, атте, юрай сăри —
Аяр-аяр-аярри!

Акка çыхнă милĕкпе
Йысна çапăнчĕ темччен.
Такмакларĕ пĕлнĕ пек...
Милĕксем çараличчен.
Тарăма шăла-шăла
Кĕтĕм эпĕ те шала.

Ай-яй! Вĕри — тӳсĕм çук! —
Аяр-аяр-аярук!

Килчĕ кĕчĕ асатте,
Ăшши пачĕ витрипе.
Аçа-çиçĕм асать те!
Йăлт анрарăм вĕрипе.
Тӳнтерсе шыв хуранне,
Тӳнкĕрт! тӳнтĕм урайне.

Пăсĕ çăра, пит хаяр —
Аяр-аярр!

Инке ăшăтнă шывне
Пичче сивĕтрĕ пĕччен.
«Кĕр, шăлли,— йĕрет шăлне,—
Тип мунча авланиччен...»
Çур çĕр иртнĕ чух аран
Тухрăм эпĕ мунчаран.

Ăшши-пăшши — юлашки,
Аяр-аяр-аяркки.

Ӳпкелешрĕм савнипе —
«Милĕк хатĕрлес пуль»,— тет...
Тар тапать савăннипе —
Туй мунчи пире кĕтет!

Эх, пулĕ пĕçеркке —
Аяр-аяр-аяркке!

— Мĕскер хăватлăрах, мĕн аслăрах —
Çунатлă шухăш-и, çын тунă ĕç-и?
Ыйтсаччĕ эс манран... Тен, пит вăрах
Арларăм тупсăм çиппине — ак вĕçĕ:

Çунатлă шухăшлă хĕрӳ ĕçре
Çын хăватне, аслăлăхне шыратăп —
Çĕнелекен çĕрпе çынра куратăп
Эп ĕмĕр чăнлăхне: вăл — пĕл! — пĕрре

Пыл пухать пыл хурчĕ çеçкерен,
Наркăмăш ĕмет хура çĕлен,—
Теççĕ хăшпĕр чух... Тĕпченĕрен
Уçнă пуль çавна — ăçтан пĕлен.

Пурнăçа сăнанă май куллен
Тепĕр шухăш çеçкине ак çурчĕ:
Наркăмăш тусан пылтан çĕлен,
Пыл тăвать наркăмăшран пыл хурчĕ.

# ЁÇÇИ

Ку — самана çуратнă çĕн йăла:
Чи ырлăхлă, ытарайми хаваслă,
Хĕрӳллĕ, çĕкленӳллĕ, аслă
Уяв пек халь çитет ĕççи яла.
...Агрегатсем — парадрипе пĕрех,—
Çут хурçă-тимĕртен кĕç вут тухать-тĕр! —
Ак-ак пĕр харăс тапранма та хатĕр,
Анчах — самант çитмен-ха. Иртерех!
Сĕрлет-кĕрлет ял-йыш уй хапхинче.
Йăмăхтарать куçа çĕкленчĕк кăмăл.
Чун уçă — шӳт те, калаçу та çăмăл.
Тӳпе тӳлек — курнать инçе-инçе...
Ак-ак пуçланĕ савăк ритуал —
Чакать хатĕрленӳн шав-пăтăрмахĕ.
Ак вата çыннăн вăрлăх пек сăмахĕ,
Чуна пырса тивсе, чĕртет хавал.
Сăмах — сăпай ĕççи комиссарне.
Ăна итленĕ чух йышпа пĕр тан тăр.
Ак виç чипер инке арсем умне
Тин пиçнĕ çăкăрпа тухать: «Тутанăр!..»
Пучах кăшăлĕсем тăхăнтарса,
Хĕрсем каччисене сунаççĕ ăнăç —
Хыпса çунса вĕсем туссемшĕн ăвăнĕç,
Кĕр мăнтăрне кĕтсе... Хитре, таса
Чăнах та çак тĕлĕнмелле йĕрке:
Кашни саманчĕ унăн систерӳллĕ,

Пĕлтерĕш тарăн, тупсăмĕ пит çӳллĕ...
Ĕçчен вăй-халĕ тухнă ирĕке!

...Çак çĕн йăла çĕн çăкăрпа тăван,
Çавна кура ăна тытма та ырă:
Мĕн чухлĕ вăл хавасларах — çĕн тырă
Тухăçларах пулассине туян.

...Ав кĕрр! кĕрлет черетпеле мотор,
Вара — хускалнă май комбайн рет-ретĕн –
Хавхалануллăн шухăш вĕçтеретĕн:
Епле эсир, çĕр çыннисем, маттур!
...Пит-куçсенче ак çирĕплĕх ӳсет:
Пуçланчĕ чи хĕрӳ, чи йывăр тапхăр —
Ăна эпир ĕççи тесе мухтатпăр:
Çĕр ĕçлекен чысне вăл тĕреслет!

«Ёççи апачĕ — чи шеппи, тутли!» —
Тесессĕн, çĕр çынни епле ĕненмĕ.
Ялти чи ятлă мăнакка алли
Ăна уй-хир сывлăшĕпе симленĕ.
Кăвайт сӳнмен-ха — тĕтĕмĕ-шăрши
Хуран пăсĕпеле пĕрле кӳ килнĕ,
Ăша тапса тулать те ун ăшши,
Хир туйăнать мăн кĕрекеллĕ килĕн.
...Хăма сĕтел тавра — арçын карти.
Йăлт хатĕр пек, анчах тытман-ха кашăк
Никам алли те — тем кĕтет ватти.
Яшсем хускалкалаççĕ кăшăр-кашăр.
Тӳсет пушаннă хырăм чарличчен
Выçса кайни: йăла пăссан, чыс тарĕ...
Ак мăнакка сĕтелĕ варринчен
Чарланлă алшăлли сирме пуçларĕ!
Шур пĕлĕт айĕнчен хĕвел тухать,
Юхать ăрши хир çийĕн чăлтăр-чăлтăр —
Хĕвел пекех çынсем çине пăхать
Çĕн тырăран пĕçернĕ çĕнĕ çăкăр!
Епле вăл кăпăшка, епле хитре!
Ак мăнакка ăна çемçен, хаваслăн
Çĕклерĕ те пуç тайрĕ уй-хире —
Мĕн пултăр çăкăртан хакли чăвашшăн!
Куçса кĕрнеклĕ алăран-алла,
Хĕвел пекех сĕтел тавра вăл шурĕ —

Кашни ҫӗр ӗҫлекен ӑна чыс турӗ,
Ун тутлӑ шӑршипе сывла-сывла.
Вара — самант хаваслӑхне туйса —
Тирпейлӗн касрӗ ҫӑкӑра хӗрарӑм,
Хӗвел чӗлли ҫынсем умне хурса,
Сӑпайлӑн кулчӗ, тулчӗ тенӗн парӑм...
Ӗҫчен мӗнле ӗҫлет — ҫапла ҫиет.
Ак чарасен тӗпне шӳрпе юлмарӗ.
Ҫӗр, тырӑ, тӗтӗм, пӑс шӑрши йӳҫет —
Ӗҫҫи апачӗн техӗмӗ ҫак мар-и!
...Мӑнаккана хӗрӳллӗн тав туса,
Шавлаҫҫӗ арҫынсем: «Эх, шеп кулачӗ!»
Чунпа ӳт-пӳ вӑй-хӑватне туйса,
Ҫӗр чӗтретсе, пӑхаттирле кулаҫҫӗ.
Вара — татах нихҫан пӗтми ӗҫе —
Кӗрешӗве! Ҫын тӳсӗ — тимӗр чӑттӑр.
...Хастарлӑх хакӗпе ҫех тивӗҫет
Ҫут тӗнчери чи тутлӑ йӳнӗ ҫӑкӑр.

Миçемĕш кун лӳшкет, лӳшкет сив çумăр.
Ана — лапра, кӳлленчĕк е ушах.
Путса лара-лара, сукмаксăр-çулсăр
Хресчен ун хĕррипе утать татах.
Чăлханнă, кĕççеленнĕ çӳç пек пусă —
Çава та витмĕ. Чăн-чăн тамаша!
Кашни салху пучахăн усăк пуçĕ
Хылчăкĕпе йĕпленĕ пек ăша.
Çурăласла кӳпченĕ пĕчĕк пĕрчĕ
«Тархасшăн пулăш!» тенĕн туйăнать.
— Хăçан, хăçан хăмпусенчи шыв пĕтĕ?! —
Тесе хресчен пĕлĕтсене юнать.
Юхать ун пичĕ тăрăх йăпăр-йăпăр
Те тар, те çумăр шывĕ, те куççуль.
Сĕнксе ларать комбайн та — вăйсăр, шăпăрт.
Эй, вăл та ĕçсĕр тунсăхланă пуль.
Кун пек чухне мĕнпур çулталăк ĕçĕ,
Шанса кĕтни каять пек харама...
Йĕп шухăшсен вĕри те çивĕч вĕçĕ
Чикме пуçлать те — хатĕр кăшкăрма.
Ăш вĕçнине кун пек чухне ним сирмĕ —
Асап çăмăлланма памасть çĕре!
Çулла им пулнă çумăр та халь чир-мĕн.
Çанталăк тухнă тейĕн ирсĕре!..
...Хресченшĕн çĕр — шăпа та, юрату та,
Чи ырă ĕмĕт çутакан анне.

Ун ăшшинче йăл илнĕ пĕрчĕ тутă —
Тĕшне вăл пухнă вут-хĕвел вăйне.
Нихçанхинчен те вăйлă тырă-пулă
Ӳстернĕччĕ хресчен хăй хирĕнче —
«Гектар пуçне пĕр икçĕр пăт та пулĕ»,—
Шутлатчĕ тухăçне ĕмĕтĕнче.
Ак халь çĕр, çын, хĕвел пĕрле, пĕр чунлăн
Савса ӳстернĕ тырă йăшнă чух
Епле-ха чул чĕреллĕ, тимсĕр пулăн?!—
Кун пек чухне самантлăх канăç çук.
— Мĕскер тăвас? Эй, сар пучахăм, тыррăм,
Мĕнле сире çак инкекрен çăлас?! —
Çын шухăшлать.— Вырса илесчĕ ыррăн —
Сараймăн урапа айне палас...
Эй, шухăш, пулăш — акапуç тĕренĕ
Çĕн касă çурнă пек, мехел шыра:
Халпа, тавçăрупа çĕнме вĕреннĕ
Ĕçчен çын хĕнĕшпе хура-шура.
...Урапасем ак путăк йĕр хăварчĕç —
Комбайн хускалчĕ! Ăс вăйне кура!
Кун шăрăх чух тĕштырă шĕл-кăварччĕ —
Халь пăсланса юхать ав бункера.
...Часах пуçларĕ çăлтăрлă эскадра
Тĕпрен касма хирсен хивре хумне.
— Тăван çĕршывăм, йышăнсам—ĕç кайрĕ!—
Чăваш тырпуллине çӳл пӳлмĕне.

## ÇĔР ТАРĔ

Ял хĕрринчен хĕвел таран
Хирте кушать ыраш паккусĕ.
Кашни сап-сар пайăркаран
Пăс çĕкленет — сывлать пек пусă.
Тарланă «Колосне» чарса,
Пичке патне васкарĕ каччă —
Çич тĕслĕ вут-хĕм юхтарса,
Çăл шывĕ ĕçрĕ, ĕçрĕ... Канчĕ.
Ик ал лаппийĕн хӳттинче
Йӳн сигарет тивертрĕ. Туртрĕ.
— Эй, эс те, çĕрĕм, ĕççинче
Тарланă-çке! — тесе вăл утрĕ.
Утти ун çирĕп. Хăй — патвар.
Вăл пуснă вырăнта черетĕн
Çăл тапнă пек — кĕр типĕ мар,
Çынна та йывăр, хĕн çĕре те.
Анчах... чакать паккус йĕрки: —
Ӳсет йĕтем çинче тĕштырă.
Çапла ĕçчен çынсен екки:
Йывăрлăха çĕнсен, чун ырă.
...Эп те — хирте: ĕççи тесен,
Ĕçлевçĕ халăхран кам юлĕ! —
Çĕр тарĕпе пиçĕхтерсен,
Сăмах тĕшши те тутă пулĕ.

Ĕҫҫи хĕрсех пырать. Ҫанталăк та уяртрĕ.
Ӳсеҫҫĕ улăп сăрчĕсем хирте, йĕтем ҫинче.
Ҫĕр ĕҫлекенĕн хавалне туятри —
Мĕскер ун чĕринче?!

Тулли машинăсем иртеҫҫĕ вĕҫсĕр-хĕрсĕр:
Парни Тăван ҫĕршыв ятне — васкавлăн леҫмелле!
Лавшар ҫĕн тырă валеҫеҫҫĕ — кĕртĕр! —
Ялта килрен киле.

Иплеш Илли хавас — ун кăмăлĕ тин тулнă.
Епле ан тултăр — тырăпа пĕрле шăпа виҫет:
Ун ашшĕ продотряд салтакĕ пулнă,
Вăл — тырă валеҫет!

Тиевлĕ лавсемпе ялваррипе иртӳсĕн
Курать пек ашшĕ сып-сывах калле таврăннине.
«Тӳлетпĕр,— тенĕ пек вăл, ҫĕнтерӳҫĕ,—
Вут-вăхăт парăмне...

Саманине кура кăшт вăрахрах ҫӳрерĕм
Эп хамăн хĕрлĕ обозпа тумхахлă ҫул-йĕрпе —
Тултарăр пӳлмĕре! Мăян та эрĕм
Туслашмĕ тек хирпе...»

Тулать пӳлме, кĕлет — ӳсет хĕвеллĕ шанăҫ
Тивĕҫлĕхне ĕҫпе ӳстернĕ сыннăн чĕринче.
Хресчен ырра ĕненменни халь — манăҫ.
Хуҫа вăл ҫĕр ҫинче!

## ЧАКМАПА ВУТЧУЛЬ

*Микропоэма*

Пирĕн кас пики Люта,
Яш Пурис
Халь чи ятлă çын ялта —
Тракторист.
Ик йăх-несĕл, ик тымар
Туратти —
Пĕринчен-пĕри катмар,
Пур латти!
...Пулнă Чакмапа Вутчуль
Сĕм авал —
Икĕ тăхăм виççĕр çул
Пухнă хал...
Шыв çĕкленĕ ĕлĕкрен
Пĕр çăлтан —
Сывлăх суннă, эрлĕкрен
Хăтăлсан.
Кĕвĕçсен те, хур тăвар
Тееймен —
Уйăрнă тăвар, кăвар —
Тиркешмен.
Çумăн пулнă анисем
Ĕмĕртен...
Вĕсенчен ăс ан илсем
Темĕр, тен?..
Пурнăç тунă, хресченле
Тар тăкса,

Урам урлă кÿршĕлле
Ăмăртса...
Килĕштернĕ те тус-тан
Пĕр-пĕрне —
Килĕнтеш йышне паман
Пĕр хĕрне...
...Халь те канăç-манăç çук
Ик йышра —
Хире-хирĕç ик çĕн çурт
Урамра.
Хыпăнать ик йыш унта
Пурпĕрех:
«Чакмасем ăстайлă та
Ĕçченрех!»
«Вутчульсем кайра пулман
Ĕмĕрне!»
«Намăс курăпăр, ярсан
Йăх ятне!..»
Ак епле халь ват çынсен
Шăписем:
Ăмăрту хĕртÿçисем —
Шăп вĕсем!..
...Хире-хирĕç тăватшар
Чÿрече —
Хĕр, яш каччă юнашар
Чĕрепе...
Килĕшет ял çыннине
Ик ĕçчен —
Хисеплет çамрăксене
Пур хресчен.
Камăн тракторĕ çулла,
Сив хĕлле
Вăрататъ ирех яла?
Пĕлмелле!
Кам пуçлать çуракинче
Çĕн касса?

Кам вырать туйра енче
Çӳл пусса?
Кам хёрӳ ёçре малта —
Куртăр-иç:
Пирĕн кас пики Люта,
Яш Пурис!
...Хир чунне уçать иккен
Çуркунне,
Хускатса çĕр ĕçлекен
Чĕрине:
Чăшăл шăтрĕ йĕп-калча
Йĕркипе —
Вăрттăн куç пăвать качча
Хĕр-пике...
Икĕ трактор тĕл пулсан
Анара,
Кăшкăрать вăл, йăл кулса:
— Ан хăра —
Çивĕчрех пул, хамăркас,
Чуп малта!
Ăмăртас-тăк — ăмăртас
Чакмапа! —
Юптарса йĕплет качча:
— Эп çĕнсен —
Пуç ан çап та тупкăча,
Кĕр çитсен!..
...Тинĕс хумĕн — каш! та ваш!
Тыр пусси.
Савăнать ик яш чăваш:
— Чун уççи!
Хĕн ăршаллă хир çинчен
Куç илме —
Кам иленмĕ çак чечен
Илеме?!
...Пурăнать ик тус-тăван
Çĕр çинче —

Кĕркунне çех мар, ялан
Ĕççинче.
Ĕçĕ — тарлă, тум — хура,
Çĕр пекех...
Тутлă çăкăрĕ вара —
Шур тĕпек!
Килĕшет ял çыннине
Ик ĕçчен —
Хисеплет çамрăксене
Пур хресчен!
...Шўт вăл уçă кăмăлта
Йăл илет —
Туссене вăлта-вăлта
Ял пиллет:
Кур-ха: чăн та сас-хыпар
Тĕллĕ, э?
— Пултăр ик чунри кавар
Телее!
Кайрĕ мар-ши вăраха
Тишкерў?
— Туйăр çывхарать-и-ха,
Кин, кĕрў?..
...Хире-хирĕç ик çĕн çурт
Урамра.
Иккĕн такăрлатнă çул —
Утăмра.
Хире-хирĕç — уçă çўл
Чўрече:
Пĕринче — Чакма, Вутчуль —
Тепринче...

Йěсленнě хăмăл. Çул çуталнă. Такăр.
Çут эрешмен çиппи
Тěрлет тӳпе пирне.
Ял хурěсем вěçме пуçланă тапхăр —
Ёççи вěçленнě мăнтăр кěркунне.

Ёшенчěклěн, анчах тулли хаваслăн
Ман тăван ял каччи
Яла анать хирпе,
Пěр чунлăн, çума-çумăн — алла-аллăн!—
Утса сар хěвелпе те сар хěрпе.

Пучах кăшăлěсем — пикен те каччăн!—
Хěвел кăшăлěнче
Йăлл çиçрěç хěм чěртсе.
Куçсем кěр çěртмине телей акаççě —
Ик яш ěçчен тин тăнăн венчете!

Çӳл тӳпере хурсем вěççе иртеççě —
Шур акăшсем пекех! —
Хир çийěн ялалла.
...Тен, чи малти кикак-кикак йěтесě
Çěн мăшăр ячěпе хуçăлмалла?

◆

*Н. А-на*

Мӗнле ялсем! Мӗнле хитре ятсем!
Ялавăр, Пилерпӳл, Чулпан е Менчӗ,
Е Чиешне, е Якаел... Пӗлменччӗ
Пӗрне те — халь ак чӗремре вӗсем.
Тӳрем, ем-ешӗл Çарăмсем хӗрри.
Инçечӗ — тӗлӗнтермӗш! — пит чӗнӳллӗ.
Çăлсем çукрах та — чăпăл-чăпăл кӳлӗ
Иленкӗллӗ, илемлӗ çав тери.
Юман пураллă тӗпсӗр пусăсен
Юрай сăри пек шывӗ тутлă, сивӗ —
Çу кунӗнче чӗлхе вӗçне тăм тивӗ,
Çыруллă алтăрпа ăна ӗçсен...
Ыр кăмăллăн «Килсем!» тенин ăшши
Çемçетрӗ чӗрене сасартăк, туххăм —
Симпыл сӗнсен, сăмах пемерӗм чуххăм,
Чӗнмерӗм çич тумлам чуппи хушши...
Тивлетлӗ ен! Хăна çавна кура
Кунта чи хаклă хурăнташ е кӳршӗ.
Кунти чăвашăн йăмрипе шур пӳрчӗ
Тăриллӗ тӳперен анчах лутра.
Тата епле кăп-кăпăш, тӗм-хура,
Кӗрпеклӗ, тулăх ку тавралăх çӗрӗ!
Тăпри чи шăрăх çулсенче ун чӗрӗ —
Унти тымар çӗрмест, калча — çăра.
Тӳремлӗхре пит ир тухать хӗвел,
Кая юлса анать — шăпах ун евӗр

Ĕҫчен кунти хресчен, маттур, ӳркевсĕр.
Юрри, чĕлхи, чĕри ун мĕнешкел!
«Этем ялан ҫĕр тӳпинче» тени
Ҫак ен чăвашĕсемшĕн хаклă чăн-тăр:
Нумайтарах та ҫутăрах пек ҫăлтăр
Кунта — умра, ҫумрах пек куҫ хывни.

Манса кайман-ши, теттĕм... Çук, манман!
Татах куç умĕнче çав кун илемĕ.
Ак уçă сывлăш хумĕпе таçтан
Тӳпенелле васкарĕ ирĕк çемĕ.
Çĕр туртăмĕ çухалнă пек вĕçет
Çӳлтен-çӳле кая-кая хăй тĕллĕн
Çут эрешмен карти, вара — çиçет
Ĕнернĕ хĕлĕх евĕр... Кур та тĕлĕн!
Ак çăмăл тĕк çĕкленчĕ вĕçеве...
Уçлăхрилле йăлт йывăрăшсăр тейĕн.
Çĕрпе тӳпе çуратакан кĕвве
Кун пек чухне чун-чĕрепе илтейĕн.
...Манса кайман! Шăп ун чухнехилле
Ăшра хаваслăх, çăмăллăх, хĕрӳллĕх.
Вĕсен сăлтавĕ çех — тĕлĕнмелле! —
Кăшт уçăмсăр... Тен, тавçăрайăп ӳлĕм?
Пил ыйтнă пек тăратăп çĕр умне:
Пĕр ен—çĕртме, тепри—тин шăтнă уçăм.
Çавăрасла асри телей кунне,
Çав ик енре те тем шырарĕ куçăм.
...Ун чух та çакăн евĕрехчĕ кун.
Анчах та халь урăхларах пек туйăм —
Тен, тарăнрах... Хĕрӳлĕхĕ те ун
Чĕре тӳсми — ĕлĕкхинчен вăл уйрăм!
Хĕпĕртеттермĕ тек ăрша юхни —
Эппин, мĕскер кăмăлăма çĕклерĕ:

Вырса пухса кёртни нимрен пахи
Е калчасен хёвел йёппиллё йёрё?
Тен, шанăç вăйланни? Шап-шур чул ял
Умра — çул тӳпинче — курнать илемлён,
Чӳречине йăлкăштарса йăл-ял.
Унта мана кётеççё-ши? Пёлеймён...
Шур мамăк пек çӳле çёкленесле
Тăван хирпе утса-вёçсе пыруçăн
Телей кунне куçпа, чёрепеле
Татах курма, туйма пуçлатăп уççăн.

## ШУРĂ ХУРĂН

Тăванăм, тусăм — шурă хурăн,
Нихçан ан сивĕн эс манран,
Ялан манпа пĕр варлă пурăн,
Хăрмасăр çĕр çинче упран.

Эс ешĕл чух татах эп çамрăк —
Хаяр эп, амантсан сана.
Сан хӳттӳнте йăва эп çаврăп,
Мехел çитсессĕн,— кĕт кăна...

Тав, хурăнăм, чуну уççишĕн,
Тав ăшă кăмăлушăн та!
Хавалунти ырри — йăлт çыншăн,
Чун тасалать сан умăнта.

Салху çынпа — тусла салхуллă,
Сăпайлă эс хаваслипе.
Тăрру пăхсан та пĕлĕт урлă,
Эс мухтанман ху аслипе...

Кĕрхи тĕссен пушарĕ сӳнчĕ,
Хĕлхемлĕ пас тытать пуçа.
...Шур хурăн айĕнче — çын пӳрчĕ:
Пĕлесчĕ, кам унта хуçа?

Кĕр иртнĕпе пĕрех, ак сивĕ хĕл те ҫитĕ —
Йăшса, тарса пырать хĕвел, ури — шупка, ҫинҫе.
Чакса иксĕлнĕҫем хевти ун сиплĕ имĕш питĕ —
Епле рехетлĕн тĕлĕрет пĕр ҫын тăпрас ҫинче.
Кив кĕрĕк — ҫийĕнче, тĕпленĕ кив ҫăматă
Ӳтне ҫĕр туртасран сыхлать, кив ҫĕлĕк — пуҫĕнче.
Пит пĕрĕмне ачашлама пуҫлать те ăшă — ватă
Куҫне уҫмасăр — пепкелле! — кулать тĕлĕкĕнче.
Сивве сиссе пулас, шăваҫҫĕ тĕссĕрленнĕ
Măран кукамайсем юман юпа ҫурăкнелле.
Кĕрченĕ юлашки чечек — пыл хурчĕ те сĕрлемĕ
Кунта — утар канлĕхĕнче: ыйха путать вĕлле.
Кас-кас ҫил вĕрнĕ май ҫĕре пăт-пат! ӳкет те
Тăп-тачă пиҫнĕ йăрăм-йăрăм хĕрлĕ сар улма,
Шартах сиксе илет мучи: «Мĕн урана тӳнккет-ши?!.»
Ҫапах куҫне хăй уҫаймасть, чарăнаймасть кулма.
Тĕлĕкĕнче вăл мĕн, кама курать-ши, тетĕн,
Сăнанă май ун шăл шуррисĕр ăшă куллине.
Сасартăк... вăл та пурнăҫран тем кĕтнине сисетĕн,
Курма пуҫлатăн ҫĕнĕлле тăван ҫĕр илемне.

Хуртлă улмасем ӳкеççĕ ир,
Туттисем ӳкмеççĕ кĕр çитмесĕр.
Ан çĕкле ытла васкавлăн, мелсĕр...
Çĕрнине,— çум курăкне ан сир.
Хăй ура умне кусса пыни
Хаклă мар — çӳлти нимрен чĕнӳллĕ.
Тӳсĕмлĕх çитсен, кĕр кунĕ тӳлĕ
Ырлăхпа — вăл пулĕ чăн-чăнни.
...Сăввăмра пиçет тӳпе улми:
Кăнтăрла— хĕвел, каç-каç вăл — çăлтăр.
Сар кĕрччен ăна ан татăр — чăтăр:
Пиçменни пулаймĕ шăл çемми...
Тутлă сĕтекпе тулса çитсе,
Шал енчен тӳлеккĕн çуталсассăн —
Тат ăна, этем: вăл пиçнĕ саншăн —
Хăналан, «мухтав çĕре!» тесе.

Пĕри çывăхрине курмасть яр-уççăн,
Тепри — тĕнчен янкарлă инçетне...
Мĕскер тăвас пулать-ха вăйсăр куçăн!
Вăл айăплах та мар пуль хăш чухне...

Çын чун-чĕрин тĕнчи те — вĕçсĕр уçлăх:
Пур ун инçечĕ, тарăнăш, тӳпи...
Эккей! Тăхăннипех ик тĕрлĕ куçлăх
Унта пĕр самантра çитейĕп-и?!

Пулас ял макечĕ ман умра —
Еплерех вăл килĕшӳллĕ, лайăх.
Шухăшпа эп — çĕнĕ ялăмра:
Ĕмĕтрен хитре вăл — мĕн калайăн!
Çӳллĕ, чыслă вырăнта — Тĕп çурт:
Тăрринче — ĕç, кĕрешӳ элемĕ.
Шкулĕ, клубĕ — куç илмелĕх çук.
Улшăнать ман савнă ен илемĕ!
Ретĕн-ретĕн — çутă çурт-котедж:
Хăтлă та килпетлĕ — кур! — ăш-чикĕ.
Пурăн, ырă кур, хресчен-çĕртеш:
Çакăн пек пуласлăха кам тиркĕ?!
Шуçăм куçлă шурă Хура Шыв,
Ырлăх çитĕ санăн урамна та.
Хăть хăш кас тăрăхнелле куç хыв —
Эс халех çĕн сăнлăн курăнатăн.
«...Çичĕ укăлчаллă пирĕн ял —
Хĕвĕшет çиччĕшĕнче те хурлăх,—
Тенĕ ваттисем.— Хапха аял —
Кĕреймест телей, пехет е пурлăх...»
Халь: «Карта-хапхасăр ирĕк çул
Çĕннине пит таравать»,— теeççĕ
Çунатланнă хресченсем. Шур чул
Сарнă мăн çулпа телей кĕтеççĕ...
Çĕнĕ ял, ĕçчен çĕр çыннисен
Ĕмĕчĕ нихçан сӳнми те çутă

Пулнăран пуль эс çапла ӳсен,
Хӳхĕм анлă урамсен çӳл çурчĕ.
Ăслă, аслă çĕнтерӳçĕсем,
Сирĕн хевтĕре пит кăмăллатăп:
Çăкăр паракан çĕр хуçисен
Ялĕ çакăн пек шеп пулмалла та!

Çуна çуначĕ — шалашка çине
Тăраттăм та шик! шăхăрса хĕрӳллĕн
Васкаттăм улăма Шалаш енне
Е ир-ирех, е тепĕр чух — каçкӳлĕм.
Лашам юртатчĕ тулхăркаласа.
Тупан хăйăлтатса тем кĕвĕлетчĕ.
Шăнсан — чупаттăм хыççăн... Халь аса
Килеççĕ çав кунсем — аса килеççĕ...
...Шăп çав çулпах шăвать ял еннелле
Пура пек лав — тен, çур ура тиеннĕ.
Тăп-тăваткал та çӳллĕ вăл епле.
Ун тӳпинче — тиевçĕ, ял ĕçченĕ.
Мĕнле хитре ларса пырать — маттур!
Сухалĕ, пичĕ, тумĕ — йăлт пасарнă.
Ун сăнĕнче темле мăнаçлăх пур —
Те хăй халь чăн та çӳлтине ăнланнă...
Пăхатăп та — шăвать ял хĕрринче
Йĕс никĕс-тĕплĕ тĕлĕнтермĕш палăк,
Ак-ак вырнаçасла Çĕр тӳпинче...
— Кĕрсем, тархасшăн! — тетĕп.— Уçă алăк.

— Йăлтах ăнлантăм пурнăç йĕркине.
Куç уçăлчĕ. Чун лăпкă. Ăстăн çивĕч.
Яш чухнехи хĕрӳлĕхне те сивĕт! —
Йĕплентĕм эп пĕр сӳрĕк ирхине.

Çĕрле — ĕçрен киле васканă май:
— Пепке-ха эс. Тин уçăлать куçу та,—
Хамран эп култăм.— Пĕлменни нумай.
Ĕнер хури — паян таса та çутă...

Ĕççыннинче шыра эс çĕннине —
Унпа ялан хаваслăн, ăшшăн курнăç.
Сӳрĕкленме пăрахăн ун чухне.
Илемлĕ пулĕ ĕçлĕ, вĕççĕр пурнăç.

## ЧӐВАШ ҪӐКӐРӖ

Вӑрлӑхне кура пулать пур ҫимӗҫ,—
Вӗрентетчӗҫ ваттисем пире.
Ӗмӗртен ҫавна сӑнанӑ имӗш
Ҫын ҫамка тирне пӗре-пӗре.
Сиплӗ ҫумӑр та, хӗвел ӑшши те
Кирлине, паллах, манман вӗсем...
Эп ҫакна асилтӗм, шурӑ ҫитӗ
Ҫавраҫа сӗтелӗме витсен.

Ҫӗр ҫынни... Епле пӗлсе, хаваслӑн
Вӑл ҫӗре хӗвел пӗрчи акать!
Ҫавӑнпа пуль ҫӑкӑрӗ чӑвашӑн
Хӗвелпе Ҫӗр евӗр ҫавраҫа.
Ҫавӑнпа анчах-ши? Ҫук-тӑр, ҫук-тӑр:
Акнӑ чух та е вут умӗнче
Йӳҫнӗ чустине унанӑ чух та
Шухӑшӗ ун — Ҫӗр туртӑмӗнче...

Ҫӗр ҫыннин тӗнчи ял пулнӑ ӗлӗк.
Халь — уҫӑлнӑҫем ӑс, чун тӳпи —
Каҫсерен курать вӑл тертлӗ тӗлӗк:
Хӑратать Ҫӗр чӑмӑрӗн шӑпи!
Хӗҫпӑшалсӑр, вӑрҫӑсӑр тӑвасшӑн
Сирӗччӗ Ҫӗртен пур амака!
Ҫавӑнпах пуль ҫӑкӑрӗ чӑвашӑн
Хӗвелпе Ҫӗр евӗр ҫавраҫа.

## ÇУЛ

Этем сĕм ĕлĕкрен, сĕм авалтан
Çĕр чăмăрне çул-йĕрпеле тĕрленĕ:
Пит вăрттăн, ансăр сукмакпа малтан
Хăра-хăра çăлкуç патне çӳренĕ,
Унтан ют ханкăра, ют йăх ялне,
Ют хулана, ют çĕршыва вăл çитнĕ...
Çапла çуралнă пĕрлĕх çĕр çине —
Малта ыр ĕмĕт, туслăх вучĕ çиçнĕ.

Каяп та шухăша, уй ирĕкне тухсан,
Çакна асаплăн тавçăрса илетĕп:
Çын, халăх тĕрлĕ йĕрпеле пырсан,
Этемлĕхĕн пĕртен-пĕр çул пуль, тетĕп...
Çак чăнлăха та, малалла утса,
Уçатăп ака хамшăн хам телейлĕн:
Чи ырă ĕмĕт çăлтăрне çутса,
Пире ун инçетне кăларнă Ленин.

Çăлтăрсен çути юхать ман витĕр,
Хĕмленет ăрши куç шăрçинче.
Çутă кĕввинче чĕнӳ пур — илтĕр:
Тĕнчене хыпар ярать тĕнче.
Кам ăна илтет — асамлă тунсăх
Тыткăнлать чунне ĕмĕрлĕхе:
Шăрăх пек, типет, çунать вăл унсăр,
Туйнăн çăлтăр чĕртнĕ пĕрлĕхе.
Çăлтăр çутине курман çын пилсĕр,
Çутă чĕнĕвне манни — пĕччен.
...Çăлтăрсен çути юхать ман витĕр,
Хĕм сапать ăрши куç шăрçинчен.

Çĕртен-шывран хакли çук тесе,
Çĕршыв çĕрне-шывне сутмарăм,
Мăскал пуха-пуха супмарăм —
Хур тумарăм тăван кĕтесе.

Хĕвелтен-уйăхран пысăкки çук тесе,
Халăхра хама пысăка хумарăм,
Чи йывăр чух пуçа усмарăм,
Ырри çĕнессине ĕненсе.

Çăкăртан-тăвартан асли çук тесе,
Çăкăрăма чĕлле пайларăм —
Хаклă тус-тăвана сăйларăм:
Хур тумарăм тăван кĕтесе.

Атте-аннерен пахи çук тесе,
Атте-анне ятне ямарăм,
Атте-анне чĕлхипе юрларăм —
Шантăм тăван халăх илтессе.

## ХЫПАР КĔТЕТĔП!

Хыпар кĕтетĕп! Шуçăмран — каçчен!
Кĕтетĕп çывăхран е инçетрен,
Кĕтетĕп тĕмсĕлсе чун савниреи,
Кĕтетĕп туссенчен, тăвансенчен.
Савăнтарать пулсассăн ыр хыпар,
Хурлантарать, хур кăтартать хури...
Тав пурнăçа — вăл хĕпĕртӳсĕр мар:
Хавалĕ унăн — ĕненӳ пурри...

Хыпар кĕтетĕп! Çитрĕ вăл — умра!
Уçса вулатăп — аннерен! Ялтан!
Йăли çапла аннен: нимрен малтан
Çырăвĕнче хаклать вăл çĕн тырра,
Салхуллăн пĕлтерет кам вилнине,
Хаваслăн — кам ача çуратнине,
Телейлĕн — кам çĕн çурт хăпартнине...
Хыпар хакне аван пĕлет анне!

Хыпар кĕтетĕп! Ир илемĕнче
Чĕнӳллĕ янравне чĕртсен Мускав,
Калатăп: уçă сассуна мухтав! —
Сан ырă хыпарна итлет тĕнче.
Каç-каç йăл çутăлать телеэкран —
Çӳреп Тăван çĕршывăмра, ютра.
Хыпар кĕтетĕп вĕçсĕр уçлăхран,
Хыпар кĕтсе йĕрлетĕп çăлтăра...

Хыпар кĕтетĕп! Паллă: ыррине!
Анчах та сарăмсăр çитет хури —
Ун хура-шурĕ çĕр çинче пурри
Мантармĕ тĕнчепе çын тĕрлине...
...Кунçулăм сулăнсан та кĕр енне
Ӳссех пырать çултан-çул ыр хыпар.
Кĕтсе илейĕп-ши чи ыррине —
Чи кĕтнине?.. Эй, пурнăç, тӳсĕм пар!



# ӖМӖРӖМРИ ИЛЕМЛӖ САМАНТСЕМ

ПОЭМА

1 Ĕмĕрĕмри илемлĕ самантсем —
Тĕнчен чĕм кĕртекен вут çуркунни,
Чечеклĕ çăвĕ, капăр кĕркунни...
Чĕр çутçанталăкпа пирте вĕсем.
Çĕр, вĕçсĕр çаврăнса Хĕвел тавра,
Пĕрре сивве кĕртет, тепре — ăшша,
Пур чĕрлĕхе черетлĕн пулăшса
Шăтма, ÿсме, хăрма... Пĕр çаврăмра
Иртет çулталăк — уйăхсен унки.
Шăпах çапла çын пурнăçĕн йĕрки:
Ĕмĕрĕнче ун çур та, кĕр те пур,
Элчелĕн хĕлĕнче хĕвет шур юр...
Анчах та тĕлĕнтермĕшле тĕнче:
Çын тĕрлĕ çур курать кунçулĕнче...

2 Ҫын тӗрлӗ ҫур курать кунҫулӗнче:
Ҫул шучӗ чухлӗ — хӑй ӗмӗрӗнче,
Ҫулталӑкра — пӗрре, асра — мӗльюн,
Хӑрса хуралмасан чун-чӗмӗ ун...
...Умра — тумла кӗввиллӗ ҫуркунне!
Кам кӑмӑлламӗ унӑн ҫут сӑнне!
Ҫанталӑк чан ҫапать: чӗрри, вӑран!
Кунран-кун тӗслӗрех хирпе вӑрман.
Шаркамасен юрри — юр ирӗлет!
Хаяр сивве ҫӗнни — йӑлт чӗрӗлет!
Эй, ҫурхи шыв, юх вӑйлӑн—кӗрр! кӗрле!
Эп ӗнерем сасса санпа пӗрле.
Йӳҫет сӗтек кӳпченӗ кӑчкӑра,
Часах пат! ҫурӑлӗ папки — вара!..

3 Часах пат! çурăлĕ папки — вара
Çеçке тĕтри шуралĕ таврара,
Ыр шăршипе пуçтаххăн анратса.
Пур кайăк юрлĕ ярĕ янратса!
Халь... пур çĕрте чакăлтатать чавка,
Хура курак ĕрлет хĕпĕртесе,
Йăмра-хурăнсене сырса илсе.
Хĕл, хурлăн çурçĕре чака-чака,
Ир-ир юра хуплать çӳхе пăрпа,
Хытаркалать-ха кăчăрка çула.
Анчах — хĕвел хĕрӳлĕхне пула —
Сар улăм, симĕс утă е арпа,
Юр айĕнчен тухса, витет ăна.
Тек шăхăрса вĕçмест кунта çуна.

4 Тек шăхăрса вĕçмест кунта çуна —
Çул татăлать... Анчах — самантлăха.
Çерем кушать, çĕр хăпарать кăна —
Пуçланчĕ те хирте ака-суха!
Хĕрÿллĕ, пиллĕ тапхăр — çураки!
Кас-кассăн хуралса пыран ана
Курнать çĕн сăвă евĕрех мана,
Хĕвелĕн вут ураллă çавраки
Куссан ун тăрăх... Ку—паллах, юмах:
Тĕш-тырăпа тăванлă та сăмах,
Пин сăмахран пĕр сăвă çыраcси —
Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ тăвасси...
Мĕнех, кашнин — хăй евĕрлĕ ĕнер,
Пĕр ĕмĕт-шанăç вăрлăхĕ — пĕлер...

5 Пĕр ĕмĕт-шанăç вăрлăхĕ — пĕлер!—
Эпир акатпăр çын чунне, çĕре...
Эппин, ăна кĕр мăнтăрĕ пиллер.
...Çурхи чĕнӳллĕ юрă-çемĕре
Каç ĕнтрĕкĕ анать. Инçе-инçе —
Сенкер тĕтреллĕ улăх лапĕнче —
Кĕрлев кĕвви. Вăл тунсăхлăн, салхун
Вĕçет ял еннелле — хум хыççăн хум...
Ак шăпчăк та—малтан хутран-ситрен,
Çав кĕвĕпе тавлашнă пек юри,
Парать те сасă — самантран юрри
Янрать яр-уççăн, çепĕççĕн, хитрен.
Мĕн чухлĕ сĕм çак хутăш кĕвĕре!
Хĕпĕртесе кĕтсе илеп ире.

6 Хĕпĕртесе кĕтсе илеп ире —
Пуçланчĕ утă çийĕ! Хĕрĕнен
Сип-симĕс хӳтĕ-хӳтĕ хӳшĕре
Ыр шăрăш кассăн-кассăн вĕçнĕрен.
Ăçтан вăл? Те — чечеклĕ утăран,
Те — сапаланнă кăпăшка çӳçрен:
Ун йĕтĕн çилĕ сĕртĕнет питрен,
Ун хумĕ витĕр шурăмпуç куран...
...Чаш! чашлатать те çиçĕмвĕç-çава
Çиçсе илет, хĕм-сывлăм сирпĕтсе,—
Тӳнет чечек те курăк пуç пĕксе,
Сĕткенлĕ тунине ава-ава.
Ăшша пиçсен, чарса ĕçри шава,
Сикетпĕр авăр çаврăмне — шыва.

7 Сикетпĕр авăр çаврăмне — шыва
Тулма пуçланă уйăх çутинче.
Хыçра пăшăлтатса юлать хăва —
Те кĕвĕçсе, те вăрттăн çӳçенсе.
Эпир халь иккĕн çех çут тĕнчере —
Ишетпĕр е чăматпăр тарăна,
Тек çĕр çине май çуккăн таврăнма...
Шыв ăшă — канлĕ те аван пире!
Куç умĕнче — ытарайми илем:
Ун тĕсĕпе сăнарĕ иксĕлми —
Шыв, çĕр, тӳпе, пур сас-чĕвсен çемми,
Мана ар тунă вутăш хĕр-пикем...
...Хаяр вăйсем асман шăп самантра
Йăлт килĕшӳллĕ çутçанталăкра.

8 Йӑлт килӗшӳллӗ ҫутҫанталӑкра:
Шӑтни — ӳсет, тӗвӗленни — пиҫет...
Арша вӑййи чакать — ӗҫҫи ҫитет.
Хӗрӳ ӗҫе ҫын кӳлӗнет вара.
Тӗлӗнмелле илемлӗ ҫак самант!
Ҫӳлтен пӑхсассӑн, калӑн: пир кумать
Рет-ретӗн агрегат сап-сар хирте,
Ун ӑсипе тӗртӗнекен пирте —
Хӗвел йӗппин чӑваш тӗрри-ҫӗвви...
Ӗҫҫи!.. Вӑл ман хирте пуҫланасса
Епле эп кӗтнӗ! Халь — ҫӗклет сасса
Ун паттӑрла симфонийӗн кӗвви.
Пул пурнӑҫри пехет, пул чун уҫҫи,
Ҫӗр ӗҫӗпе поэзири ӗҫҫи!

9 Çĕр ĕçĕпе поэзири ĕççи,
Сан тухăçна курма эп тивĕç-и?
...Йĕтем. Хĕвеллĕ тырă кĕрчĕсем.
Хĕлхемлĕ ылтăн пĕрчĕк-пĕрчĕсем...
Çупăрласа тытса кăкри çумне,
Çĕн çăкăр касрĕ кăшавар анне —
Ак аллăмра вĕри хĕвел чĕлли!
Мĕн пултăр пурнăçра унран тутли,
Унран хакли!.. Çаксем — йăлт асăмра
Анчах... хăш чух куçа ăрша тĕтри
Йăмăхтарать те — çĕр çинче хитри
Чĕр тĕслĕн курăнми пулать вара...
Мухтам куç хупиччен çĕр илемне,
Тăван тавралăха, тăван ене!

Тăван тавралăха, тăван ене,
Сисмерĕм те, çывхарчĕ кĕркунне.
Хиртен вăрман, хăвалăх сулхăнне
Шутарчĕ вăл тĕс çапнă мĕлкине.
Чаканлă хăмăш кушăрка тумпа —
Çил умĕн авăнать те тӳрленет.
Çĕр кукшине сăрать каç шур тăмпа,
Кӳлленчĕк те пăрпа чĕнтĕрленет.
Аста художник — кĕр. Анчах курăн:
Çулçа сăрла-сăрлах вăл киветет,
Вĕл вĕçтерет те нӳр çĕре витет.
Хĕвел йăсăрланать аран-аран —
Халь ун çине хăйса пăхать тумла:
Хăй шăпине пĕлмест те пулмалла...

11 Хăй шăпине пĕлмест те пулмалла
Сивве пăхмасăр çурăлнă çеçке —
Шур тутăрлă хĕрле чипер инке:
Тĕлленнĕ пуль çурхи кунсем, çулла...
Çапла вăл, çын: иртет çул хыççăн çул—
Пĕрех вĕри те çамрăк чунĕ ун,—
Тек вĕреме кĕмест пулсан та юн,
Асра хĕрӳллĕ самантсем тем чул...
...Шеллевсĕр шаннă май ӳсни, чĕрри
Салхуланма пуçлать этем чĕри.
Иртет шур акăш е тăрна карти:
«Кил!» — тет яш-кĕрĕм, «Сыв пул!» — тет ватти...
Тен, çавăнпа салхулăх пур кĕрте?
Тăп вăхăт тунсăх вăратать пирте...

12 Тăп вăхăт тунсăх вăратать пирте.
Каç сĕмĕ пур пек туйăнать ирте...
Сип-симĕс уçăм. Типĕ хыт-хура.
Шăрçаллă эрешмен карти умра
Йăлтăртатса илет, çинçен-çинçен
Янранăн туйăнать, шăрçи ӳксен.
Çанталăк евĕр сӳрĕклĕх ӳтре.
Çăхан кăранклатать шур пĕлĕтре —
Сасси, вăйсăрланса, ик-виçĕ хут
Янрать те çухалать чăтлăхсенче.
Шăн çапнă çул тумхахлă. Вичкĕн ут
Ман енелле чупать пек кĕçенсе...
Утас, тĕнчемĕр вĕçсĕрне туйса!
Пушаннă хир. Вăл ирĕклĕ. Таса.

13 Пушаннӑ хир. Вӑл ирӗклӗ. Таса.
Ёшенчӗк сӑнлӑ. Тунсӑхлӑ. Хитре.
Мунча ӑшши пек, сывлӑм тумлатса,
Васан енчен шӑвать ҫӑра тӗтре.
Пилешлӗ вар кӑвар сапать ҫӗре,
Тӑм тивнӗ ҫупкӑм ҫырлине сӗнет.
Кӗтӳ пукра-пӑвансӑр канлӗхре
Йӗпе каю ҫинче ирӗкленет.
Кӗрхи ҫӗртме пусси ҫурма хура.
Сар улӑм урисен йӗрки вара,
Ҫӗн ҫӑкӑр пиҫнӗ пек кӑмакара,
Ыр шӑршлӑн пӑсланса ларать умра.
...Ав каҫ та ҫитрӗ. Тӑнӑҫлӑ тӗнче,
Ай, лайӑх уйӑх-ҫӑлтӑр ҫутинче!

14 Ай, лайăх уйăх-çăлтăр çутинче
Кĕрхи вăрманăн тĕслĕ юмахне
Пырса кĕме — ун шухăшлă шавне
Итле-итле утма сăр вăйăинче!
Юхать пин тĕрлĕ çутă пайăрки
Çÿхелнĕ çулçă витĕр сăрхăнса.
Ылмашăнать пек йывăçсен йĕрки —
Утаççĕ пек вĕсем, мĕлке ярса...
Сасартăк çил тухать те — ман тавра
Çавраçилне вăр-вар çавра-çавра
Йăм-хĕрлĕ çулçă тăвăлĕ — пушар! —
Асса каять: пуçланчĕ тейĕн шар...
...Тухатăп чăштăр-чăштăр çул çине —
Вăрман вăратнă çулçă шуçăмне.

15 Вăрман вăратнă çулçă шуçăмне.
Юмах çĕршывĕ евĕр курăнса,
Юртан та шурă çутă хурăнсар
Çав тăвăл хыççăн тухрĕ куç умне.
Эй, шур пир тумлă шур инке-аппа,
Пуçлар-и вăй юрри ĕлĕкхилле,
Карталанса утса çур утăмпа
Хĕвелĕмĕре май е хирĕçле?!.
Анчах — шап-шурă шăплăх ман тавра.
Куç алчăрать пĕр вĕçĕм пăхнăран
Пĕр тĕс çине... «Эй, хурăнсар, вăран!» —
Ӳпкевлĕн кăшкăрас килет вара...
...Ешермĕç хурăнсем шур шăплăхра —
Чӳк уйăхĕ вăй илнĕ самантра.

16 Чӳк уйăхĕ вăй илнĕ самантра
Иртет кĕрхи салхулăх, хурлану,
Ӳссе-ӳссех пырать хавхалану...
Ак вĕлтлетет пĕрремĕш юр умра!
Пит кăмăллатăп юр йăл-йăлкăшса
Кĕрхи хура тĕсе çĕнтернине,
Вĕр-çĕнĕ ялавсем варр! варкăшса
Çуртсен тăррисене çĕкленнине.
...Тӳпе хĕлхем сапать. Пилешлĕ вар
Çил хыççăн юр çине тăкать кăвар.
Хĕл çитнĕ май чакать пилеш йӳççи —
Вут тĕклĕ уйăп хăналать: çи-çи!
Вăрман тӳлеккĕн, канлĕн тĕлĕрет.
...Ман шухăш хĕл тасалăхне кĕрет.

17 Ман шухăш хĕл тасалăхне кĕрет,
Вĕçленĕ евĕр ўсĕм ункине:
Ăна та ăнланса илме черет
Мĕскер—самантлăх, мĕн—ĕмĕрлĕхне...
Хĕл ыйăхне, хаяр сивве çĕнсе,
Пур чĕрлĕх ешерессине пĕлсе,
Самантăн вĕçсĕр улшăнăвĕнче
Пăрахăп тĕркĕшмешкĕн... Çут тĕнче
Ман ирĕкрен килмен тискер вăйне
Ўстерĕ е чакарĕ-ши тесе
Пăшăрханни те тăвăл çук чухне
Тўлеккĕн иртĕ... Лăпкăн хăй чĕлсе,
Эп хутăп кăмака — çакна ай-ай
Эп кăмăллатăп хĕл пуçланнă май!

18 Эп кăмăллатăп хĕл пуçланнă май
Хресченĕн тараватлă кил-çуртне
Кĕрсе курма — ялта тăван нумай,
Кашни касрах пур хурăнташ-ратне.
Ура юрне шăпăрккапа шăлса,
Малахая чиксе хул хушшине,
Таятăп пуçăма хуçасене,
Тату та перекет-пехет сунса.
Кĕрмеклĕ кĕреке курки кĕтет —
Мана курка çăл шывĕ те çитет.
Эхер, кăшт тутансассăн кăрчама,
Эйпет-ши шăкăл-шăкăл калаçма?..
Çĕр çаврăнать, сăмах çаври ăнсан,
Кил пуçĕ ăслă, сумлă çын пулсан.

19 Кил пуçĕ ăслă, сумлă çын пулсан,
Камин-кăмакара шакмак çунсан —
Вутран хĕрӳллĕ пирĕн калаçу:
Пуçланнă вăхăт хушнă курнăçу...
Çĕр, тивĕç, çăкăр хакĕ, çĕр хуçи,
Çын, чăнлăх, сăвăри сăнар уççи —
Сăмах çине сăмах... Çĕр çĕмĕрсе
Тавлашнă май каятпăр та хĕрсе
Ларатпăр шăппăн, тĕтĕм тĕтĕрсе,
Кăвар ăшне пăхатпăр тинкерсе...
Çĕр ĕçлекен тус-тăванпа пĕрле
Çĕр илемне куратăп çĕнĕлле.
Эппин, çĕнелĕве мухта, поэт! —
Ĕçчен çĕнелӳре шырать тивлет.

20 Ёҫчен ҫӗнелӳре шырать тивлет —
Ҫултан-ҫул сахалрах ун тамаши.
Кил-ҫурт килпечӗ тирпейрен килет,
Кил-ҫурт кӗрнекӗ — килӗшӳ ӑшши...
Вӑл пур чухне ҫын кӑмӑлӗ пыл-ҫу,
Автан яшкиллӗ тӗпелти сӗтел.
— Эккей, йӳтетрӗ мар-ши калаҫу?
Ҫитейӗп-ши киле тӗрӗс-тӗкел?
...Пӗркеннӗ пас чӗнтӗрӗпе йӑмра.
Пире вӑл курӑнать пек туйпикин.
— Сӑна-ха: каснӑ лартнӑ пирӗн кин!
— Шур хӗл чечекӗ парнеле ара...
Туятӑп ҫын кӑмӑлӗнчи вӑя
Хутшӑннипе ҫак юптару-вӑййа.

21 Хутшăннипе çак юптару-ваййа
Сисмен те — пынă кĕнĕ эп туя!
Пуçланă янă юрă! Тамаша —
Çапатăп ял-йышпа пĕрле ташша!
Инке-хуçа чĕнет тĕпелелле,
Çупăрласах лартать кĕрекене:
— Ват кăрчама — юлса килекене!..
Тус-йыш тĕлне те мантăн-шим, элле?
Каларăн! Астăватăп пит те шеп! —
Юрав курки тытмасăр килĕшеп...
Ирччен кунта ларасчĕ савăнса —
Хӳтевсĕр пуçăм кайрĕ çаврăнса...
...Тĕрленĕ алшăлли ман хул тавра.
Яш чух савни — туй арăмĕ — çумра...

22 Яш чух савни — туй арăмĕ — çумра:
Хĕрле чиперччĕ, халь хăйле чипер.
— Кил — çĕмĕрт сĕрĕмне аса илер,
Çитсе курар саркайăклă çура.
Çĕклем-çĕклем чечек татса пухар,
Пуç кăшăлĕ çыхса шыва ярар,
Тупа сăртне хаваслăн улăхар,
Кăвайт чĕртсе хĕрӳ сăмах калар...
...Куçран-куçа пăхасчĕ — куç вĕри.
Сăмах чĕнсессĕн — çурăлĕ чĕри.
Тăратпăр шăпăрт шухăш ăшшинче...
...Таса юрна тасах упра, тĕнче!
Ура йĕрне те хĕм сапса хупла,
Тӳпе — кивелнĕ, çĕтĕк йĕс ала...

23 Тӳпе — кивелнӗ, ҫӗтӗк йӗс ала —
Арканнӑ ҫӑлтӑр ванчӑкне алла.
Ман кӑчӑр-кӑчӑр ҫут сукмакпала
Киле пӗччен салхуллӑн утмалла.
Ҫӑвать, ҫӑвать шур юр, хӗлхемлӗ юр,
Вӗҫет паллана кантӑк ҫутинче...
Ах, каҫӗ! Тараватлӑ ҫут тӗнче,
Этем валли сан тем те, тем те пур! —
Ҫитсе курми сенкер инҫет умра,
Вӗҫсе ҫитми тӳпӳ — ҫӳлте, ҫӳлте...
Хаяр сиввӳ шӑнтсассӑн та ӳте
Куҫ хупиччен сӳнми ӑшшу чунра.
...Пӗрре ӗҫетпӗр савӑш куркине —
Ҫулталӑкра пӗрре вӑл, ҫуркунне.

24 Çулталăкра пĕрре вăл, çуркунне,
Этем кунçулĕнче те вăл пĕрре.
Тасан упрар ун асаилĕвне —
Май пултăр таврăнма унта тепре...
Пĕрремĕш хут вăраннă туйăма
Пит йывăр вăтанса-вилсе уçма!
Час-час ăна уçма хăймасăрах
Юлатпăр çĕр çинче пĕччен, хăрах...
Вара — йăпанăç тупнăн чĕрлĕхре —
Сăнатпăр йывăç кăчкă çурнине...
Çанталăкри кашни çĕн çуркунне
Асилтерет пире яш ĕмĕре.
Тен, çавăнпа манмастпăр ĕмĕрне
Çынпа ыр çутçанталăк пĕрлĕхне?

Çынпа ыр çутçанталăк пĕрлĕхне
Хаклатпăр ăс-тăн пиçĕхнĕ чухне,
Хăш чух ытла, ытла кая юлса —
Пин йăнăш тертĕнче хыпса-çунса...
Асамлă вĕçсĕр çаврăнăç — хĕл, çур,
Çу, кĕр, тăп вăхăт, тепĕр хут хĕлле...
Этем пурнăçĕпе пĕрпеклĕх пур
Çак улшăнусенче, тĕлĕнмелле!
Калча ӳсни, папак çеçке çурни,
Чĕр çимĕç вăрлăх хăварса шанни,
Ача-пăча яш-кĕрĕме çитни,
Вăй-халлă çын пулни те ватăлни —
Ансат е шутсăр çирĕп пĕрлешӳ,
Сив хирĕçӳ е кăткăс кĕрешӳ?..

26 Сив хирĕçӳ е кăткăс кĕрешӳ
Çак чĕрлĕх тĕнчипе çын хушшинче?
Пĕлместĕп... Эпĕ — тупрăм килĕшӳ
Кунçул çуррин çырасăр чиккинче...
Халь чĕрĕ çутçанталăкпа эпир
Сăмахсăр ăнланатпăр пĕр-пĕрне:
Уçаççĕ маншăн шыв, вăрман, уй-хир
Ун кăмăлçах та ăслă илемне.
Ун вăхăчĕ, чарусăр улшăнса,
Мана çĕнетнĕн туйăнать çуллен —
Хавхаланса, çунса, хăш чух шăнса
Унпа пĕрле васкатăп эп куллен
Çĕнелĕве. Çулла, хĕлле — пĕрех! —
Тăван тавралăх çутă тĕслĕрех.

27 Ăван тавралăх çутă тĕслĕрех
Çул иртнĕçем — кунçул улшăннăçем.
Эппин, çĕр çийĕн — хĕвелпе пĕрех —
Çĕн тĕс çутса, илем чĕртсе вĕçем?!
Анчах... хĕвел — çӳлте, эп — аялта,
Куратăп вăл çӳлтен курманнине...
...Çӳретĕп акă ĕнтрĕкри ялта.
Тĕнкĕлтетет пĕр карчăк ман енне.
Ват çын йăли — хыпар çине хыпар
Мана вăл пĕлтерет пĕр самантра:
— Кала: мĕскершĕн çын пĕр евĕр мар?
Мĕн-ма тискерлĕх вăранать унра?
Ик ывăлччĕ: таçти ĕçчен — пĕри,
Тепри — асли — усал шĕвек чури...

28 — Çапла: асли — усал шӗвек чури...
Пӗччен ӳстертӗм — кайрăм вăй-халтан.
Эпир курман темле чир-чӗр мурри
Хăртса пăсать пек çын чунне шалтан!..
...Мӗн калăп карчăка? Мӗнле сăмах
Ăна йăпатӗ? Шухăш, тупсăм пар!
Ыр çын ачи чун-чӗрипе чăлах
Ӳсни пирте пулманччӗ... Мӗн тăвар?!.
...Çанталăк сивӗ. Кусăрка шăлать.
Тухас пек кутсăр-пуçсăр çил-тăман.
...Пӳртре — пӗччен ват карчăк. Шухăшлать:
«Вилес пулсан — пытарӗ-ха тăван...»
...Пулса пин йăлтăр çиплӗ йӗп çăрти,
Çил-тăманта çухалчӗ хăй çути.

29 Çил-тăманта çухалчĕ хăй çути.
Çула кĕрт витнĕ. Юр хĕвет, хĕвет!
Мĕскер мана кĕтет — нуша, тивлет?
Е — вăхăт такăрлатнă çул хытти?..
Çӳретĕп çил-тăман ырлăхĕнче,
Итле-итле çилсем ӳхĕрнине.
Аташрăм-ши, малта, ытти енче —
Шур юр хӳми... Тен, çитнĕ çĕр хĕрне?..
...Шухăшăмсем, эсир те пуçăмра
Вĕркетĕр вĕççĕр — çил-тăман пекех,—
Хĕл евĕр сивĕ те çилтен кăра...
Хăçан лăпланăр? Ав, çил, çĕрĕпех
Урсассăн та, шăпланчĕ ир енне,
Тасалăхпа çутатрĕ çĕр сăнне.

7*

Тасалăхпа çутатрĕ çĕр сăнне
Хĕвел шевли хĕмлетнĕ çăлтăр-юр.
Çанталăк ăшăтать, сывхарнăн çур,
Анчах та ку — ултавлă çуркунне...
Кун пек çуллен пулать мăн кăрлачра —
Тумла юхать шĕп-шĕвĕр шăкĕртен.
Анчах вăхăтлăха çак пăр-лапра —
Çĕн çул çитет! Ун юмахне кĕтен!
Ак ырă асилӳ пулать иртни...
Ак çĕтĕк-çурăкпа çĕн улăмран
Çĕн йĕрĕхсем тума пуçлать мăран
Кив тĕнлĕ асатте... Ак — кăшарни,
Ак — çăварни чупни... Пурнăçăмра
Ютшăнманни юлать, юлать асра...

31 Ютшӑнманни юлать, юлать асра
Илемлӗн, ыррӑн, хаклӑн туйӑнса —
Пӗрре ҫав ҫамрӑк ӗмӗр пурнӑҫра,
Ялан ун ирӗ ҫутӑ та таса.
Мӗнех, чарусӑр улшӑнать кунҫул,
Эпир те, ҫутҫанталӑк та ҫапла.
...Сӑна-ха: таврара илем мӗн чул!
Епле ҫӗклет хӗл кунӗ кӑмӑла!
Ҫак самантра эп ҫуркунне ҫинчен
Шухӑшламастӑп: хӑнӑхнӑ сивве...
Шух ҫил те тилӗрет иртен каҫчен
Шур хурӑн ҫурхахне сӗве-сӗве...
Анчах та, кӗскетсе хаяр каҫне,
Ҫӗр вӑрттӑн ҫаврӑнать хӗвел енне.

32 Çĕр вăрттăн çаврăнать хĕвел енне...
Çак иплĕ те чарусăр туртăмра,
Ун чĕнĕвĕ вăратнă туйăмра
Курса çынпа тĕнчемĕр пĕрлĕхне,
Сиретĕп тĕрлĕ вĕтĕр-шакăра...
Çĕр, вĕçсĕр çаврăнса хĕвел тавра,
Пĕрре сивве кĕртет, тепре — ăшша,
Пур чĕрлĕхе черетлĕн пулăшса
Шăтма, çеçке çурма, ыйха кĕме,
Тĕвĕленсе тĕнче курма, вилме...
Пĕлесчĕ ман: миçемĕш çаврăмра —
Пăр сиввинче е вутлă шăрăхра —
Вĕçленĕ пурнăç?.. Миçĕш вĕсенчен
Ман шăпамра: çуртан — хĕл сиввиччен?..

33 Ман шăпамра — çуртан хĕл сиввиччен —
Пĕр пурнăç... Ыррипе хури-шурри
Ун васкаварлă кунĕнче пурри
Килет саманари самантсенчен:
Пур хĕлĕн те уяр е çил-тăман,
Этемĕн те пур тус, çук мар тăшман...
Анчах, çанталăк шунă май ăшша,
Кĕрет йăвашлăх шухăша, ăша...
Вара — кĕтеп çемçелнĕ кăмăлпа
Хура курак е шăнкăрч тăманне,
Çын кĕтнĕн инçетри тус-тăванне...
Епле хавассăр пултăр çак шăпа?! —
Ман пурнăç сулăнсан та кĕр енне,
Умра — тумла кĕвриллĕ çуркунне!

34 Умра — тумла кĕввиллĕ çуркунне.
Кам кăмăлламĕ унăн çут сăнне!
Çанталăк чан çапать: чĕрри, вăран!
Кунран-кун тĕслĕрех уй-хир, вăрман.
Шаркамасен юрри — юр ирĕлет!
Хаяр сивве çĕнни — йăлт чĕрĕлет!
Çул хĕрринче — çил хуçнă пĕр турат,
Сăна-ха: вăл та кăчкине çурать!..
Ав, тухнă пирĕн пĕлтĕрхи йĕрсем...
Аманнă шурă хурăн, ан йĕрсем:
Шур юр тĕрри кайсассăн ирĕлсе,
Çерем çеçки куç уçĕ, чĕрĕлсе...
...Иртеççĕ, сӳнтерсе, çутса тĕссем,
Ĕмĕрĕмри илемлĕ самантсем!



# ИЛĔМПИ

*

Ăна эп куртăм тӳпере:
Шап-шурă мамăк çиттине
Сирсе ярса, вăл тĕлĕретчĕ...
Сăнне палларăм чиперех!
Те пĕлĕт пулчĕ çил тĕлне,
Ылмашрĕ унăн тĕллĕ речĕ —
Куçран çухатрăм пикене.

Ăна эп куртăм ĕмĕтре:
Сип-симĕс янкăр инçетри
Чечеклĕ улăхра çӳретчĕ.
Çывратчĕ çил кив кимĕре...
Çĕкленнĕçемĕн ир тĕтри
Пăспа хупланчĕ ун сӳречĕ —
Куçран çухатрăм пикене.

Ăна шырарăм пурнăçра:
Тĕл пулакан кашни хĕре
«Вăл мар-ши?» тенĕ пек сăнатăп...
Вут сĕлкĕшĕ — ăшра, куçра!
Тупайăп-ши асри хĕре?! —
Ĕмĕтленсе, шанса çунатăп,
Манма пуçланă май сăнне.

Тĕтре йăсланчĕ те шап-шуррăн
Кĕрхи вăрманăн тĕлĕпе —
Çапать мана юман та хурăн
Тин çех пĕçернĕ милĕкпе.

Тумла кас-кассăн, сийĕн-сийĕн
Шăнкăртатса шутлать çулça.
Утатăп йăлтăр сывлăм çийĕн —
Каюллă йĕр юлать хыçа.

Вăл — ешĕл-ха. Анчах сăсаррăн
Ун çийĕн çулăм явăнать.
Тĕс тĕтринчен тухса сасартăк
Такам килессĕн туйăнать.

Тен, килĕ?! Кĕр çулçин хĕлхемĕ
Кашни тумлам вутне çутать.
Сӳнмен-ха шанчăк... Е — чĕнем-и?
Те хĕр, те кĕр умра утать...

Çурхи хĕвел пек йăлкăшса-çиçсе
Эс ман пата таçтан çывхартăн, антăн...
Вăранăвăн вăрттăнлăхне сиссе,
Эп имлĕ ăшă кĕтрĕм — хавхалантăм.

Чĕре ĕненчĕ — çурчĕ кăчкине,
Сан çуттунта пĕр вăхăт ачашланчĕ,
Çил вĕрчĕ çех — пытанчĕ хӳтлĕхне,
Ĕнтĕркесе хутланчĕ те — пăрланчĕ.

Тен, çакă вăл, ултавлă çуркунне?
Ăшра — татах çил-тăвăллă хĕл, сивĕ.
Куллу сан ĕнтрĕ çех, ун ăшшине
Туймарăм эп: пăртан кама вут тивĕ?!.

Татах тĕтреллĕ те хăла тӳпе.
Сараççĕ чăрăшсем çех симĕс çутă.
Миçемĕш хут суя илĕртӳпе
Йăпантăм та суя вутра эп çунтăм!..

Ачашлăхшăн—çук хӳтлĕх. Мĕн тăвас?
Хăва та, авă, кăчкине çутатнă.
«Тархасшăн, асăрхан!» тесен те ас —
Кĕтетĕп такама... Çула çур татнă...

Сана эп тĕл пулсассăн куçа-куçăн,
Мĕн-ма çакна курмастăн-ши пачах:
Эс ăшăнăн,— куçсем калаççĕ уççăн,—
Пирти — шалти! — вут ăшшипе анчах.

Нимрен ытла сана халь кирлĕ евĕк —
Сар çулăм-çиллĕ сивĕ кĕр çитсен,
Тип çулçине вĕçтернĕ хурăн евĕр,
Эс ĕнтĕркен салхуллăн, пĕр-пĕччен.

Пуçна усса вăрманалла утатăн,
Чăтлăхсенче çўрен чăштăртатса.
Анчах та саншăн канăç çук унта та:
Çыврать çанталăк тунсăх çуратса.

Туйралăхра эп вут чĕртсе яратăп:
Куçри — шалта, ку — курăнĕ, тесе.
Сана кĕтсе, сукмак енне ларатăп —
Эс... шур тĕтре пулан, хире иртсе.

Каç. Чăлл çиçсе тем вĕçрĕ пĕлĕтрен,
Кĕрслетрĕ те — çĕр кисренсе чĕтрерĕ.
— Мĕскер ку?! — ыйтрăм эп асаттерен.
— Арçын куççулĕ пат! тумларĕ, — терĕ...

Ир. Хĕм тăкса хĕвеллĕ тӳперен,
Чӳхенчĕ мăшăр асамат кĕперĕ.
— Мĕскер ку? — ыйтрăм эп асаннерен.
— Хĕрсем-хĕрарăмсем йĕреççĕ, — терĕ...

Çĕн кинсем пĕркенчĕк вĕçтереççĕ,
Çĕкленсе сăрт тӳпине, çӳле —
Пикесем вĕсен çулне йĕрлеççĕ,
Ĕмĕтлĕн пăхса ял еннелле.

Виç пĕркенчĕк анатра курнать кăшт —
Ял хĕрне анас пек варкăшса.
Ушкăнран пĕри — çулти шур акăш —
Варăнчĕ пĕлĕтсемпе, шурса...

Тутине çырта-çырта, ыйтуллăн
Пĕр пике çех пăхрĕ ун енне.
«Ăçталла илсе каять-ши çулăм?» —
Ыйтрĕ пĕлесле хĕр шăпине.

Çĕн кинсем, туй пикисем хаваслăн
Юрласа анаççĕ ялалла.
Ушкăнран пĕри — сывларĕ ассăн,
Утрĕ шавлакан вăрманалла.

Вăл каларĕ пек — пике илтессĕн:
Шур пĕркенчĕк юр пулса ӳкет...
Кĕркунне кайни — кĕтме пĕлсессĕн —
Çуркунне калле вĕçсе килет.

Утса иртетĕн те умра
Шыв витрипе —
Ăнтан кайса юлап вара
Эс хитрипе.

Тĕлĕнтермĕш!

Хăйса чĕнетĕп, тĕл пулсан,
Йăмра айне.
Калатăн эсĕ, йăл кулса:
«Ямасть анне...»

Кулянтармăш!

Хыпса-çунса çурту тавра
Çӳреп ирччен.
Аннӳ, савса, сĕнет сăра
Чӳречĕртен.

Чун çунтармăш...

Кулса пăхатăн ман енне
Тепĕр кунне.
...Чеен чĕнен йăмра айне —
Пĕве умне.

Ифентермĕш...

Мана куçпа çех ан йӑпат:
Çути ун сисӗнкӗ — пӗлетӗп...
Туйса илсе хам айӑпа,
Терт тӑвӑлне çунса кӗретӗп:
Таса, чи çепӗç туйӑмах
Уçасшӑнччӗ — майне пӗлмерӗм,—
Васкавлӑ, вырӑнсӑр сӑмах
Чӗлхем вӗçертрӗ — эс чӗнмерӗн...
Çук, кӑлармарӑн сассуна! —
Ытла тӳртен каларӑм пулӗ...
Хӗретрӗ тем чипер сӑнна.
...Ку айӑпа тек тумӑп ӳлӗм!

Çумрах тӑратӑн — такампа
Чӗвӗлтетсе илен чӗкеçӗн...
— Кала-ха, мӗншӗн унтанпа
Куçу чӗнӳллӗрех, пикеçӗм?

Çитмĕл тĕслĕ тĕрлĕ çеçкерен
Пуç кăшăлĕ çыхрăм сан валли.
Илемлех пулманшăн ан кӳрен:
Тен, ăстайлă мар яш çын алли...
Тăхăнсам, пикеçĕм, эс ăна,
Хĕррине тир пайăрка кăлкан —
Сан ытарайми чипер сăнна
Килĕшĕ вăл питĕ, ан пăлхан.

Кăшăл çеçкисем çур шăршипе
Вăрттăн систерсен ман ĕмĕте,
Вăтанса кайса, куç ăшшипе,
Эс хавхалантартăн йĕкĕте!..

Кимĕ шунă май хум çиййĕпе
Аларан вĕçертрĕм кĕсмене...
Ырлăх пиллесе, ирхи тӳпе
Ӳпĕнтерчĕ савăш куркине.
Икĕ чун килĕшĕвне туйса,
Эс, пикем, е савăн, е хурлан...
Эпĕ, аллăма кĕсле тытса,
Сан умна чĕркуçленсе юрлам.

Куҫ ҫулҫи ҫийĕн шурĕ шурăмпуҫ ҫути,
Тĕтре чатăрне сирчĕ, янкар витрĕ.
Йăл кулчĕ Илемпийĕн сывлăмлă тути...
Куҫ ирĕ ҫитрĕ!

Куҫ ҫулҫи витĕр сăрхăнать хĕвел ҫути.
Ăрша вăййинче вăрттăн чĕнӳ ҫиҫрĕ.
Васкатрĕ Илемпийĕн ҫавраҫил-утти...
Куҫ кунĕ ҫитрĕ!

Куҫ ҫулҫи ҫийĕн йăлкăшать тӳпе ҫути.
Сăпка юррине ҫăлтăр ачи илтрĕ.
Кӳпчерĕ Илемпийĕн ывăннă тути...
Куҫ каҫĕ ҫитрĕ!

Эс маншăн, Илемпи, чи çутă çăлтăр:
Вĕçсе çитми чĕнӳллĕ инçетрен —
Шалтан çуталнăн ăшшăн, йăлтăр-йăлтăр! —
Юна çӳçентерсе çиçен хитрен.
Куçпа, тип тутапа, ӳтпе туятăп
Сан ăшă илемне эс çывăх чух,
Нимрен хакла хурса ăна уятăп...
Сасартăк... эсĕ — урăх! Çутă — çук!..

Сисетĕп: вĕçеврен çĕре анатпăр...
Тем пулнăн, ютшăнатпăр. Саманта.
Нихçан иртмест çак ютшăну асапсăр!
Ĕнтĕркесе кĕтетпĕр çĕн çутта...
Çул иртнĕçем çуту та, ху та урăх —
Çакна курма, туйма пит хĕн вара!
...Ялан çапла ман куçăма эс курăн —
Пĕлсе çитми вăрттăнлăхна упра.

Тĕлĕнетĕп,
Киленетĕп
Эпĕ сан илемŷпе.
Тĕлкĕшетĕп,
Хĕмленетĕп
Юрату хĕлхемĕпе.
Чăннипе илемшĕн çех çын савĕ-ши çынна?
Ăшă кăмăлу, пикеçĕм, илĕртет мана.

Кĕвĕçетĕп,
Тăвăнатăп
Эсĕ чăркăшланнипе.
Килĕшетĕп,
Йăпанатăп
Пĕр сăмах каланипе:
Мĕн тăвас-ха, ĕненсен те чунăм лăпкă мар
Сана тивĕçсĕр пек эпĕ туйнăран хама.

Тертленетĕп,
Ывăнатăп,
Уйăрсан пире çулсем.
Хĕпĕртетĕп,
Савăнатăп,
Чип-чипер кĕтсе илсен.
Саншăн çех пăшăрханатăп, кулянса çунап.
Эс умра чух, эс хавас чух ман ŷсет çунат.

Кăнтăр çутинче çĕре çĕнетрĕм,
Сăвă хыврăм çăлтăр çутинче.
Ун чухне пике ятпа чĕнеттĕм
Эп сана хĕрӳ самантсенче.
Çамрăклах пире чи кирлĕ çăкăр
Тивĕçетчĕ хаклă хакпала —
Иккĕн пĕр пулса куç хывнă çăлтăр
Сивĕнмерĕ пуль çавна пула...
Ик чĕрен, кил-çуртăн ăшшине те
Çăмăлах пулмарĕ упрама.
Халь ак Илемпи ятпа чĕнетĕп
Эп сана — çумри хĕрарăма.
Иксĕмĕр кунçул лавне туртатпăр:
Эп тĕпре чухне эс пичевре.
Иккĕленкелетĕп тапхăр-тапхăр —
Тахăшне йывăртарах пире.
Савасси — чи çӳллĕ, пиллĕ парăм:
Çак шăпа телейсĕр тетĕр-и?
Тӳсĕмлĕ, ачаш, ĕçчен хĕрарăм,
Кам пур тĕнчере санран хитри?!

* * *

Хĕрарăма «илемсĕр эс» ан тейĕр —
Вăл тивĕç чи таса сăмах сумне.
Ун ăшă, уçă кăмăлне пĕлейĕр,
Хĕрхенĕçлĕн упра пĕлсен чунне.

Хĕн-хур пирте хаярлăх ан вăраттăр,
Ан ютшăнтартăр сисĕнке пиртен.
Ыр ят илтсе пулайăн-ши ар-паттăр,
Хĕрарăм илемне курман этем?!

Хĕрарăма кӳрентерсе ан йĕртĕр —
Ыратăвĕ питне пĕркелесен,
Шанать илемĕ ун... нихçан та йĕрсĕр
Хухмасть куççуль, чĕре кӳтсе çитсен.

Хĕр чухнехи чĕнӳллĕ, ăшă кулă
Хĕрарăм пит-куçне çутсан вара,
Хавал ӳсет, сăмах та савăшуллă —
Хĕлхем хĕвел пулас пек вучахра!

Чечек пек сăнупа чечен кӳлепӳнтен
Тĕлĕннĕçем, чиперĕм-Илемпиçĕм,
Сан шухăш-кăмăлун, чунун илемĕнчен
Килентĕм савăнса — вăйланчĕ туйăм-сисĕм.
Куçа курăнакан илемпеле ăшрин
Килĕшĕвне çынра курасчĕ теттĕм —
Санра вăл, Илемпи,— хĕрарăмра, эппин:
Çак чăнлăх çутине эс шуçăм пек чĕртетĕн.
Тав Пурнăç Амăшне! — тесе куллен, ялан
Аслăлăхна ăспа чĕрем чыс тутăр:
Эс чĕрлĕх тĕввинчен хĕнпе этем тăван —
Кунтан пархатарли çут тĕнчере мĕн пултăр!
Эс тем те пултаран, Хĕрарăм ятлă çын,—
Халь çĕр çинче çук эс алла илмен ĕç.
Сана курса савăннăçем — эй, ятлĕçин! —
Сăпайланатăп эп: арсем чăнран именмĕç...
Пĕрре пăхса илсех, пĕр сăмахпах, тӳрех
Эс кăмăла уçатăн е... хуçатăн,
Е сивĕтме пуçлан, чирлетнĕпе пĕрех,
Е тепĕр хут çĕклен — çунат хушатăн!
Сан иксĕлми хевтӳ, ачашлăху, ăшшу —
Чи çутă ĕмĕтпе еккӳн тивлечĕ...
Хаярлăх вăратман нихçан сан шухăшу —
Сан евĕр юратма е... каçарма пĕлесчĕ!
Сан ирĕкӳпеле, Хĕрарăм — çĕр çынни,
Хавшак вăйлăланать, чиртен сипленнĕ евĕр;

Кӗвве илтме пуҫлать хӑлхасӑр ҫурални;
Чӗлхесӗрӗн чӗлхи тухать хистевсӗр;
Кил-ҫурт хӳтти тупать хӑр тӑлӑха юлни;
Ачалӑх та телейлӗ, тутӑ, питӗ;
Хавхаланма пуҫлать ак шанчӑк ҫухатни;
Сасартӑк ҫуталса илет сӗм-суккӑр пичӗ...
Аллу тата епле ӑстайлӑ, хӳхӗм сан!
Вӑл сӗртӗнсессӗн — чӗрӗлет тип йывӑҫ.
Пулӑхланать уй-хир, вӑл юратса пӑхсан,—
Пӗр пучахран тухас пек пӗрчӗ ывӑҫ.
Симпылӑн туйӑнать ҫӑл шывӗ, вӑл сӗнсен.
Ыратӑва сирет ун ыр ачашӗ!..
Хӗрарӑм, ӗмӗрех пул вӑйлӑ та чечен —
Сана савса пуҫ тайтӑр Пурнӑҫ Ашшӗ.

## ИЛЕМПИ ИЛЕМӖ

Ик хӗвел эп куртӑм — йӗкӗр ҫут хӗвел!
Куҫӑм алчӑрарӗ — ак вӑл, тӗлӗнтермӗш!
Ик ҫавра тавра авра-авра хӗвет
Шурӑ юр, шӑлкам, шалтан тем тӗлкӗштернӗн.
Юр ӳтрен иленкӗ,— теттӗм, хӗл ҫитсен...
Йӑнӑшнӑ! Юртан чеченрехxи пур имӗш —
Ав епле ҫиҫет ик шур кӗрт тӳпинчен —
Ӳкнӗ пек унта! — ик сар хӗвел, ик ҫимӗҫ!..
Кӑпӑш кӗрт сӑртне йӑлкӑштарса илсе,
Шурӑ тӳпене ҫӗкленчӗ ик хӗвелӗм —
Йӑмӑх кӑшӑлта амаланса, ҫиҫсе,
Пурҫӑн пӗлӗтпе пӗркенчӗ пит илемлӗн.
Пӗлӗт витӗр ӑшшӑн сӑрхӑнать ҫути
Икӗ пӑнчӑ ларнӑ икӗ ҫут хӗвелӗн,
Ир енне тула сӑн ҫапнӑн пӳрт ҫурти...
Вӑрттӑн курӑну! Вӑл илӗртӳллӗ, селӗм!
Хӳхӗмччӗ чӑнах куҫ умӗнчи илем!
Улшӑнчӗ ҫанталӑк — пӗлӗтсем хӑрушӑ.
— Эй, ӑҫта эсир, ман ӑшӑ хӗвелсем?!
Ӑмӑр, сивӗ кун, каҫсем тискер те пушӑ...

Ик хӗвел эп турӑм кӑпӑшка юртан —
Питӗ килӗшӳллӗ, шеп вӗсен сӑнарӗ.
Ирӗлчӗҫ, тута кӑшт сӗртӗнсен,— шалтан
Хӗрхӗлтӗм хӗлхем вӗрин тапса тӑмарӗ...

Ик хĕвел касса эп турăм йывăçран —
Çулçă хĕвĕнче кĕркуннеччен упраннă,
Пиçнĕ панулми ӳкес пек ывăçран...
Çурăлчĕç вĕсем! — шăн çапнă пек, суранлă.

Ик хĕвел катса эп турăм шур чултан,
Каç тĕттĕмĕнче сӳнмест сĕт тĕслĕ хĕмĕ —
Уçăлас чечек папакĕнчен, шалтан,
Йăлкăм тĕс тĕтри йăсăрланмасть, вут сĕмĕ...

Ик хĕвел шыратăп — йĕкĕр çут хĕвел!
Куçăм вĕтеленчĕ. Çунăттăмччĕ — сивĕ.
Çĕнĕ кĕрт тавра авра-авра хĕвет
Юр, шăлкам... Хăçан ăна вут тивĕ?!

Яш чух шап-шурă роза парнелеттĕм,
Халь — капăр астра. Тĕсĕ — тĕрлĕрен...
Йăли-йĕрки çапла — хăвах пĕлетĕн,
Çапах кўренкелен хутран-ситрен.

Чечек çыххипеле питне хуплатăн,
Утса çўрен ыр шăршлă пўлĕмре.
Те вăрттăн савăнан, те хурланатăн —
Хĕн ăнланма, сиссен те тем чĕре...

Парне валли сан савăт пур: вăл — чакăр,
Çыру тĕрри курнать ун тĕпĕнчен.
Шывне, улăштарса, яратăн сахăр —
Папак ан шантăр, тен пуль, чылайччен...

Анчах шанать чечек кун иртнĕçемĕн,
Çуначĕ вĕлкĕшсе ўкет çĕре.
Эс кашнине пухса илен, кив çеммĕн
Салхуллă сассине сире-сире...

...Сайра хутра — мехел тупсан — иркўлĕм
Çитетпĕр иккĕн ешĕл çарана —
Хавасланса чĕвĕлтетен хĕрўллĕн,
Çĕклем кăвак чечек сĕнсен сана.

Ир килнĕ чăштăр çиллĕ сивĕ
Ĕнтме пуçларĕ йывăça.
Ир ӳкекен çӳхе юр сийĕ
Тин çех витет çĕрти çулçа.
Шăн шăнтайман сип-симĕс курăк
Шур виткĕç тĕрринче хитре:
Ун чĕнтĕрне çыхать-ха — курăр! —
Кĕр юр пĕрчи тире-тире.
Ак витĕр курнакан тип çулçă,
Пилеш те вĕрене вăрри
Илемлĕ чĕр ӳкерчĕк пулчĕ.
Мĕн чухлĕ тĕс — хĕрли, сарри!..
Ир килнĕ кĕр... Чӳклет ним шелсĕр
Вăрман мĕн пиçнине çĕре —
Кун пек чухне хĕрарăм евĕр
Курнать ун йывăçĕ пире:
Çуркуннехи капмар илемĕ
Чакса пырать куç умĕнче,
Тумла пулать те пас хĕлхемĕ
Çиçет турат çулçи çинче...
Хĕнпе ӳстернĕ тутă вăрлăх
Пуласлăхшăн ӳкет хӳтте,
Çĕн чĕрĕлĕхшĕн вулă тăрăх
Сăрхăнакан сĕтекĕ те...
...Хĕл çывхарать. Маттур пул тенĕн,
Çил йывăça авать, силлет.
Çĕрти шур виткĕçе тирпейлĕн
Илсе, ăна витес килет.

Тĕрлĕ тĕслĕ машинсен теречĕ,
Вĕл-вĕл хăмпă, пукане, хăю,
Çут пĕркенчĕк... Хĕр кулли черченкĕ...
Шеп халь авлану, качча каю!
Яшлăх телейне-ши ăмсанатăн —
Тĕмсĕлсе пăхан çĕн кин енне...
Пил парса, тăван килте мана та
Ăшă çăкăр кастарман анне...
Хаклă парнесемсĕр, шав-уявсăр,
Чаплă туйсăр пулчĕ пĕрлешӳ —
Пурпĕр туйăма тасан упратпăр,
Кил-çуртра çук мар хăт, килĕшӳ.
Илемпиçĕм, ан хурлан, тархасшăн —
Ӳпкевне сисетĕп, çавăнпа
Ăшшăн, тӳррĕн, шантарса каласшăн:
Кĕт кăштах — туй тăвăпăр санпа.
Çамрăк-кĕрĕмĕн уявĕ чаплă,
Пурпĕрех вăл — ахаль туй анчах:
Кĕмĕлли пире кĕтет, вăл — ятлă!
Ылтăнни паха вара чăнах!
Машинпа çӳреççĕ халь нумаййăн —
Эпĕр, Çилçунат кӳлсе, хирпе
Хăнкăрма-шăнкрав янранă майăн
Вĕçĕпĕр яш каччăпа хĕр пек.
Çунатсен вĕçне çутаттăр çиçĕм,
Ӳктĕр çут мĕлке çĕре, хире —
Тӳсĕмлĕн упранă туйăм-сисĕм
Çамрăклатĕ, ăшăтĕ пире.

Çӳл тӳпере — татах тăрна ĕречĕ,
Татах чĕнӳллĕ хурлă сасăсем!
Мĕскершĕн икĕ юплĕ е пĕр ретлĕ
Йĕркеленсе вĕçеççĕ-ши вĕсем?

Пĕрре, тепре шутлатăп — мел пурах-и?!—
Çук тĕкелли, ăçта та — ыт-тĕкел:
Кашни картан пур мăшăрсăр хăрахĕ —
Чи хыçалти... Салху вăл мĕнешкел!

Ку — çут тĕнче йĕрки-ши е — шăпа-ши?
Тус-мăшăр çитеймест пĕрне валли.
Ертӳçĕ ăслă чух карта ылмашĕ —
Çухалĕ саманта çав терт палли...

Анчах та ĕретре те тăлăх кайăк
Манса каяймĕ хăй ыт-тĕкелне!
Хăйне именчĕк туйĕ — пур пек айăп,
Ăмсанĕ, тен, ют мăшăр телейне...

Чĕри кӳтсе çитсен анчах пăлхавлăн
Ачаш чĕнӳ вăл ярĕ тĕнчене...
Хăй тунсăхне тӳсеймĕччĕ хăй халлĕн —
Карта тусла пулăшмасан чĕнме.

...Тăрна карти ик юплĕн е пĕр ретлĕн
Кăрлинк! Кăрлинк! — тесе иртсен вăрах,
Тархасласа, вĕсен хутне кĕретĕп:
Тĕл пултăрччĕ ик картари хăрах!

Хура элек — хура çĕлен
Ик вĕçлĕ ăннипе сăхсассăн чĕререн,
Эп кăтартмарăм элекçе çилле,
Çупмарăм питĕнчен йĕрĕннĕрен —
Ўпкевлĕн пăхрăм ун çине,
Хальччен илтмен шўт илтнĕ пек пулса,
Пит лăпкăн утрăм кил енне
Вĕри куççулĕм тухиччен кулса...

Киле эп кĕтĕм юрласа:
Элекçĕ суйнипе эп иккĕленĕп-и?!
Сăпка сиктернĕ майăн хурлакса,
Йĕрсе ларать ман савнă Илемпи:

— Хура элек — хура çĕлен
Ик вĕçлĕ ăннипе сăхсассăн чĕререн,
Эп кăтартмарăм элекçе çилле,
Сурмарăм питĕнчен йĕрĕннĕрен —
Ўпкевлĕн пăхрăм ун енне
Хальччен илтмен шўт илтнĕ пек пулса,
Пит лăпкăн утрăм кил енне
Вĕри куççулĕм тухиччен кулса...

*А. Е-на*

Мĕн чухлĕ çиçĕм тухнă-ши ман витĕр,
Шăнăрсене хĕртсе те çунтарса?!
Татах кĕрлет ак аслати... Ан илттĕр
Ăна чĕрем — тен, хăтăлăп тарса?
Анчах та пĕлĕт капланать хаяррăн —
Мĕнпур енчен шăвать ман еннелле.
Ăçта тарас? Унта-кунта йăр-яррăн
Карта карать вут-çиçĕм ав епле!
Куçа хупса тăрас: çумран, тен, иртĕ
Çак аслатиллĕ çумăр тамаши...
Çил тухрĕ те — пĕлĕтсене варр! сирчĕ,
Ак сĕртĕнчĕ питрен хĕвел ăшши.
Анчах умри тĕнче мĕскершĕн тĕрлĕ?
Ĕшенчĕк — тип çĕр, ешĕл — йĕпенни:
Лере — чечек куçне чăлт уçрĕ нĕрлĕн,
Кунта — тип курăк, сивĕре ĕнни...
Çил çаврăнса вĕрет пек — килтĕр, çиттĕр
Çĕн çумăр юрласа та макăрса,
Ун çиçĕмĕ ман витĕр ялтăр! иртт ĕр,
Шăнăрсене хĕртсе те çунтарса.

Эс — ман телейччĕ, халь — терт пултăн,
Танма-тан вĕçеймерĕн — юлтăн, юлтăн...
Çунаттуна усса, çĕре эс антăн,
Эп—кайрăм малалла... пĕччен пек, сансăр.

Çур çитрĕ те — ман чĕнĕве илтмерĕн:
«Кил кайăкĕ пулсан та юрĕ,— терĕн,—
Мана халь кирлĕ шăплăх—пурнăп канлĕ:
Ĕшентĕм чакнăçем çунат вăй-халĕ...»

Инçе вĕçевлĕх пысăк ĕмĕт кирлĕ —
Тен, эп сан çăмăл çунатна амантрăм,
Тен, пĕчĕк ĕмĕтне сисмесĕр татрăм —
Хална шута илмесĕр вĕçрĕм вирлĕ...

Çурхи вĕçев иртсен — кĕрхи пуçланĕ.
Юнра — вĕри-вĕри чĕнӳ вăранĕ!
Кам вĕçĕ ман хыçра е çума-çумăн?
Тух тепĕр хут çула! Кая, тен, юлмăн...

Ан кай, ан вил, Илемпиçĕм-акăшăм?!
Илтетĕн-и мана — ан кай, ан вил?!
Шур çунатту çине вĕри куççуль тумланăшăн
Каçар мана... Чĕрÿ патне ан ил...

Аса илсем: епле пĕрле вĕçеттĕмĕр
Малтан — мала, çÿлтен — çÿле!
«Çитес çĕре çитетпĕр пурпĕр,— теттĕмĕр,—
Çĕнсе хура пĕлĕтсене, çиле...»

Çунатсене килĕштерсе сулаттăмăр
Пĕр вĕçевре — çук, упраман вăя!
Халран кайсан, пĕрне-пĕри çул патăмăр,
Кайран мала куçса, малтан — кая...

Шур тĕк çине ансан кĕрхи каç тĕттĕмĕ,
Ларатăмăр черетлĕн çил енне
Е пуçсене, ыйха путса, чикеттĕмĕр
Пĕр-пĕрин çунаттисем айне.

Пĕррехинче, çеçке çурсассăн çĕмĕртлĕх,—
Ир тĕтрине хĕвел сирес самант —
Ик ĕмĕтрен пĕр ĕмĕт турĕ ĕмĕрлĕх
Тăват çунат çуратнă асамат...

Вара... чĕвĕлтетсе тĕк-мамăк пухрăмăр —
Пĕрле хывсан, йăва ăшши тăван.

Ик сар чĕппе ертсе çула та тухрăмăр —
Епле вĕсем ÿсеççĕ халь аван.

...Каç пуласпа кĕрхи çилсем вĕрет ĕнтĕ.
Çунаттисем чĕпсен те тĕреклех?..
Çÿлтен-çÿле вĕçме пĕччен вĕрентĕттĕм,
Шур амăш пек ачаш пулма — епле?..

Ак кай, ан вил, Илемпиçĕм-акăшăм?!

— Саватăн-и? — тесе час-час ан ыйт манран
Саватăп тенине илтмен чух ан кӳрен:
Яш чух каланине тепре калайманран
Хĕрхевлĕн, хыпăнса пит ӳкĕнеп — ĕнен.

Çурхи хĕвел çути чечек папакине
Çӳçенчĕк чуппипе çуртарнă пек ирех,
Ачаш сăмах сиплет хĕрарăм чĕрине,
Чи çепĕççи вара — вилсен, чĕртет тӳрех.

Эс, Илемпи, пĕлен ун асамла вăйне —
Тен, çавăнпа ăна типсе, шăнса кĕтен.
Пăшăлтатса калать чĕлхем ачашшине,
Чи çепĕççи вара каланаймасть темччен.

Пепке «Анне!» тесе чĕлхе кăлариччен
Мĕн чухлĕ тертленет! Пĕл: эпĕ те çĕччен
Çунса та вăтанса çӳрерĕм чылайччен
Сана пĕрремĕш хут «саватăп!» тейиччен...

Çын амăш эс — пĕлетĕн çурату тертне.
Çав чи таса сăмах та чĕрĕлет хĕнпе.
Кĕт! — савăшу саманчĕ çитеспе
Ăна, çунат парса, вĕçтерĕп сан енне.



# ШУР ЧАРЛАНСЕМ ЯЛА ВӖҪҪЕ КИЛЕҪҪӖ

**ПОЭМА**

1 Миçе пин кун, миçе пин каç пĕччен
Эрнеç инке тăван кил-çуртĕнче?
Ыйтаймăн кив сехет куккукĕнчен —
Тек аватмасть вăл йĕс читлĕхĕнче.
Чĕррик! — сас пачĕ шăрчăк çурăкра —
Калаймĕ вăл та: тĕлĕрет хĕлле.
Кушак, йӳтенĕскер, мăрлать çумра
Йăваш куçне хĕссе иле-иле.
Пепкеллĕ турă амăшĕ кăна
Ларать пĕр ватăлмасăр кĕтесре —
Ăна сĕрле-сĕрле йĕрлет шăна,
Хаваслăх тупнă евĕр çав ĕçре.
Çаплах карта карать-ха эрешмен
Мачча хăмипеле мăк хушшине.
Катка та чăп тулли — шывне ĕçмен.
Ухват-турчка кĕтет кил хуçине.
«Эрнеç инкен туйи те хĕрĕхре»
Темен пуль ытахаль пĕр шăлйĕрен:
Тăрать вăл — тус-лаша-çке! — витере
Тип шăпăр çумĕнче каç килнĕрен.

2 Эрнеç инкен ку чух ĕç-пуç сахал —
Нумай-и кирлĕ ватлăхра çынна?
Улт чăхă, сар автан, çич кăвакал
Апат парса вăл хупрĕ самана.
Çултан-çул ун юратнă ик чăххи
Пусма ларать тĕк сарнă ик лăппа —
Хавас шимп-шимп! пуçланчĕ те хайхи,—
Ват çын йăпанкалать çав халăхпа...
Каç-каç — хĕлле, çулла, кĕрле-çурла,—
Çил майăн шăлт! тăвать те кив хапха,
Инке — ак вăтăр çул ытла çапла!—
Кĕтме тухать йăмраллă хутлăха...
Хăш чух вăл хапхарах тăрать темччен,
Хăш чух утса çитет укăлчана —
Пăхать, пăхать куçне вут хыпиччен
Инçетелле: «Хăть тавăр ачана!..»
...Ялти пĕччен хĕрарăм вĕçевре
Тусне çухатнă акăш евĕрех:
Хăй кăшкăрса-йĕрсе ўкет çĕре —
Ик шур çуначĕ хуçăлмасть тўрех...

3 — Кайма та вăхăт ёнтĕ,— текелет
Шăмшак тĕрекĕ чакнă май инке.—
Пÿрт чалăшрĕ, тăрри те ишĕлет,
Хапха юпи те тайăнчĕ тĕкке...
Вилсен тăхăнтарма çук мар кĕпе,
Çĕлен çиппе шур пир пур çÿпçере,
Хутаç — ыр шăршлă чапăр курăкпе:
Вăл пулĕ тупăкри пуçелĕкре...
Йалт хатĕр унăн: тутăр, алшăлли —
Пăхма килес кашни тăван валли.
— Нихçан та сăтăр эп туман çынна —
Вилсен тăкак ан тухтăр тăвана,—
Калать вара инке кули-кулми...—
Лаçра ав хатĕр тупăклăх хăми.
Çĕн çурт лартаймăн ватлăх укçипе —
Кайсан... чыс тăвăр ĕçкĕ-çикĕпе,—
Хушать вăл çамрăкрах карчăксене,
Çемçе тăпрас çине тухса ларсан.—
Аванччĕ те куç хупăнас енне
Хăть пĕр тĕпрем-мăнукăм таврăнсан...

4 Каҫ пулттипе кӗтӳ яла кӗрет —
Васкаҫҫӗ карчӑксем ӗне сума.
Инке пуш картишре пӗччен ҫӳрет
Кӑштӑртатса — «хӗн хӑнӑха манма...»
Авал ун пурччӗ пӗр мӑкла ӗне —
Урасӑр пулчӗ, шӑн ҫинче тӑрса.
Чара сӗт паракан качакине
Такам тӗп турӗ, ӳсӗрпе урса.
Пускил енче сӗт юррине илтсен,
Эрнеҫ анкартипе тухать хире —
Хуллен утать, сӑна-сӑна ҫӗре,
Вӑл пусӑ хушшинчи ҫулпа пӗччен...
«Эрнеҫ инкен сукмакӗ хӗррипе
Пӗр ҫум ӳсмест»,— калаҫҫӗ халӑхра.
Ак халь те ҫӗр ӗҫченӗн йӑлипе
Хура мӑян вӑл туртрӗ шӑйрӑкра.
Вара — мӑкӑртата-мӑкӑртата
Лӑпкарӗ пучахсен ҫемҫе хумне.
...Ҫивӗттине шыва ярсан ката,
Вӑл ҫитрӗ Атӑл-аттӗшӗ * умне.

---

* а ш ш ӗ (диал.)

5 Шап-шур кăлканлă тĕмеске хĕрне
Ларать Эрнеç, шап-шурă çÿçлĕскер.
Итлет, тăнлать хумсен калаçăвне —
Вĕсем çынна систернĕ пек темскер.
Хум хыççăн хум шăвать, шавлать, сÿнет,
Çыран хĕрне шур кăпăк хăварса.
Шыв майĕпен чакать е ÿсĕнет,
Тискеррĕн пăтранса е тăрăлса...
Çук лăпкăлăх мăнаçлă юхăмра —
Эрнеç инкен те канлĕх çук ăшра:
Е шухăш хум çапать ăс çыранне,
Е асилÿ капламĕ куç умне
Васкавлăн иртнĕ кунсене çаврать,
Каç тĕслĕ манăç тĕтрине сирсе...
«Ерчĕн Эрнеç ял йыттине ăрат!»,
«Ерчĕн Эрнеç — вĕлтрен ачи!» — тесе
Шеллевсĕр витлени, мăшкăллани
Халь, çитмĕл çул иртсен, килет аса.
«Эх, мĕн тума çуратнă-ши анни!» —
Йĕретчĕ вăл, çак вырăна тарса...

6 Иртни асра йĕркеллĕн упраннин
Сиенĕ те, ырри те пур пулас...
Хутаç çакса çӳренине маннин
Ватлăхĕнче кунçулĕ, тен, канас?
Çукки — ман мар, пурри — умра тесе,
Ват çыннăн çырлахас килмест иккен!
Ху тăлăхшăн çынна эс ан тĕсе
Теме сăлтавĕ çук пекех инкен...
...Ак çитмĕл çул канаш ыйтса пуплет
Эрнеç ыр чунлă Атăл-ашшĕпе:
Чи йывăр чух вăл кăмăл ăшшипе
Чунне, куçне йăпатасса пĕлет.
— Мĕскер тăвас?—ыйтать унран Эрнеç.—
Кайма та вăхăт урăх тĕнчене —
Йăх пуçĕсем унта час-час чĕнеç...
Кам юлĕ эп тар тăкнă çĕр çине?
Арçын, ик ывăл вилчĕ вăрçăра.
Пĕртен-пĕр тăхăм — вăл та çук умра.
Тен, юлĕ хăлăпра пĕр кив çăра,
Чĕррик-чĕррик ват шăрчăк — çуртăмра?..

7 ...Хыпарласа ҫӗн ӗмӗр ҫитнине,
Кӗрлеттерсе ярсан чиркӳ чанне,
Ҫуралнӑ хӗр пӗрчи хура пӳртре —
Вирт йӑхӗнче шарт! сикнӗ Кӳлнере.
— Качаллӑ-и?! — тесе нимрен малтан
Ун «йывӑҫ ашшӗ» * ыйтнӑ та — чунтан
Лач! сурнӑ тарӑхса, чӑнне пӗлсе.—
Вирт йӑхӗ ҫӗрсӗрех кӑнать! — тесе...
Элес-мелес пуп ӗҫкӗ-ҫикӗре
Эрне иртсен асилнӗ пил-хӗре.
Тӗне кӗртсен те пӑрлӑ шетникре,
Кӳтмен пепке ӳт пулнӑран кӗре.
Кӳтме-и?! Вылятса питне-куҫне
Кулам пекки вӑл тунӑ, тет, темле,
Манса каймасӑр хӑйӗн тӗп ӗҫне —
Йӑрт! юхтарса шӗвек пуп еннелле...
— Анафема! — янрашнӑ пуп-атте,
Ҫаплах вӑл ҫырнӑ хунӑ хут ҫине...
...Ҫав ят инкен юлатчӗ, тен, халь те,
Ҫӗн власть паман пулсан чӑваш ятне...

---

* аҫа ҫури (диал.)

8 — Аса илсен, йĕрсе ярас килет:
Ятран пит вăтанаттăм, çул тулсан,—
Витле-витле кулатчĕç куçкĕрет
Кÿлне çамаккисем, ваййа тухсан,
Ӳпкевлĕн тÿсрĕм-тÿсрĕм те хайхи,
Çул майăн тенĕн, кĕтĕм Совета.
Эйлин, лара парать, ман хăраххи,
Кил-йышсăр ÿснĕ Тимĕрлен унта!
Тĕлĕнмелле: ăна та ретсĕр пуп
Чыс тунă-мĕн, парса... пĕр хан ятне...
Каларĕ Тимĕрлен: «Е — çĕнĕ туп,
Е — çирĕплетĕп халăх панине».
Çапла эп пултăм тăтăм Эрнеспи,
Калаçнă чух Эрнеç тени тĕсел,
Ар тус та кулянсах каймастчĕ пит,
Чăвашлатсан ят шеп янрать, тесе...
...Йăмра кăчкин сар тĕкĕ палăрсан,
Пĕр каçхине çав Тимĕр Тимĕрлен
Чуччу сакки енчен хуллен-хуллен
Сас пачĕ: «Эрнеслу, çума ларсам?..»

9 Эй, мӗн кӑна курман Эрнеҫ инке
Пурнӑҫӗнче! — хӑй ҫех, хӑй ҫех пӗлет.
Тӑваттӑра — аннесӗр. Вуникке —
«Хутаҫ пики» тарҫа кӗрсе ӗҫлет.
Ют ҫыншӑн вӑл — арман хуҫи чури,
Тӑван-пӗтеншӗн — «Пӗчӗк пӑрчӑкан».
Ҫӗре лекме пӗлмен Эрнеҫ ури!
— Эй, мӗн калас! Хуҫа хушсан—чупан
Иртен каҫчен: канма ларни пулман!
Ҫапах пӗр тав сӑмахӗ илтеймен...
Таса ятнех карма ҫӑвар куштан
Хур турӗ элекпе... Тепле вилмен!
...Ҫуралчӗ, ӳсрӗ ӗмӗрпе пӗрле
Ӗҫлевҫӗ Атӑл хӗрӗ Эрнеспи —
Вунҫиччӗре кун курчӗ ҫӗнӗлле
Ырлӑхалла ҫул уҫнӑ май шӑпи.
Нихҫан та манас ҫук Эрнеҫ инке
Хӑй ячӗпе ҫӗр уйӑрнӑ куна!
Ҫав кун вӑл сисрӗ: тӗрӗс ҫӗн йӗрке,
Ерчӗн хӗре хурать пулсан ҫынна!..

— Шыв, сывлăш, çăкăр, пурнăç амăш — çĕр
Паян кунтан эс маншăн пул анне!
Май пар манса кайма ерчĕн ятне,
Тăван та, тус та пул, хута та кĕр?! —
Тесе пуçларăм кĕреçе касси
Лутра çĕрпӳртлĕ пĕчĕк пахчара...
Мĕн пултăр-ха çĕр ĕçĕнчен асли!
Çав туйăмпах тар тăкрăм колхозра
Эп хĕрĕх çул ытла — Кӳлнен юлман
Эрнеç алли ачашламан ани!..
Чи йывăр чух та нăйкăшни пулман,
Ĕçрен тарман, чĕнсессĕн самани...
И-и, халь хресченĕн пурнăçĕ — рехет!
Кĕрнеклĕ, ятлă-сумлă ĕçлекен.
Кил-çуртĕнче те пур ун перекет.
Анчах... тем пулчĕ — йышлă ĕçекен...

. . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .

11 Ыр ёҫ лаши те, тилхепи ӳксен,
Турта атать е пуҫсӑр ёрӗхет —
Этем те, чӑхӑмӗ ӳссен-ӳссен,
Ёҫне мансах пуҫтаххӑн иртӗхет...
«Чӑваш хресченӗ сивӗнет ҫӗртен»
Тени касать Эрнеҫӗн чӗрине!
...Ҫак шухӑшпа вӑл тухнӑччӗ хиртен
Юратнӑ Атӑл-аттӗшӗ умне.
— Чипер йӑласенех — эй, иҫмасса! —
Мӗскершӗн халь пыратпӑр-ши манса? —
Эрнеҫ ыйтасшӑн Атӑл-ашшӗнчен,
Сӑмах тупса вут хыпнӑ ӑшӗнчен.
«Ан суранлат е ан амант ҫӗре:
Вӑл — пӗтӗ!» — тетчӗ ват чӑваш авал.
Суранлатма-и?! Тӑп! пусман пӗрре
Ҫинҫе ҫитсен, тапсассӑн та хавал!
Ҫӗре ҫын савӑнтарнӑ юрӑпа,
Шӑпланнӑ вӑл ҫӑмӑлланас чухне.
Чӑвашӑн виҫ уявччӗ... халь — шутне
Пӗлеймӗн: шутламаҫҫӗ мухмӑрпа...

12 Этем ăшне мĕнле кĕрсе тухан?
Ăçтан пĕлен ун вăрттăн шухăшне?
Пĕри йышпа пĕрлех ĕçлет — пăхан:
Нимрен мала хурать хăй тупăшне.
Пĕлет йăпăлтатма, май калаçма,
Нихçан чĕрре кĕмест, хыçал ретре
Ларать пухусенче — ĕнсе хыçма
Хускатмĕ йывăр аллине пĕрре...
Тепри — сăмах илет те сӳтĕлет,
Тавлашнă пек пуç мимипе чĕлхи,—
Тахçан мĕн пуласса паян пĕлет
Акман тырра выраканла хайхи...
И-и, çитмĕл çичĕ çулăм тăршшĕнче
Темле çынна та куртăм ялăмрах!
Çиелĕ улшăнсан та — ăшĕнче
Шăтни хресченĕн ӳсĕнет вăрах...
Хăçан, хăçан «ку — пирĕн çĕр!» тени
Шайлашĕ-ши «ку — ман çĕр!» — тенипе?!
Пухусенче чĕнӳллĕн калани
Хресчен ăшне кĕмест час чăннипе.

13 Тĕрĕссине калас-тăк, пуш пучах
Пуç ухнă чух салху ăрша юхни...
Çак икĕ пилĕкçуллăхра татах
Сывларĕ ячĕ уççăн ял çынни.
Ку чухнехи пек тырă тухăçне
Чăваш хресченĕ нихăçан курман!
Çапах та халĕ те чылай чухне
Эпир ăспа ытла, ытла мăран...
Е тем кĕтсе, е такама шанса
Йӳтетпĕр ĕлĕкхи пек пӳртсенче,
Пурнасшăн мар яш-кĕрĕм вĕсенче —
Ял халăхĕ пырать ак ватăлса...
Çут тăраллă (мĕскер калас: хитре!)
Темсем çĕклетпĕр... выльăхсем валли,—
Хваттерлĕ çурт вара — кай черетре.
Пур,— теç-ха,— план... Васкатăрччĕ алли!
Леш... чирĕкрен туни — темле кермен...
Хальччен ятне хуман чăн чăвашла!
Чун еккипе унта мĕнле кĕрен
Улах ларма?! Ку — чăн та кулăшла...

14 «Эрнеç керменӗ — капӑр çут тӗнче»,—
Тип-тикӗнтен юмах тухман ялта...
Якалнӑ пӗрене, тӑпрас çинче
Ларатпӑр çӑвӗпе — аван унта
Чун-чӗрене уçма, чӑлха çыхма,
Хыпар-хӑнар пӗлме е тӗш катма,
Ыр шӑршлӑ матрӳшке чейне ӗçме
Е çаврӑм юрӑ кӗввипе вӗçме...
Йӗс çулçине вылятнӑ май йӑмра
Шимп-шимп! чӗп хӗвӗшсе çӳрет умра...
Ват çынсене çак ырлӑх та çитет,
Анчах яш-кӗрӗм çӗннине кӗтет!
...Мӑнукӑм та вара çарта чухне
(Тӑратчӗ слушпӑра Эстунире)
Час-час уçатчӗ çырура чунне —
Çӗн çурт лартасчӗ, тетчӗ, Кӳлнере...
Эстун хресченӗсен килне-çуртне
Мухтатчӗ те — «Чӑваш мӗнрен кайра! —
Тесе çырса, вӗçлетчӗ хӑй вара,—
Вӗсем пире тӑван»,— тесе хутне...

15 Хӑй... таврӑнчӗ те кӗрпеле ҫартан,
Эрне ытла ӑшталанса-ҫунса,
Тухса вӗҫтерчӗ пӗр ирпе ялтан...
Эп, мӗскӗн, юлтӑм хурлӑн ал сулса...
...Пӗрре кайса курсаччӗ хулана —
Пӗр «сасси пушкӑ» теекен пӳртре,
Вар хӗрринче, пурнать... Суять мана,
«Аван» тесе, тухасшӑн пек тӳрре.
И-и, мӗн аванӗ! Кив хӗрхӑмаран —
Ик ен ҫапса, варне тӑпра ярса —
Ҫӗкленӗ вӑл «кермен...» Йӗрсе яран,
Курак кӑрак! тесен, тӑрне ларса!..
«Кала-ха, мӗншӗн кайрӑн эс ялтан,
Аҫу ҫуртне, мана манса кайса?!» —
Ыйтсаччӗ те — чӗнмерӗ... Хӑй кайран
Аташрӗ ҫӗрӗпе, ыйха путса...
...Шур кӑлканпа инкен шап-шур ҫӳҫне
Вӗҫтеркелет нӳрелнӗ ӑшӑ ҫил.
Тем евитлет-ха Атӑл-ашшӗне
Эрнеҫ инке сӑпайлӑн, ыйтнӑн пил...

16 — Эхех, мӑнукӑм! — шухӑшлать инке.—
Тен, айӑп пур-тӑр... Пур пулсан — каҫар...
Мӗн, кам хӗрхевсӗр уйӑрчӗ икке
Санпа мана?! Ӑнлан: эп мар! эп мар...
Пӗртен-пӗр шанчӑк — эсчӗ! Туй хуппи
Укҫа тусаччӗ, ҫӗрулми сутса.
Епле сана кӗтетчӗ Ҫулӑмпи!
Кӗрет-иҫ халь те ӑшӑ сӗт йӑтса...
Пурнан пуль туйсӑр илнӗ «пепкӳпе»...
Хула пики пулас ҫав — сӑн-пӳпе
Хӗҫ евӗр: ни кӑкри, ни купарчи,
Ҫитменнине вӑл — хӗсӗр: ҫук ачи...
Сӑмахӑм ҫук: илемлӗ Ҫулӑмпи!
Кӳлне пыл хурчӗн тейӗн кӳлепи!
Каҫ сӗмӗ сирӗлет, вӑл йӑл кулсан,
Питрен юн сирпӗнет, ӳпре ҫыртсан!..
Ӗҫре ларма-тӑмашкӑн пӗлменрен
Чӗнеҫ ӑна та «Пӑрчӑкан» тесе...
Эх, мӑшӑр тупаймарӑн Кӳлнерен!
Куҫҫуль тӑкатӑп ак, сана кӗтсе.

17 Эрнеç инке... Тӗлӗнмелле этем!
Ун шăкăл-шăкăл калавне илтсе,
Пӗр-пӗр тӗпчевçӗ сиввӗн калӗ, тен,
Ват çын ытла чӗрре кӗрет, тесе?
Тăванăм, ан васка! Ларса пупле
Малтан ват аннӳпе, кинемӳпе
Тăпрас е пӗрене çинче пӗрле
Е, çăлтăр çутăлсан, ял йăлипе
Кӗрсе тирпейлӗ, хӳтлӗ пăлтăра,
Сăра сыпса калаç вӗсемпеле
Хресчен шăпи çинчен — ун чух вара
Вӗсем çине эс пăхăн çӗнӗлле...
...Хăш чух ӳпкевлӗрех те калаçни
Пулать пӗчченӗн, чун кӳтсе çитсен.
Хăш чух пулать пуль тарăхни, çунни...
Анчах, ӳпкевлӗн вӗчӗхни иртсен,
Куран: епле ыр кăмăллă вӗсем,—
Анне-инкемӗрсем, кинемейсем!
...Мӗн чухлӗ ăс вӗсен сăмахӗнче!
Мӗне мӗскер çӗнет унта? Тӗпче!

18 — Кам Кӳлнере чи сумлă ҫын?
— Эрнеҫ!
— Кам чи сăпайлă, тӳрĕ ҫын?
— Эрнеҫ!..
Ҫакна час-час илтетĕн ҫынсенчен.—
Шăпи анчах йӳҫек: пурнать пĕччен...
...Пӳрт умĕнче, йăмра сулхăнĕнче,
Сад картинче е Атăл хĕрринче
Чылай тĕл пулнă эпĕ инкепе —
Калаҫнă е шăп ларнă сехетпе...
Ҫĕн ҫурт кĕрекинче, хавас туйра
Эп илтнĕ унăн ăшă сăмахне.
Пил черккине — тĕппи, ыттисене —
Тутипеле чăп! чуптăвать вара.
Саркаланса юрлать — чун еккипе,
Ташша та тухкалать-ха йĕркипе!..
— Эйлин, епле чиперччĕ! — тет пĕри.
— Эх, Тимĕрлен пулсанччĕ!— тет тепри...
Чĕлхи инкен — вĕлтрен е кикенек!
Хăй — секретарь шикленкелет унран.
Чи харсăр ӳсĕр те, тупса тĕрек,
Тарать хутлăхалла, ăна курсан...

19 ...Тусанĕ кăтăш пулнă çул-йĕрпе
Кăштăртатса утать Эрнеç килне.
Йĕпхӳ пуçланчĕ. Курăк йĕп-йĕпе.
Тӳлеккĕн, канлĕн тĕлĕрет Кӳлне.
Ак — анкарти. Ак — пĕчĕк сад пахчи.
Умра — юратнă ватă улмуççи.
Çич çул ак çулçă çех сарать калчи —
Шеллет касма: лартсаччĕ кил хуçи...
— Эх, Тимĕрлен! Ак вăтăр çичĕ çул
Йăва хывмасть чарлан * йăмру çине...
«Тен, таврăнĕç?!» тесе, мĕн чул, мĕн чул
Эп кĕтрĕм шурă кайăкăмсене...
...Татах, татах асаилӳ çиппи
Пуçларĕ вĕçсĕр-хĕрсĕр тăсăлма.
...Вунтăххăра çитсеччĕ Эрнеспи —
Пĕчченскере хĕнрехчĕ пурăнма.
Пĕр каçхине çĕрпӳртĕн алăкне
Хуллен-хуллен шаккарĕ Тимĕрлен...
...Ирпе вăл кайрĕ хĕрлисен çарне.
«Кĕт,—терĕ,—Эрнеслу... Ан ман... Ĕнен...»

---

* аист

20 Вӑй-хал илсе пыратчӗ ҫуркунне —
Кӑмакине хутсаччӗ сар хӗвел.
Ӗсӗклесе юлса ҫӗрпӳрт умне,
Каларӑм: «Таврӑнсам тӗрӗс-тӗкел!»
Ни — хӗр, ни — арӑм... Вӑхӑтне кура
Тӑхӑнаймарӑм эп венчет кӗпи.
Пур харампыр-хурах ура-ура
Ҫӗн пурнӑҫа кӑкласшӑнччӗ тӗппи...
Эй, мӗн калас! Хаярччӗ самани!
Туйса илсе-ши тӗрӗслӗх вӑйне,
Ҫын ӑшӗнче ҫултан-ҫул капланни
Татса пыратчӗ хурлӑх сӑнчӑрне...
...Малтан ялти кӗрешӗвӗн сӗмне
Эп уйӑрсах кайман та чӑннипе,
«Ӑс витмесен — ҫын туйӗ чунӗпе!» —
Калатчӗ Тимӗрлен чухӑнсене.
Ун сӑмахне тимлерӗм чӑннипе,
Арман хуҫин тукшан мӑйне авсан...
...Вӑрҫа халь кайрӗ савнӑ тус ялтан —
Мӗн пулӗ, вӑл калле таврӑнмасан?!

21 Татах, татах эп çĕрпӳртре пĕччен!
Кĕтетĕп ир те каç Тимĕрлене.
Хăрушă выçлăх çулĕ... Талпиçен,
Сар тилпĕрен хупларĕ хирсене.
Вирт янă пек ĕнет урам, çаран.
Вĕт хурт-кăпшанкă кишĕклет çулçа.
Çулсем вĕри — пусмалăх çук çарран...
Ялйыш асапĕ çунтарать куçа.
Çынсем салхуллă, сӳрĕк те имшер —
Сывви те килсерен икшер-виçшер...
Хăрушă, хĕн куçран куçа пăхма!—
Терт пур, анчах термен çук пулăшма...
Йăтатăп шыв куллен çуршар витрен
Ăшăхланма пуçланă Атăлтан:
Тумлам ӳкмест сар сăнлă тӳперен —
Кăшт пулĕ çĕрулми, тен, шăварсан.
Ак тиф ермешрĕ выçлăхпа пĕрле —
Ăçта пыран, унта — виле, виле...
Мĕнле çакна тӳссе ирттермелле?!
...Тăван Тимĕрлене ман кĕтмелле!

22 Кулак-куштан тавраш̆ӗ сӗм-ҫӗрле
Тискеррӗн, вӑр-хурахӑн, сӗмсӗрле
Вӗри пӑшатанпа чиксе куҫне,
Ҫапса пӑрахрӗ Тимӗрлен тусне!..
Мӑн хырӑм пуп та выҫӑ халӑха
Совет тавра ҫӳретрӗ турӑшпа —
Паллах, «Пӑлхавӑр ҫӗклӗр!» шухӑшпа...
Анчах вӑл мӗкӗрешрӗ кӑлӑха!
Ыйтмарӗ сиплӗ ҫумӑр турӑран —
Те кӗллине манса, те шикленсе,
Те хӑй те, мачӑшки те тутӑран...
Турри ун пек чухне — ҫӳлте, инҫе...
...Ҫӳреттӗм макрашса килтен киле,
Сӗнсе тӑварсӑр шӗвӗ пул шӳрпи...
...Ҫитмен пулсассӑн пулӑшу, тепле,
Темле пулатчӗ кӳлнесен шӑпи?!.
Большевиксем каларӗш, Мускавран
Яла вӑл ҫитрӗ Ленин хушнипе.
...Ак Хӗрлӗ Ҫар салтакӑн тумӗпе
Ман Тимӗрлен те кӗчӗ алӑкран!

23 ...Суранлă Тимĕрлен, хыткан Эрнеç,
Сăран тумтирлĕ яш продкомиссар
Иркӳлĕм валеçеççĕ кучченеç,
Килрен киле кĕрсе,— кĕрпе, тăвар,
Тип пулă, çăкăр, сахăр та кăштах...
— Анне, ан макăй... Пулчĕ пек лăштах...
Халь уяма тухатăп вылямa...
Çакна илтсен, хĕн куççуле чарма!
...Ик çул чун кĕртрĕ ял ачисене
Эрнеç «Опчествăлла столовăйра»,
Тăрантнăн ама кайăк чĕпсене
Ырми-канми... Çĕнсе хĕн-йывăра,
Ял чĕрĕлсе вăй илнĕ май вара
Вăл чиперленчĕ хăй те пикелле:
Тек тăлăх мар Эрнеç — тĕлĕнмелле!
Çитменнине ак Тимĕрлен çумра!
... Хăй чи хавaслă чух та Эрнеспи
Туйми пулман çынсен хĕн-асапне,
Çунат тĕкне татсассăн та шăпи —
Йăпаннă курнă май çын телейне...

24 ...Тен, ак çакна «Телей ку!» темелле?!—
Пур çĕр, пур вăрлăх, çумăр — вăхăтра,
Йыша пĕрлешнĕ хресченсемпеле
Тимĕрлеппе Эрнеç те акара!
Çунат çапа-çапа юрлать тăри:
«Çĕр — кăпăш, вăрлăх тутă пултăр-и!
Калча ем-ешĕл, чăшăл шăттăр-и!
Ĕнсе-çунса ан кайтăр-и тырри!..»
...Хăйне, çĕрне пусмăрлакан çукран
Хулне тӳрлетрĕ, çутăлчĕ сăнран
Чи сумсăр, ятсăр пулнă ял çынни —
Çак ма́р-и чи ырри, хакли, çĕнни?!
Хирте, ялта — çуралнăн çĕнĕрен! —
Пуçларĕ илтĕнме чĕре юрри.
...Тĕлĕкĕнче Эрнеç — те кĕтнĕрен!—
Кĕр умĕн курчĕ çĕнĕ çурт пури...
Пĕр ир тăвата пĕчĕк улмуççи
Телейлĕ măшăр лартрĕ пахчана.
...Хĕрарăм сисрĕ: чун тӳпи уççи
Сасартăк вăтантарчĕ те ăна...

Уй-хир ĕçне вĕçленĕ Кӳлнере —
Каç хӳшшинчен хĕвел тухи-тухми —
Пуçланчĕ шăнкки-шанк! сас-кĕвĕре
Йыша пĕрлешнĕ чăвашсен ними.
Пĕр ушкăнĕ чутласшăн пĕрене,
Тепри хавхаланса чавать ыра —
Хĕрӳ ĕçе кура сап-сар пура
Ӳсет Тимĕрленпе Эрнеç ятне!
Ни пысăк мар, ни пĕчĕк мар, анчах
Эрнеçшĕн, Тимĕрленшĕн вăл — кермен!—
Ачаранпах ик тăлăх çын пачах
Тăван кил-çурт мĕнне туйман, пĕлмен...
Çĕн мăшăрăн çитес те çук хевти
Пӳрт çĕклеме, тус-йыш пулăшмасан.
Халь — сыхлĕ вĕсене вучах хӳтти
Хаяр хĕл сиввипе çил-тăманран.
Хавассăн тĕтĕм чĕртĕç те вара —
Çĕн пурнăç пуçлĕç ăшă çĕн пӳртре!
...Йышпа пĕрле çĕнсен хĕн-йывăра,
Кунçул та пиллĕ, ĕмĕт те хитре.

26 — Эй, ватлăх, эс те канăçсăр иккен!..
Сана мухтакансем — тăмсай кӳштек!
Кăть хускалан — авать-хуçать чикен,
Выртатăн — чул тултарнă пек тӳшек.
Кӳсек е кисĕп евĕр ал-ура:
Апла, капла вырттар е вырнаçтар —
Е лăпланма памасть сура-сура,
Е çывăрса каять те — хăть кастар.
Тинке тухать лăшт-кăтăш пуличчен,
Çитменнине тата пĕччен çынна
Çав самантра тӳсме те çук кичем —
Пин шухăш йӳтетсе хĕсет тăна...
Эй-хей,— кукленнĕ майăн эхлетсе
Эрнеç лăпкарĕ кивĕ арчине —
Хуппи çемçен-çемçен чĕриклетсе
Таянчĕ сакăн сар хăми çумне.
Тĕрленĕ, тимĕрленĕ арчара —
Хĕр çулĕнчен упраннă мул-тупра.
Кунтах пĕр пĕчĕк пăхăр сунтăхра —
Нимрен хакли... Çакман унта çăра...

27 Мĕн — ылтăн, мĕн — мерчен е тĕрлĕ чул,
Çак сунтăх туприпе танлаштарсан! —
Куç пек упрать ăна миçемĕш çул
Эрнеç инке тӳр кăмăлпа, тасан.
Чун кӳтнĕ чух, чи йывăр чух уçать
Ват карчăк çак асамлă сунтăха,
Вара — йĕре-йĕре вăл калаçать
Ирччен, ун ăшнелле пăха-пăха...
Унта — инкен хастар ывăлĕсем,
Унтах — хыпарсăр çĕтнĕ упăшки:
Çич сăпӳкерчĕк — пур кивви, çунни,
Йăлт сарăхнă салтак çырăвĕсем...
Ик ывăл сывă амăшшĕн ялан,
Ыр арăмĕшĕн чĕрĕ упăшки —
Вăрçа кайман пекех вĕсем ялтан...
Пирченеймен ҫуран — вĕсем çукки!
Никам, ним улăштармĕ вĕсене —
Ни тăвансем, ни сапăр пулăшу...
...Нихçан тӳнтер тăваймăн пиччĕне,
Çунса кăварлансассăн та ăшу.

28 Ик сăнÿкерчĕк — типшĕм алăра:
Ку — Тимĕрлен... Яш чух тата — çарта..
Епле вăл çамрăк! Шелсĕр вăхăта
Нимле те парăнмасть... Çаплах кăра...
Чи сумлă вырăнтан — стена çинчен —
Пăхатчĕ ăшшăн Эрнеслу çине.
Ўт-тирĕ, пичĕ-куçĕ кĕрчесен,
Вăтанчĕ имĕш карчăк — сăнсене
Пытарчĕ сунтăха куç умĕнчен...
...Ак кĕçĕр те вăл, ĕлĕкхи пекех,
Калаçрĕ çĕрĕпе тусĕпеле:
Ак Эрнеслу та пăрчăкан пикех,
Ак Тимĕрлен кулса кĕрет киле!..
...Пĕрремĕш хĕл каçсассăн çĕн пÿртре,
Улмуççисен папакĕ çурăлсан,
Эрнеç чĕри çывăхĕнче, ÿтре
Тем йăшăл турĕ!.. Алăка уçсан —
Сасартăк! — те юмах чăн пулнăран!—
Пĕр тĕлĕнтермĕш тухрĕ куç умне:
Хура çунатлă мăшăр шур чарлан
Йăва çаврать çара йăмра тăрне!

29 — Эй, Тимĕрлен! Илтетĕн-и? Часрах!..
Эй, Тимĕрлен теп! Тух-ха пахчана!..
...Çав ир илемĕ умăмрах, асрах,
Хавасĕ халь те йăпатать чуна.
Йĕркеллĕ, кăмăлçахчĕ упăшкам.
Килте пур пекчĕ килĕшӳ-тату.
Тен, çакă пуль вăл — чăн-чăн юрату...
Пĕрне-пĕри — çу-ук! — хур туман никам.
И-и, хур тума-и?! Ĕнтрĕк аниччен
Тунсăхласа çитеттĕм пикелле —
«Сив чун! Уйрăлаймасть хăй анинчен!» —
Тесе кĕтеттĕм тусăма киле.
Вăл вăхăта ман Тимĕр Тимĕрлен
Йыш хирĕнче ĕçлетчĕ тракторпа.
Çынсем ун чух, ачам, хăвах пĕлен,
Нихçан пуш сăмахпа туман тупа:
Мала чĕнсен — хăть вил те, пул малта;
Ан пул ертӳçĕ, такăнтăн пулсан,—
«Кулак» текен ик çемьене ялта
Хăварчĕ Тимĕрлен, шăв-шав тухсан...

«Арман хуҫи — чăнах та хăр кулак! —
Мул турĕ тарçă-тĕрçĕ тарĕпе.
Ехветшĕн пурнăç пулнă-и пылак?!
Тин уйрăлчĕ-ха сулăç пакрипе.
Лекçей те эртелпе çӳре-çӳрех
Çурт лартрĕ, туянса ĕне, лаша...
Çи, кĕвĕç, вĕчĕх те, анчах тӳрех
Тăшман ан ту... Ку — чи хаяр нуша! —
Хĕрсе каятчĕ Тимĕрлен час-час.
Куштан тавраше хĕтĕртет! — тесе...
...Ехвет хăта чап курчĕ ĕçлесе.
Лекçей çемйи ĕçчен ятне хавас.
Эйлин, халь çав чикепеле виçсен —
Çур ял ытла кулак пуль Кӳлнере:
Темле-темле машин та пур вĕсен,
Тупри — пӳртре, тĕш-тырă — пӳлмере...
Çапла... Çанталăк ăшшине кура
Ку чух иртĕхкелет вăл-ку, тепри...
Анчах — курма пĕлес пулать ырра:
Хум айĕнче тĕп юхăмăн юрри!..

31 ...Хĕрарăма пит йывăра килет,
Хресчен çемйи салтак çемйи пулсан,
Эрнеç инке çакна аван пĕлет! —
Мĕн чул вăл кĕтнĕ — ĕлĕк, ватăлсан!..
— Упăшкама, эсрел асса кайсан,
Вĕрентмелле илсеччĕ те çара —
Таврăнаймарĕ... Вилчĕ вăрçăра:
Танкистчĕ — ним юлмарĕ пуль, çунсан...
Тимĕрлентен ик-виç çыру илсен,
Хамах вĕрентĕм вулама, çырма, —
Манмаççĕ халь те тӳсĕмлĕх сунма
Çунатсăр юлнă ĕннĕ кайăксем —
Саралнă çырусем — сив йăваран...
Ик ывăл та ĕçлерĕ тракторпа,
Черетлĕн пĕр-пĕрне улăштарса.
Пĕри те таврăнмарĕ...
                    Йывăртан,
Хура хыпар илсен ăсран тухса,
Пепке-ачаллă кинĕм — çук чарма! —
Çара паккин тухатчĕ урама —
Çӳретчĕ юрласа, йĕрсе, кулса...

32 Салтак арӑмӗсем... Инке, анне...
Ҫӗре ҫити пуҫ тайӑр вӗсене,
Ватти-вӗтти, ҫулти — сывви-чӗрри!
Ан суранлантӑр тек вӗсен чӗри...
Пуҫ тайӑр тӑлӑха юлнисене,
Куҫҫуль тӑварӗ суккӑрлатнине,
Ачисене пӗччен ӳстернине —
Савма, шанма, кӗтме пӗлнисене.
...Кӗтсе илейменни пурна киле
«Ҫӗн ҫын» пулса кӗрсеччӗ ют киле —
Ан сивлӗрсем ӑна: йӑпаннӑн чун,
Кӑштах, тен, чакнӑ пуль асапӗ ун.
Салтак арӑмӗсем — инке, анне...
Тав, шутсӑр тав хӗрарӑм чӗрине,—
Тӑван кил тӗтӗмне упракана!
Вучах хӗвелӗ ӑшӑттӑр ӑна!
...Ҫӗре кӗрет халтан кайни, шӑппи...
Телейлӗ пултӑр сыввисен шӑпи.
...Салтак арӑмӗсем — инке, анне...
Ан манӑрсем, тархасшӑн, вӗсене!

33 ...Сас пачĕ шăрчăк-тус чĕрри-чĕрри!
Чĕвĕлтетет инке ик ывăлпа:
Болгари çĕрĕнче — аслин тăпри,
Тепри — хупланнă Берлинти чулпа...
Ик сăнӳкерчĕк — типшĕм алăра:
Ик йĕкĕт — ик салтак... Кашни — маттур
Аслин пит-куçĕнче — хăй сăнĕ пур:
Ку — кĕçĕнни — шет Тимĕрлен вара!
— Эх, Арăслан! Эх, Микулай! — тесе,
Тутри вĕçпе хуплать те тутине
Арлать Эрнеç тӳлемлĕ шухăшне.
— Тек савăнмăп сăпка чу! сиктерсе,—
Пăшăлтатать... Татах çыру уçса
Вулать-вулать те куççульне шăлать,
Унтан, тем айăп тунăн, хăш! сывлать,
Вăраххăн пăхăр сунтăхне хупса...
Тăрать, кăштăртата-кăштăртата
Утса пырса пăхать чӳречерен —
Тĕтреллĕ йăлăм тĕлĕрет унта,
Ун çийĕн шуçăм хĕрелет хуллен.

34 Ирпе утать вăл аслă урампа.
Тăк-так! Тăк-так! юртать туя-лаша.
— Ялти чи сумлă çын! Тух сăрапа! —
Кинне хушать пĕри.— Эй, тамаша!..
Утать инке — ват ăмăрткайăкла
Çаплах йăлт асăрхать-ха куçĕпе.
Пĕрне тăна кĕртет ятла-ятла:
— Тасатнă пултăр урамри çӳппе!
Шăк-шак! Шăк-шак! — ак уçăлчĕ хапха,
Шыçмак хĕрарăм тухрĕ куç умне.
— Эйлин! Паян та уçăлман-и-ха?!
Шăн çапрĕ — эс татман панулмине!..
Ак шăвăç витнĕ чул хапхаллă çурт —
Çулăмписен! Ĕçчен, тату çемье!
Вĕсен те килĕнче арçын-тĕп çук —
Пултарчĕç пурпĕр çурт-йĕр çĕклеме...
— Эпир те, яш мăнук ялта пулсан...—
Ӳкĕнерехрĕн калаçать инке.
...Вĕçет тĕрленнĕ çулçă, çил тухсан.
Ак юр та ӳкĕ — кун шитрен кĕске.

Вĕрет, вĕркет сив çил — ши-ши! çĕрçи,
Авать, хуçать йăмра тăррисене.
Вĕçет, вĕçет ват йывăçсен çулçи,
Пырса ӳкет чул палăк картине.
Сăрланă çăлтăр... Йĕс хăма çинче —
Çĕр икĕ хушамат... Йĕркен-йĕркен...
Рет-ретĕн виççĕшĕ — Эрнеç инкен:
Виç тăван ят... Асра, куç умĕнче —
Татах иртни: лăк тулнă укăлча,
Салтак юрри, салху шăнкрав сасси...
Юратнă çын... Çуратнă ик ача...
Пĕрне те май пулмарĕ курасси!
...Пăр сиввĕш йĕс саспаллисен ретне
Пӳрни вĕçпе ачашшăн сĕртĕнсе,
Çут алăкран вăл тухрĕ тĕршĕнсе,
Çирĕплетсе пин пĕрĕмлĕ питне...
...Çул пылчăкне ашса, çăрса-ирсе
Тем янратса та çуйхашса иртсе,
Пĕр ушкăн яш çухалчĕ тĕттĕмре...
Хура кĕр касĕ лăпкă Кӳлнере.

36 ...Пĕр çул — пурнăçĕнче пĕрремĕш хут —
Совхоз канма ярсаччĕ инкене.
Хĕвеллĕ Атăл. Шурă пăрахут.
Люкс пӳлĕмре — рехет ват ĕçчене!
Ача чухнехилле канас чуна —
Хум юрласа сиктернĕн сăпкана!
Е — кăтăш пул, е — çырана сăна!
Ял, сăрт, вăрман, хула тухать умна.
...Пĕр ирпеле пĕлтерчĕç: Волгоград!
Тем те кăтартрĕç паттăр хулара!
Сăрт тӳпинче — Çĕршыв-Анне тăрать,
Хĕç çĕклесе... Чипер, çиллес, кăра!..
Каларĕ иртнĕ май ун умĕпе
Елюк тăхлачăшĕ, чарса куçне:
— Кур-ха, Эрнеç: эсех кӳлепипе!
Эс шăп ун пекчĕ çамрăкрах чухне!..
...Йĕре-йĕре пантеона кĕрсен,
Çавра пусмапала ута-ута
Вуларĕç хушамат йĕркен-йĕркен,
Тăваннисем тупăнасла унта...

37 Сăрт тӳпинче — çерем çине тухсан —
Эрнеç чĕри кăрт! сикрĕ: Вăл — кунта!!
Чĕр курăк айĕнчи вĕри тусан
Çеçке куçпа пăхмасть-ши, тупата?!
Тен, ăшă çил — çын евĕр сывласа —
Çак сисĕме вăратрĕ?.. Кам пĕлет...
Кăшкăракан çĕре инке итлет,
Ӳтпе, юнпа Тимĕрлене туйса...
«Эп — çакăнта, тăванăм Эрнеслу.
Тав килнĕшĕн куçран куçа пăхма.
Ак сурана лăпкать ачаш аллу»,—
Салтак тăпри калать хĕрарăма...
...Халь — Кӳлнери чул палăк умĕнче
Çеçкеллĕ йĕкĕр ывăç тутăх çĕр.
Хĕл, çур иртет, çитет çу хыççăн кĕр —
Типмерĕ вăл тăван çĕр ăшшинче.
Тăп-тăрă кăвакарчăн куçĕпе
Пăхать пек Тимĕрлен Кӳлне çине...
...Тӳлемлесе ас арлакан çиппе,
Ĕшеннĕ кинемей хупать куçне.

38 ...Те ҫил, те ҫын шаккарӗ хапхана?!
Ак алăк шăкăлт! уҫăлчӗ хăех!
— Кам пулчӗ?!
— Эпӗ-ха... Кӗтмен хăна...
— Ҫерук хăтаччӗ-ши? Кӗрех. Килех.
— Мӗнле пурăнкалан, Эрнеҫ инке?
— Хуллен-хуллен... Эйлин, пыратчӗ-ха.
Шăмшак ыратнипе тухать тинке —
Леш, шăлсăрри, те манчӗ карчăка...
— Эп... мӗн калас... Паллах, мехел пулсан...
Ман айăп — пысăк... Май пулсан — каҫар!
Час-час, ура ҫине ӗне пуссан,
Шыратпăр чавсана... Унччен — хастар...
Ялан — вăл, ку... Пырать куҫа-куҫа...
Паян... Ҫӗн ҫуртлăх картрăмăр укҫа.
Яла ак ҫӗнӗ трактор килмелле —
Ҫын кирлӗ... Петӗр таврăнтăр киле...
Ҫак сăмахпа, сывпуллашма мансах,
Каҫхи хăнаваскарӗ урама.
...Эрне иртсен — чӗри кăшт лăплансан —
Вăй пухăнчӗ инкен ҫыру ҫырма.

39 — Нумай та кирлĕ мар-иç ват çынна —
Хисеп туни те ыр сăмах ăшши
Кив ĕмĕте чĕртсе çутсан чуна,
Ытла темех те мар пек тамаши...
Çынсем — кăмăллăрах, ял — хитререх,
Тăвантарах пек туйăнчĕç мана —
Йыша пĕрлешнĕ çулхипе пĕрех...
Тен, ват Эрнеç те курĕ çут куна?!
...Эй, мĕн кăна шухăшламан инке
Каç-каç пĕртен-пĕр тăхăмĕ çинчен?
«Эх, Петĕрĕм! Епле инкек-синкек
Чунна пистерчĕ ялăн çĕрĕнчен?!
Чи йӳçĕ кӳренӳ те ерипен
Иртет, тымар тăван çĕрте пулсан.
Чул çул çине тухса аташрăн, тен?
Йăпанăттăм, эс кăштăрт таврăнсан...»
...Ак халь иккĕленни, асапланни —
Хĕвеллĕ çумăр пĕлĕчĕ кăна!
— Сана,— кала-ха, ырă каç хăни,—
Эрнеç пӳртне кĕртмен-ши самана?..

40 ...Хӗл иртрӗ. Петӗр ҫунчӗ ҫав хатер,
Ҫыру илсен ҫуралнӑ ялӗнчен.
Каяс — парсаччӗ тин кӑна хваттер,
Юлас — ҫур ҫилӗ вӗрнӗҫем кичем...
Ак халь те хиреллех утать ура —
Ҫӗр тутлӑн илӗртет, туртать чуна! —
Ҫак ӗмӗрхи чӗнӳ витет юна...
Пуҫа ҫавра-ҫавра юрлать тӑри!..
Нимле тухмасть, ҫаплах тухмасть асран
Тӳрккес «хуҫа» каланӑ сив сӑмах!..
— Пит ватӑ асанне — ҫӳрет аран,
Кам пӑхмалла ӑна? Пӗлеп — хамах.
Ӑшра йӳҫни те сӗврӗлет халь тин:
Эп хамшӑн кӳренсеччӗ, тетӗр-и?
Мӗн-ма пуҫ чикнӗ виҫ салтак ҫемйин
Ялта чи кивӗ пӳртсенчен пӗри?..
Сума сӑваҫҫӗ ват ҫынна — анчах
Пӗлсех каясшӑн мар ун нушине...
...Ҫӗр пӑвӗ ҫӗкленет, ҫурхи вучах
Вӗретнӗн техӗмлӗ ҫур нӳрӗкне.

41 Çухатрĕ, тартрĕ Петĕр канăçне:
Кун — вăрăм, каç — тата вăрăмтарах.
Йĕркешĕн çех тăвать пек хăй ĕçне.
Каç-каç йӳç тĕтĕм тĕтĕрет вăрах.
Çаплах — те кӳренӳ, те ырату —
Шăнтать, вĕчĕхтерет ун кăмăлне.
Аспа чун хушшинче те çук тату.
Анчах... пур тивĕç! Пур — ват асанне...
«Мĕн калĕччĕ атте е асатте? —
Вăл шухăшлать татах, çине-çинех.—
Хăть тĕлĕкре канаш парасчĕ... Эх!
Тем вĕççĕр çунтарать, ĕнтет пите...
Темле чĕнсе — кĕмерĕ ӳкĕте:
Пырасшăн мар Сабина Кӳлнене!
Тинкелчĕ пуль ват çын кĕте-кĕте
Хыпар-хăнарсăр мăнукне, кинне...
— Эппин, пымастăн?!. Сывă пул... каçар!—
Салхуллăн хупрĕ Петĕр алăкне.
Хыçне салтак миххи çакса, вăр-вар
Утса вăл тухрĕ аслă çул хĕрне...

42 ...Катса-ватса хӗл тыткӑнӗн пӑрнӗ,
Кӗрлерӗ Атӑл. Сарӑлчӗ ейӳ.
Йӑпатрӗ кӳлнесен чун-чӗрине
«Сив хӗл хаярӗ — ҫу ӑшши» тейӳ...
Ак сухӑрланчӗ хурлӑхан ҫулҫи!
Ак ырлӑхлӑ ҫанталӑк еккипе
Эрнеҫӗн тусӗ — ватӑ улмуҫҫи
Пӗркенчӗ чӑвашла шап-шур кӗпе!..
...Пӗр ир илемлӗ ҫӗнӗ чул ҫуртран
Инке — тем сиснӗн! — тухрӗ пахчана.
Курни — юмахӑн туйӑнчӗ ӑна:
Йӑмра ҫинче — пӗр мӑшӑр шур чарлан!
— Эй, Петӗр! Эй, кин-чунӑм Ҫулӑмпи!
Тухсамӑр пахчана! Часрах! Часрах!
«Телейлӗ пултӑрччӗ кусен шӑпи! —
Мӗлтлетрӗ шухӑш.— Кӗтрӗм пит вӑрах...»
...Эрнеҫ инке сӑнарӗ чылайччен
Ик кайӑк ҫӗн йӑва ҫавӑрнине.
...Вӑтанчӑк Ҫулӑмпи упӑшкине
Пит вӑрттӑн тем каларӗ хӑлхинчен.



# СЛАКПУÇ МĂЙĂРĔ

Ик пӗчӗк сарӑ мӑйӑр — шӑп тӗкел! —
Ухсай пӗрре мана ытарлӑн пачӗ.
Пӗлмерӗм тупсӑмне — тупмарӑм мел:
Йӑла-ши ку е ват ӑсчах юптарчӗ?..
Аптрарӑм: мӗн тӑвас-ши мӑйӑрпа?
Катса, тӗшне ҫиес — парни пит хаклӑ...
Вӑтантӑм туйнӑҫем хам айӑпа,
Кӑвар кустарнӑ евӗр ҫунчӗ алӑ.
Ыйтуллӑн тинкеретӗп куҫӗнчен —
Чӗнмест Ухсай: эппин, ҫилленчӗ пулӗ...
«Паха йӑла сахал-и ҫут тӗнчен?
Пин ҫул ӑсне упрать теприн кунҫулӗ.
Пӗлсе ҫитер пурне те!..» — айванла
Эп хама-хам йӑпатрӑм та пӗр хушӑ,
Питлерӗм те: «Ху халӑхна тӑнла —
Эс пулмӑн хӑрӑк мӑйӑр евӗр пушӑ...»
...Чӗре панче, хӗвре, ҫуркуннеччен
Мӑйӑрсене эп ӑшӑтса ҫӳрерӗм,
Тӑван яла — Хура Шыва — ҫитсен,
Хӑпаракан ҫӗре хурса, пиллерӗм:
«Слакпуҫ мӑйӑрӗнчи сӗтек, йӳҫсе,
Хура Шыв ҫӗрӗнче калча кӑларӗ,
Чипер шӑтса тухса, чипер ӳссе,
Илемлӗ шӗшкӗ пулӗ — ҫимӗҫ парӗ...
Сӑсар хӳри пек пултӑр ун кӑчки,
Парка курланкӑ тутӑ мӑйӑр патӑр,

Ан тёкёнтёр шёшке эсрел пӑчки,
Тӗп тымарне ҫӗр юратса упратӑр...»
Ҫёрти чёр вӑрлӑх каяс ҫук сая:
Ак манӑн икӗ шӗшкӗ ҫимӗҫ кӳрӗ.
Ик сарӑ мӑйӑр — ӑслӑ Ухсая! —
Упрантӑр ыр йӑла... Ытти вӑл — юрӗ.

Юхать Слак хăвăрт,
Шавласа.
Чул çулĕ тăвăр,
Тап-таса.
Ём-ешĕл курăк —
Ик енче.
Янравлă юрă —
Юххинче.
Йăмра та çĕмĕрт
Улăхра
Ешернĕ чĕмсĕр
Шăплăхра,
Каш-каш! кашлаççĕ
Тăвăлта —
Тем шухăшлаççĕ
Тăвăнса...
Юхать Слак авăр
Çавăрса,
Канать пĕр авăк
Çывăрса,
Урса тухать те
Çырантан —
Асать хăй халлĕн,
Кăмăлтан.
Иртет кĕрлевлĕ
Çуркунне —

Тупать Слак меллĕн
Хай çулне.
Юхать Слак шывĕ —
Иксĕлмест.
Çăлкуçĕ сыва —
Çук, типмест!

— Миçере эс, йӑмра,
Миçере?
— Çитрĕ унка-çавра
Виççĕре...
— Тарӑнра-и çĕрти
Тĕп тымар?
— Чи шалти — чи чĕрри! —
Ҫалсӑр мар...
— Хӑвӑл мар-и вуллу
Хухӑлла?
— Çитес çук ик аллу —
Ытала!
— Çурӑлать-и çулçу
Çур енне?
— Витĕр курмĕ куçу
Тӳпене!
— Туратту сан мĕн чул,
Ват йӑмра?
— Çитмĕл çичĕ пин пуль —
Йӑлт çумра.
— Мĕншĕн хӑрнӑ пĕри,
Çӳçенсе?
— Çуннӑ вӑл, çав тери
Ӳкĕнсе.
— Сӑлтавне, ват йӑмрам,
Пĕлĕп-и?
— Çакӑнсаччĕ унран
Сар Нарспи...

Илем шыракансен йӑлипеле
Пуҫ тайнӑ хыҫҫӑн поэтсен ҫӗрне
Силпи ҫӑлкуҫӗн вӗҫсӗр юррине
Итлетӗп, сӑрт айне ларса, ҫӗрле.
Сарсассӑн чӑкӑт пек сап-сар чулсем
Валак айне те шаркама умне,
Алла, пите ҫуса, ик-виҫ хӗлхем
Тӗпретрӗм ҫӑкӑр: хушнӑччӗ анне.
Каларӗ вӑл: «Упраҫҫӗ ҫӑлкуҫсем
Хӑйсен юрӑҫисен сассисене —
Тен, Кӗҫтенттинӗн сунӑмне-пилне
Унта илтейӗн, ҫут шӑпа пӳрсен...»
...Янра валак умне кӑшт тӗршӗнсе,
Тӑнлатӑп ак пин сасӑллӑ юрра:
Кив ӗмӗрсем хивре-кар юхӑмра
Ӑна ҫырса хӑварнӑ-тӗр, сӳнсе...
Ак илтрӗм ӑшӑ ҫумӑр хӗлӗхне,
Кӗсле чӗнкӗлтетсе тем евитлет.
Ак чӑнкӑр-чӑнкӑр кӗмӗл тенкине
Хӗр утнӑ майӑн янратать тевет.
Ши! шӑхӑрать виҫ вӗҫлӗ саламат —
Ыххх! — йынӑшать хресчен, шӑлне ҫисе.
Ак сӑвӑҫа шӑхличӗ саламлать.
Ак авӑтать куккук, ҫул пиллесе...
Хуп сӑпкара пепке пекӗлтетни,
Хӗрарӑм шӑкӑл-шӑкӑл калаҫни

Ачашшăн йăпшăнать пек хăлхана —
Халь эпĕ кивĕ Силпири хăна.
Ак, чĕрене çурса, шăнкрав сасси
Ял вĕçĕнчен çывхарчĕ тăвалла —
Кун пек чухне пулать хурланасси:
Силпи каччи вăрçа ăсанмалла.
Сасартăк хăнкăрмаллă параппан
Вăратрĕ шухă ташă кĕввине —
Пуçланчĕ туй! Тен, вăл — Нарспи аппан?
Итлетĕп, ÿкĕнсе, хĕр йĕррине.
Ак шăлтăр-шăлтăр кустăрма кусать,
Çава тупта пуçларĕç улăхра.
Ак чĕреспе пике-хĕр шыв ăсать...
Çулсем иртеççĕ ырлăх-хурлăхра.
Янра пуçларĕ чан кĕтмен çĕртен:
Янн! Янн! — таçта инçе-инçе.
Пушар-ши е пăлхав? Кив ĕмĕр, тен,
Ванма пуçлать? Е — улшăнать тĕнче?..
Çак вичкĕн самантра сăрт айĕнчен
Çын чĕнчĕ пек — тен, Кĕçтенттин сасси?!
Е туйăнчĕ анчах?.. Илтни — чĕрен:
Унта упрантăр пил, вăл — чи таси...
...Çăвар уçма хăймасăр пит вăрах
Эп лартăм — шăпланмарĕç сасăсем!..
Тĕсне те, вырăнне те пĕр каçрах —
Сисмен те! — улăштарнă çăлтăрсем.
— Сыв пул, çăлкуç! Шарка, юрла—ан тип,
Çĕн пурнăç шăв-шавне пух юхăмна.
Тепре кунта çитес пулсан, Энтип
Хаваслăн итлĕ шуçăмччен ăна.

* * *

*А. Воробьева асăнса*

Элчел çинчен халь шухăшлас-и? —
Тин чĕрĕлнĕ çурхи тĕнче.
Хĕрсем карталанса ташлаççĕ
Слакпуç урамĕ варринче.
Виç аркăллă, хăюллă-сăслă
Кĕпи вĕсен епле хитре!
Пăхса ларасчĕ тарăн ăслăн —
Тем мурĕ йăлкăшать питре...
Ах, çаврăнаççĕ, явăнаççĕ
Нарспи инке йăмăкĕсем!
Эх, мĕншĕн, мĕншĕн эп хăна-ши! —
Чун хурланать, аса илсен...
Тен, пиллĕ Слакпуçне эп килнĕ
Кăштах, кăштах кая юлса...
Вăтанчăклăн çĕн ӳсĕм кинĕ
Куçран пăхать-ха йăл кулса.
Пăхать вăл вăрттăн, шунă майăн
Чечек пек ташă картинче.
Тен, туйăнать?.. Мĕнех, нумайăн
Йăпанакан çак çĕр çинче...
Поэт час-час телейсĕр пулнă
Пурнăçĕнче, юратура,
Вилсен анчах ăна чыс тунă —
Пĕр майлă, шăпине кура...
Епле асаплăн, тертлĕн сӳннĕ
Мухтавлă, аслă Кĕçтенттин!
Çитейрĕ унăн çутă кунĕ

Ӳтла кая юлса, халь тин...
Ăна савса калатпăр сăвă
Хăй ялĕнчи бюст умĕнче.
Чунра — е кӳренӳ, е тăвăл:
Пире те çăмăл мар, пичче...
Ак Воробьев Лекçей симлерĕ
Сăввин сĕтеклĕ сăмахне —
Тăп такăнчĕ те вĕçлеймерĕ
Хавхаланса калассине!..
Тен, сисрĕ пуль поэтăн чунĕ
Çĕн тĕлпулу пулаймасса —
Çӳрет-ха унăн çутă кунĕ
Ялти çул тăрăх ялкăшса...
Слакпуç сывлăшĕпе сиплерĕм
Эп хам та тĕмсĕлнĕ чуна.
Тата тепре кунта чиперрĕн
Çитесчĕ ман! Тепре кăна...

...Çулташ ыр тус пулсан, çул чĕмсĕр мар.
Утатпăр иккĕн çӳллĕ сăрталла.
Вĕрсе илет йĕпхӳллĕ çил вăр-вар,
Епрелнĕ çĕр — ура шăвать калла.

Ялтан тухни те тин-ха — пурпĕрех
Ĕнтĕркесе пыратпăр майĕпен.
Мĕн тĕлсĕр хăвалать пире ирех?
Пӳртре ларасчĕ... Халь ак — ут, йĕпен!..

...Каç иртрĕ куç хупмасăр — шуçăмччен
Ял пӳртĕнче кĕрлерĕ литулах:
Каларĕ сăвă тус ман тарличчен,
Каларăм эп те — черетпе, паллах.

Улт-çичĕ карчăк, пилĕк-улт мучи,
Яш-кĕрĕм... Халăх, чăн та, лăк тулли!
Яр! уçăлчĕ тӳпе — кив пӳрт маччи:
Саманчĕ — чĕрепе калаçмалли...

Хресчен тӳр сăмаха çех йышăнать,
Чунне уçмасть, сив сăмахпа суйсан.
Поэт чĕрипеле хăй ăшăнать,
Сăвви ун халăх шухăшне çутсан.

Итлеççӗ!.. Куçсенче — шалтан-шалтан —
Çывхарнӑн туйӑнать хевте çути,
Е тӗлӗнсе каяççӗ те шалтах —
Кулаççӗ ачалла!.. Мӗне — ытти?!

Мӗне — ытти, çынна çын ӑнлансан,
Ӗçпе Илем тупсассӑн килӗшӳ!
Эппин, кӗл евӗр сапалан, ӑсан,
Ултавлӑ чап, вӗт-шакӑр, тӗркешӳ!

...Çулташ ыр тус пулсан, çул чӗмсӗр мар
Утатпӑр иккӗн çӳллӗ сӑрталла.
Ӗшентӗмӗр кӑштах — тен, чарӑнар
Е талпӑнар пӗр майлӑ тӑвалла?

Куç хупӑнать... Тӑллана пек ура...
Кӗрсе выртар тип утӑллӑ лаçа —
Епле вӑл илӗртсе ларать умра!
Сахал-и савакан халь канӑçа?..

Утатпӑр... Чарӑнатпӑр-и халь тин?!
Сӑрт çӳллӗ те — хӑпартӑмӑр самай:
Çулне уçса хӑварнӑ Кӗçтенттин,
Ун тӑрӑх утнӑ Хусанкай, Ухсай.

Ӳкмеççӗ çӑлтӑрсем сӑрт тӳпине —
Е юр унта, е эрӗм, е кӑлкан...
Хӗвеллӗ, ӑшӑ халӑх чӗрине
Илсе çитерӗ çул, чипер утсан.

Шап-шурă çĕмĕрт! Каçĕ, каçĕ
Епле çывхарчĕ янраса!
Силпи шăпчăкĕсем юрлаççĕ
Йĕртес пек, каçăхса кайса.

Тĕмескесем тавра çӳретĕп
Тахçан ял пулнă вырăнта —
Вĕсем йăшаççĕ ретĕн-ретĕн,
Талпиçенпе йăлт сырăнса.

Мĕн тамаши, мĕнле хаярлăх
Çăлкуçлă, пулăх çĕрĕнчен
Пистернĕ хресчене?! Халь ялăн
Карти масар пекех кичем...

Вилни — тăван çĕрте, нимле те
Хăвармĕ тăлăха ăна.
Чĕрри — ăçта?.. Татах итлетĕп
Шăпчăксене эп, çĕн хăна...

Юрри вĕсен салхуллă темшĕн —
Темле чĕнӳ пур кĕвĕре...
Тăван кĕтесĕртен писменшĕн
Тав, юрăç-кайăксем, сире!

Мĕн пулчĕ-ши мана? — эп тĕлĕнетĕп:
Усал — хурлантарать, ырри — йĕртет...
Шăла çыртса хура-шура çĕнетĕп,
Хаваслăх хĕмĕ куçăма вĕтет...
Нуша — иртет, хавал — çитет, тени те
Хăш чух йăпатаймасть пек ăсăма.
Тата мĕскер куç курĕ, чунăм илтĕ?
Мĕн юлĕ каçарусăр асăма?
Сĕм-тĕттĕм каç ÿкет те сывлăм — вучĕ
Çиçме пуçлать хĕвел тухсан анчах...
Татах ак тĕлĕнетĕп: темĕн пулчĕ —
Чун çемçелет... тен, эп ачаш ачах?..
Пит йÿн-шим хура-шур вăл? — шухăшлатăп, —
Пит хаклă-шим ырри çак çĕр çинче?
Кăшт савăнсассăн та — йĕрсе кулатăп,
Вĕри шевле çиçет куç тÿпинче.

Мĕскер çухатрăм, мĕн туянтăм?
Мĕн — ĕмĕре, мĕн — саманта?
Мĕне — вăрр! ыватрăм та ятăм.
Мĕне — упратăп пит шалта?..

Ĕнер çех ăшăтнă кăвайт та
Паян кĕл пулнă, сип-сивех.
Ĕнер — пĕрне эп чыс тăваттăм,
Паян — вăл сивĕннĕ хăех...

Тин çех чĕрри — хăрма пуçланă.
Илем пулни — епле тискер!
Пин хут илтнисене те маннă...
Туянтăм тем, анчах — мĕскер?

Çĕрти те, çĕр çинчи те, авă,
Çӳл тӳпери те — вырăнтах.
Мĕне иккеленӳсĕр савăп?
Хăшне çухатăп-ши татах?..

Куç харши çунатланма пуçларĕ...
Шухăш лăпкăрах та тарăнрах.
Çулăм сÿннĕçем чĕре кăварĕ
Тĕлкĕшет вĕрин те çуттăнрах.

Çырлахтармĕ тек мана иленкĕ
Вĕтĕр-шакăр, сивĕ йăпату.
Кĕр халь çеç тĕссем чĕртет илемлĕн,
Ешĕллĕх шанман, пур пек тату...

Çулçăсен вут-çулăмлă тăманĕ
Çывхарни те палăрман пекех.
Сывлăш та пехетлĕ... Çу тусанĕ
Пăсăрланмĕ ман умра текех.

Катара тĕтре шума пуçланăн
Кăвакарĕ иртнĕ кун çути —
Ӳкĕнӳ çуралĕ, ӳсĕ манăн...
Йăлл! çутăличчен тӳпе çурти.

Поэтсене юратăр, пикесем,—
Чечен куллăрсемпе хавхалантарăр,
Сив сăмахпа ан хурлантарăр...
Поэтсене юратăр, пикесем!

Поэтсене юратăр, аппасем,—
Вĕсемсĕр ĕненӳ те пулĕ йӳнĕ,
Янрамĕ юрă, çутă ĕмĕт сӳнĕ...
Поэтсене юратăр, аппасем!

Поэтсене юратăр, пикесем,—
Ача чĕри вĕсен — ан суранлатăр,
Суранлатсан, ачашлăхпа сыватăр...
Поэтсене юратăр, пикесем!

Поэтсене юратăр, йăмăксем!—
Вĕсемсĕр çын Илем мĕнне те манĕ,
Чунне çухатĕ, сивĕнĕ, чулланĕ...
Поэтсене юратăр, йăмăксем!

Поэтсене юратăр, пикесем,—
Вĕсен таса ятне ан хăрттăр ирсĕр —
Пĕрне те ан хăварăр кил хӳттисĕр!..
Поэтсене юратăр, пикесем!

Поэтсене юратăр, аннесем,—
Вĕсемсĕр «ют», «тăван» тени пăтранĕ,
Ырри путланĕ, усалли вăранĕ,
Сăпка юррисĕр ӳсĕç пепкесем...
Поэтсене юратăр, аннесем!

* * *

Чипикаран *, Чипикаран,
Йёс шанкравла чунра янран!
Юхать ҫăл шывĕ валакран —
Юхать, юрлать: Чипикаран...

Шап-шурă ҫĕмĕртлĕ тавран
Шăрши йӳҫек — ярать ăсран.
Кам чĕнчĕ: «Саврăм, хăв куран,
Чипикаран, Чипикаран?..»

Хушать саркайăк чăтлăхран:
Ҫун ҫамрăк чух — сӳнен кайран...
Пӳрнӳ — тута ҫинче: — Шăплан:
Илтсен, ятлать Чипикаран...

Кăвайт шарт! турĕ те — вутран
Хĕм сирпĕнчĕ тӳпе таран...
Эс пăшăлтатрăн хăлхаран:
— Курсан, ятлать Чипикаран...

Ман юрату — Чипикаран,
Пит йывăр уйрăлма санран!
Ăсран яран та... уйăран,
Чипикаран, Чипикаран...

---

* Ял ячĕ.

Сăрт тӳпинче — хурăнлăхра,
Шур ырлăхра,
Юрăлăхра —
Çунать кăвайт,
Шарт-шарт! тăвать,
Шарт-шарт! тăвать — хĕм сирпĕнет.
Чун хĕпĕртет,
Тунсăх иртет...

Вут умĕнче — хӳтĕлĕхре,
Чечеклĕхре,
Чеченлĕхре —
Иртсе кайни
Аса килет,
Аса килни — çиçсе илет,
Вута ӳкет —
Çунса вилет...

Умра пике, сап-сар чечек,
Çумри — хури —
Тата чечен.
Кăвайт сӳнет,
Кăвар сӳнет —
Хăшне турат хуçма чĕнес?
Чеченнипе килĕшĕп-и?
...Анчах асра —
Нарспи шăпи.

Эй, лайăх ĕнтрĕк аннă чух
Сăрт тӳпинче пĕччен лармашкăн:
Унта тусанлă тăвăл çук —
Пур ен инçечĕ уçă маншăн.
Тавралăх тĕксĕмленнĕ май
Хăй çутисем хĕмленчĕç ăшшăн —
Епле çăра, епле нумай
Вут çĕр çинче — чĕнеççĕ: ăшăн!
Ан пăшăрхан, ан иккĕлен:
Вучах шевли-и вăл, кăвайт-и —
Сана çунса кĕтет, пĕлен!
Çак шанчăк тунсăхран сыватĕ...
Тек тăлăх мар эс çĕр çинче:
Чĕрт кăвайтна — таçти çын куртăр
Каçпа тарăнланать инçет —
Унта ĕмĕтӳнти тус пур-тăр.

*

Пит лайăх ĕнтрĕк аннă чух
Сăрт тӳпинче пĕччен лармашкăн:
Унта тусанлă тăвăл çук —
Тӳпе инçечĕ уçă маншăн.
Тавралăх тĕттĕмленнĕ май
Хĕмленнĕ çăлтăрсем чĕнӳллĕн —
Епле çăра, епле нумай
Вĕсем мĕнпур енче! Çын, ӳлĕм
Ан пăшăрхан, ан иккĕлен:
Çитейĕн-и унта е çук-и —
Пире кашни кĕтет, пĕлен.
Кашни çĕн ĕмĕт, шанчăк çутĕ...
Çĕр тăлăх мар çут тĕнчере!
Каç систерет: тĕнчемĕр вĕçсĕр.
...Çут çăлтăр айĕнче пире
Инçет курнать — ан сӳнĕр, вĕçĕр!

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен...

*К. Иванов*

Те хăлат, те кăйкăр, те караппăл
Çаврăнать сăрт çийĕн тӳпере —
Ирĕклĕн çунаттине сарать вăл,
Ярăнса сăнать çӳлтен çĕре.
Явнă майăн çаврăм хыççăн çаврăм
Çухалать те пĕлĕт хушшинче,
Шăтарса тухса ăна хастаррăн,
Кăшкăрать — сасси каять инçе!
Йăлт сăнать ун витĕр, çивĕч куçĕ —
Çумăр ăманне те çĕлене...
Акă халь те вăл çӳлтен тем курчĕ —
Çиçĕм евĕр чăмрĕ сăрт енне.
Самантран вăл вирхĕнсе çĕкленчĕ
Çавраçил пекех çӳл тӳпене.
Çирĕп чĕрнинче — хура çĕленччĕ:
Тытрĕ, тен, мана сăхассине...

Çутçанталăкра йăлтах йĕркеллĕ:
Хавшани — хăрать, чĕрри — ӳсет.
Вăйлă çын — ыр кăмăллă-чĕреллĕ,
Тавăрмасть, кӳрентерсен,— тӳсет.
Наркăмăш пек сĕлекеллĕ йĕксĕк —
Сĕмсĕр йăпăлти, суя этем —
Варласан ятне, вăл — харсăр йĕкĕт —
Кăйкăрла сăнать ăна çӳлтен.
Элекçе вăл çиçĕмпе çупмашкăн

Пултарать те — мĕскĕне шеллет.
Йăл кулать мăнкăмăллăн: «Ан ашкăн—
Асапу шăпупала килет!
Тен, çунатлинчен те пулĕ тетĕн
Йăпăлтак çĕлен шăлли — ăман?!
«Çакă çутă тĕнчере,— пĕлетĕн,—
Вăйли çук та этемрен...» Ан ман!

## ЭКСПРОМТ

Лăпкăлăхпа хаярлăх — манăн халăх,
Ĕçченлĕхпе хастарлăх — манăн халăх,
Йăвашлăхпа сăпайлăх—манăн халăх...
Тата нумай чăвашăн ырламалăх
Паха енсем, анчах нимрен ырри —
Мухтавлă халăхăм пурри.

*Силпи çăлкуçĕ, 1973 ç.*

✦

Эп — ăрăмçă. Суйлатăп эп сăмах,
Ăспа чĕре виçи çине хурса.
Кăвар тĕшлисене илеп хамах,
Сиввисене сиретĕп, уйăрса.

Сăмах вăл — çăлтăр пек: çиçет, чĕнет,
Асамлăн илĕртсе çӳлтен-çӳлтен,
Пĕр вĕçĕм ялкăшса, сĕме çĕнет —
Çути вĕçет мала, ĕмĕрсенчен...

Сăмах вăл — çăлтăр... Çуралать, вилет —
Тек илĕртмест, йăпатаймасть çынна,
Сӳнет, шăнать — ăшăтаймасть чуна:
Хăшне халь виркĕн вăхăт çех пĕлет...

Тăван чĕлхе, эс — вĕçĕмсĕр тĕнче:
Мĕн чухлĕ çăлтăр санăн тӳпӳнте!
Сӳнми сăмахлă çăлтăр пуххинче:
Тăван çĕршыв, Анне, Çĕр — чи çӳлте.

Тав ĕмĕре — вăл çутрĕ тӳпемре
Вĕр-çĕнĕ çăлтăр — сивĕнми сăмах.
Ун ăшă çутинче кӳтмест чĕре,
Малтан мала та пăхтарать вăлах.

Мĕнле хăват, мехел те пултарулăх
Упранă-ши çут ăстăну та хавалу?!
«Çырни — ача вăййи...» теме пулнах пуль çăмăлу.
Анчах та... нимĕн калайман эс урăх...
Мĕнле асап, мĕнле тискер трагеди
Çунтарнă-ши ăсна, ăшна, вут чĕрўне?!
Эс, пусмăрти поэт, сутас темен йўне
Тўр сăмахна: чун читлĕхе тўсет-и?!
Сăввусемпе ирĕклĕхе тухасшăн
Пичет станокĕ ăсталанă йывăçран...
Çывхарнă революци! «Ĕççынни, вăран!»
Теме ак эс те çĕнĕ вăй пухасшăн...
Анчах... сўнетĕн! Каторгăсен чирĕн
Элчи — эсрел! — çитнех ăспа чун тĕрмине —
Эс каласа ĕлкĕреймен чĕлхў вĕçĕнчине!..
Мĕнле ăна каламалла-ши пирĕн?

# КĔÇТЕНТТИН ХРЕСЧЕНСЕМПЕ СЫВПУЛЛАШНИ

«Ах, мĕншĕн çырăнмасть-ши сăвă,
Кĕвĕленмест калас тени?!
Чакма... Вут чулĕ... Нӳрелмен-ши ăвă?..
Тен, чĕрĕлмест пĕрре сӳнни...
Сава тытас! Çăка çункавĕ уççăн
Сарма пуçлатăр ырă шăршине:
Ӳпкесĕр юлтăм темшĕн çамрăк пуççăн —
Ӳпкевĕм юхĕ сар турпас çине...
Сап-сар сĕтел, сап-сар пуканăм хатĕр —
Вырнаçтарса лартам кĕрекене:
Чăвашăмсем, чĕнетĕп — кĕрĕр айтăр!—
Еçер поэтăн йӳçĕ сăрине!
Хĕвел пек çаврăна пуçлатăр алтăр
Пăртта çĕкленĕ аслă чул пӳртре.
Кĕслеçĕ-тус, ан пул ман евĕр халсăр —
Хавхалану çуралтăр хĕлĕхре.
Эй, шăпăрçă! Ан пул, тăван, ман евĕр
Эс сывлăшсăр — пуçла чун кĕввине!—
Йĕс хăнкăрма янравĕ, чĕнкĕлтетĕвĕ
Çĕнтертĕр ман салху шухăшсене!
Эй, пуçлăр юрă — çичĕ çаврăм
Янравлăн юхтăр Çичĕ Çăлтăртан!
Чăвашăмсем, сире эп хӳтсĕр саврăм —
Мана ан манăр, эп кунтан кайсан...
Пĕр кĕпепе эп çĕр çине çуралнă —
Пĕр кĕпепе эп кĕрĕп ял çĕрне...

Ман ҫăлтăр сӳнне... Шанчăкăм путланнă...
Эй, парăр-ха мана та алтăрне!
Йӳҫҫи пулаймĕ савăшу эмелĕ —
ВĂЛ халь те ҫунтарать-ха ман ăша!
Куҫа ҫĕр хупласан, асне илкелĕ,
Хурланĕ, тухмасан эп манăҫа...
Янра, кĕсле! Мĕскер суя, мĕн тĕрĕс —
Анлантăм тин ăспа та чĕрепе...
Ташла, Слакпуҫ хресченĕ, тĕррĕс-тĕррĕс —
Юман урай кĕрлетĕр ҫĕрĕпе!
Чул ҫурт шăп ҫурмалла ҫурăлмасассăн —
Пире ҫĕр ҫăтмĕ... Пурăнар, эппин!
Ах, ҫунатне сарас пулсассăн сассăм!
Эх, мĕн тăвайăп, тăвансем, халь тин!..

Хӳхле, сăрнай! Ман куҫăм типĕ —
Сӳнес пекех унти кăвар.
Ак юлашки алтăрăмран астивĕп...
Рехмет! Кăна вара — тĕппи тăвар!»

«Вилетӗп пуль, аннем:
ҫӳл ту ҫине хӑпартрӗҫ...»

*К. Ивановӑн юлашки сӑмахӗсем.*

«Туртатчӗ пит нумай.
Йӳҫҫин курки чӑппиччӗ...
Суха тӑватчӗ хресченпе пӗрле.
Тем пулчӗ ҫамрӑклах — эй, ҫунчӗ питӗ!
Типсе хуралчӗ. Хӑрчӗ йӗкӗтле...»
Итлетӗп ват ҫынна.
Сӑмахӗ унӑн хурлӑ.
Тарӑхтарса ярать поэт шӑпи!
Вӗҫеҫҫӗ тӗксӗм пӗлӗтсем ял урлӑ,
Мӑкӑрланса ҫунать тӳпе хуппи.
Поэт ҫунса вилет —
Юлать, ыр халӑх, саншӑн
Асаплӑн е хаваслӑн тунӑ ӗҫ.
Поэт чӗри, пӗччен ан ҫун эс,
Ан шӑн!
Поэтӑн чунӗ, ҫӑлтӑр витӗр вӗҫ!
«Вилетӗп пуль, аннем:
Ҫӳл ту ҫине хӑпартрӗҫ...» —
Илтетӗп аслати кӗрлевӗнче.
Сӗм пӗлӗт мӗлкисем
Кӑлкан сӑнне хуратрӗҫ.
Тӳпе хуппи мӑкӑрланать, ӗнсе.
Вилес самантӗнче —
Теме манса тем кӗтнӗн —
Мӗскер каласшӑн пулнӑ-ши поэт?
Вӑл — вӑрттӑнлӑх.

Ăна хĕвел тӣн чĕртнĕ
Чĕнӳçĕ-асамат анчах пĕлет!
Чăлл! çутăлчĕ тӳпе,
Кун йăлкăшма пуçларĕ —
Çӳл ту çинче эп куртăм поэта:
Мăнаçлă палăк!.. Тĕлĕнсе куçларăм!
Сисмерĕм те — çухалчĕ вăл таçта...
Çиç, çиçĕм, çиç!
Анчах ытла ан ашкăн:
Поэт мĕлки ан сӳнтĕр тӳпере.
...Çӳл ту çине çӳл палăк хăпартмашкăн
Те чул çитмест, те чун çитмест пире.

Атăл урлă ишсе каçрăм,
Чупрăм сар хĕвел енне,
Макăрса-юрласа ятăм
Илем тупайман енне...

*Слакпуç юрринчен.*

— Мĕн вăл, илем? — эп ыйтрăм пикерен,
Ансассăн шăнкăр-шăнкăр Слак хĕрне.
Вăтанчĕ те йăл кулчĕ вăл хитрен:
— Пĕлтерĕп, иксĕтсен çак çăл шывне...

— Мĕн вăл, илем? — эп ыйтрăм инкерен,
Ăршаллă тырă пуссине тухсан.
— Тӳрех калаймăп,— терĕ.— Ан кӳрен.
Ыйтсам, çак сар тулла вырса пухсан...

— Илем?.. Тупмасăр! Тупрăмăр ара! —
Сăпай та ăслă ватă çын кулли.—
Вăл чи илемлĕ, ирĕк çĕршывра
Ирхи тӳпе çути пек куç тулли...

Тӗрленӗ савӑш куркинче — сӑра.
Вӑл ҫӑлтӑр тӗслӗ, кӑпӑклӑ — йӑваш-и?!
Тавсъе, тӑванӑмсем! Мухтав ырра!
Тавсъе, ытарайми Слакпуҫ чӑвашӗ!
Телей сунса тултарнӑ куркана
Кӑмӑлӑра кура ҫӳле ҫӗклес-и?
Мӗн калӑп ӳпӗнтериччен ӑна?
Кив йӑлана пӑсмасӑр кӗвӗлес-и?
Тав ӑшӑ ҫакӑрпа тӑварӑра,
Ҫӑлкуҫӑра — тӑрришӗн, иксӗлменшӗн!
Тав ешӗл улӑхпа вӑрманӑра!
Ман чӗрене вӗсем халь ҫывӑх темшӗн...
Тӑван чӗлхемӗре упраканскер —
Ӗҫчен, сӑпайлӑ, ӑшӑ чунлӑ халӑх —
Ҫӗн поэтсем ҫурат, пӑхса ӳстер!
Кунта нихҫан ан чактӑр тараватлӑх!
Савӑнтарать, йӗртет кӗвви-юрри,
Вӗри, ҫӑра кунти чӑвашӑн юнӗ...
Пурнатӑр! Ҫакӑ мар-и чи ырри?!
Кунтах пуянланать пуль халӑх чунӗ?
Саватӑр чӑвашла тӑван ҫӗре,
Тӗп тымартан хунавӑр кайнӑ тарӑн —
Кӗрнеклӗ пурнӑҫ йывӑҫҫи, тӗрек,
Вулли-турачӗ ӳснӗ ун патваррӑн!
Кил-ҫуртӑрта ан иксӗлтӗр пехет,
Ҫултан-ҫул ҫӗн чӑваш унта ҫуралтӑр,

Шаккатăр вăхăт хыпарçи — сехет,
Ан чарăнтăр!.. Пехил сире! Вăй патăр!

Тĕрленĕ савăш куркинче — сăра.
Вăл — çăлтăр тĕслĕ, кăпăклă — йăваш-и?!
Тавсъе, тăванăмсем! Мухтав ырра!
Тавсъе, ытарайми Слакпуç чăвашĕ!
Ан сĕврĕлтĕр нихçан та хавалу!
— «Асран кайми...» — хуллен пуçлатăп,— юрлăр!
Ĕмĕрлĕхе ан пултăр уйрăлу!
Тĕл пуличчен! Каятăп — сывă юлăр!



# РАҪҪЕЙ ҪӐЛКУҪӖСЕМ

ПОЭМА

1 Çич çăллă ялăн ăшă çуртĕнче
Çак çĕр çине эп çухăрса çуралнă.
Пăшал кĕрслетнĕ: «Çăлтăр çут, тĕнче!
Йăх тăсакан килет!» — атте çуйлашнă.
Çăл шывĕпе çуса, пиелесе,
Кăвапана çĕлен çиппе пăвтарнă;
Ят панă, çирĕп сывлăх пиллесе,
Чу-чу хуп сăпкана ӳсме вырттарнă...
...Çич çăллă ял — ман савнă Хура Шыв,
Сан ятунта поэзи те, шăпа та.
Аваллăхун сăнарĕ — хура-шур,
Пуласлăхушăн çĕн сăмах шыратăп.
Кашни çăлна эс юратса упран:
Сан кунçулу — çут юхăмсен тăванĕ...
Мĕн сиплĕрех çĕр паракан шывран?! —
Пур чĕрлĕх унсăр çунăхса путланĕ.

2 Çăл куçĕ — пурнăç... Чĕрĕлӳ хевти!
Ун шывĕ — çĕр аннемĕр сĕчĕ, тейĕн:
Пылак та мар, йӳçек те мар тути —
Ĕçсессĕн, вилĕмрен пире чĕртейĕ...
Йăх, халăх, Руç-Раççей, Тăван çĕршыв
Çăлкуçсенчен пуçланнă, ят та илнĕ!
«Типми çăл уç та — хăтлă çурт-йĕр хыв:
Эс çак çĕре илемлетмешкĕн килнĕ»,—
Юрланă чăвашсем тахçан, авал,
Юрлаççĕ халь те, ĕмĕт çутнăн шанăç:
Тымар сĕткенĕнчи, юнри хавал
Çĕр сĕчĕпе хĕвел ăшшисĕр шанĕ...
...Нумай асамлă вăрттăнлăх тĕнчен —
Хăшне уçайĕ ăстăн, хăшĕ чĕмсĕр
Е çул шырать асран, çĕр тĕпĕнчен?..
Эй, тĕпсĕр çăл! Ан иксĕл ĕмĕр-ĕмĕр!

3 Нумай асамлă вăрттăнлăх тĕнчен:
Чи асамли — Раççей... Чунне — ăнкарнă! —
Куç пек упратпăр ют ăншăртĕнчен,
Ун çыруне чĕре çине çех картнă...
Раççей çăлкуçĕсен шывне ĕçсе,
Раççейĕн аслă çĕрĕнчен вăй илнĕ —
Чунпа та, чĕлхепе те кĕлмĕçе
Тухмастпăр. Унпала хура кун килмĕ!
...Чăваш ятпа чĕнет тус-йыш мана,
Тăван тесе чыслать йышра чух ыррăн:
Ыр кăмăлли хăйне хумасть мăнна —
Туссемшĕн çĕр çинче çитмест-и ырăн?!
Тăван аннемĕн имлĕ сĕчĕпе
Тăван çĕршыв çăлкуçĕн тутлă шывĕ
Вăй панăран эп халăх чĕлхипе
Çыратăп, калаçатăп, чун та сывă!

4 Пурнас килни ҫӑлкуҫ патне чӗнет
Ҫынна ҫех мар — йӑха та, халӑха та:
Мӗльюн шарлак юрри пек илтӗнет
Этем кунҫулӗн эпосӗ — чухлатӑп!
Мӗнле чӗнӳ хӑватлӑн та вӗрин
Кунта хӑпса килме пиреваскатнӑ
Таҫтан тахҫан авал? Ӑна халь тин,
Кӑшт тавҫӑрсан та, сӑввӑмра хускатмӑп...
Сӑрт-ту, вӑрман, вар ҫӑлӗсем умне
Ӗмӗрлӗхе тымар яма шут тытнӑ
Чӑваш кӑкланӑ тунката — ҫуртне
Ҫӗкленӗ нимепе: пулман ун ылтӑн...
Пин ҫул упранӑ йӑлине, чунне,
Тӑван чӗлхипеле юррисене те!
Ҫак ҫӑлсенчен пухман-ши ҫӗр вӑйне
Ман ентешсем?! — тесе эп тӗлӗнетӗп.

5 Чăваш кунçулĕн эпосĕ... Ăна
Тĕмеллĕ çĕр историнче вулатăп.
Чул çырусем хăварнă самана,
Сан шăпăру хўхлет! Эппин, пулам тăп!
Çўревçĕ халăхсен çул-йĕрĕпе
Аваллăх тĕтринчен çутта тухап та
Çĕр пин юмах пытарнă тĕрĕпе
Паллашнă май кив çырусем тупатăп...
Илем шыракансен хастар йăхне
Эс, Мăн Тўремлĕх, ĕмĕре кил панă —
Шăп çавăнпа ыр чунлă халăх манăн:
Çăлу сан уçнă унăн кăмăлне.
...Хăш чух тăван çĕрпе, тăван çăлпа
Чăвашсене сывпуллашма тўр килнĕ,
Вара тĕнккенĕ хурлăхлă çулпа —
Е тупнă çĕнĕ çăлкуçсем, е... вилнĕ.

6 Шăварнă евĕр выльăх кĕтĕвне,
Шыва хуса кĕртсе намăслантарнă —
Вĕрентнĕ миççенер * суя тĕне
Чăвашсене... Пăлхавăр хыççăн тарнă
Вĕсем Çĕн çĕр уçма — тухăçалла...
Шур Атăллă, хура вăрманлă-варлă
Тăван тавралăхне йĕрсе хăварнă
Ман асаттен аслашшĕ те çапла...
Вут-тунсăх тивнĕ сăварсен юнне
Çăратнăран-ши çĕн çăлсен сĕтекĕ,
Хал хушнă пек ик халăх, саврăм эпĕ
Хĕрӳллĕн Раççее, тăван ене.
Раççей... Ытарайми хитре тĕнче —
Кил-çуртсăр юлнă чăвашсен Çĕн çĕрĕ...
Вăл сиплĕх панăран ман йăхăм чĕрĕ:
Тымарĕ унăн — кив ĕмĕрсенче.

---

* миссионер.

7 Асап, хӗн-хур, пушар ҫине пушар
Е типӗ ҫул, е вӑрҫӑ хыҫҫӑн вӑрҫӑ...
«Тип шар ҫынпа хӑҫан та юнашар,—
Каланӑ пирӗнте,— ҫапла пуль вӑрчӗ *...»
Пӳлмесенче ҫил шӑхӑрнӑ чухне,
Юлсан та картишре пӗр выльӑх — анчӑк,
Ман ентешсем йӳҫӗхтермен чунне —
Ун тӳпинче хӗмленнӗ ҫӑлтӑр-шанчӑк...
Хӗмленнӗ! Тӑвӑлта та вӑл сӳнмен!
Ҫӗр ҫыннисем ялан ырра ӗненнӗ!
Час-час вӗсен ӑсне хакла пӗлмен —
Вӑр-варрӑн ҫӗрӗҫ тытӑмне «ҫӗнетнӗ»...
Пӗлетӗр, пулчӗ тӗрлӗ ҫухату,
Асаплӑ йӑнӑшсем, тӑшман кеварӗ...
Тӑван ҫӗре упрарӗ юрату:
Вӑл — вилӗмсӗр! Вӑл — ҫӗр ҫыннин хавалӗ.

* вӑхӑчӗ (диал.)

8 ...Эс, пурнăç, тĕлĕнтермĕш иккеннĕ
Хавассăн тавçăрса, эпир яр-уççăн
Пăхса тĕпчетпĕр вĕççĕр тĕнчене:
Этем, ыр çутçанталăк — куçа-куçăн.
Пулать е иленӳ, е хирĕçӳ,
Е илемпе киленменни сив чунлăн,
Е çуралать çӳçенчĕк кĕвĕçӳ,
Тăрна карти вĕçсе иртсен салхуллăн...
...Пуçа тайса сире халь тав тăвам,
Анне, Раççей, çуралнă ял çăлкуçĕ:
Ырра туйма вĕрентнĕшĕн калам
Сăвап сăмахĕ — чун тӳпи ман уçă.
Килсе çитсе тĕтреллĕ кунсенче,
Тăван çăлкуçăн юррине итлетĕп.
Каç сывлăм çутнă май куç тӳпинче,
Тăван анне, сана аса илетĕп.

9 Пурнас килни ҫӑлкуҫ патне чӗнет,—
Ӑш хыпнӑ чух тумлам туйнать тивлетӗн!—
Унта ҫитни ҫех вилӗме ҫӗнет —
Ҫак чӑнлӑха эп ачаран пӗлетӗп.
...Ҫывраттӑмччӗ хирте, хуп кӳмере.
Сасартӑк — хӑлхара хӑрушӑ сасӑ!
— Анне, мӗн пулчӗ?!
— Ҫурӑлать чӗре!..
Типсе вилетӗп... Шы-ыв! Кайса ӑссассӑм?!
Ак, тин утма вӗреннӗ пӳрнеске,
Эп хӑмӑл ҫийӗн лакӑм кустаратӑп.
Сӑрт ҫӳллӗш туйӑнать пур тӗмеске —
Тӗртеп-тӗртеп, чӗркуҫленсе ларатӑп...
Ҫапах — илсе ҫитертӗм лакӑма
Ҫӗмел умне! Унта — чим, куҫ ан йӑмӑх!—
Унта — пепке пуҫланӑ макӑрма:
Анне ҫуратнӑ пукане пек йӑмӑк!..

Ӑшталанса, асаплӑн, антӑхса
Анне темччен ҫӑл шывӗпе имленчӗ:
Йӑл кулчӗ, айӑплӑн куҫран пӑхса,
Тав турӗ... Эп ун пек сӑмах илтменччӗ!
Ҫӗр панӑ сиплӗ шыв асамлӑхне,
Вӑл вилӗмрен чӗртме пултарнине те
Ун хыҫҫӑн эпӗ ачалла ӗнентӗм,
Илтсессӗн ӑслӑ халӑх юмахне...
Ҫапах ун чух пӗлмен эп ун хакне,
Пӗлмен салтак-аттеҫӗм вилӗм умӗн
Тӑван амӑшӗнчен мӗн ыйтнине —
Анчах ҫӑл имӗ мар, юн юхнӑ ҫумӗн...
...Тӑван ҫӗршыв ҫӑлкуҫӗсем, сире
Пурӑннӑҫем ӑнланарах юратӑп!
Сиртен таси, хакли ҫук тӗнчере!
Ҫӗре эсир пуррищӗн тав тӑватӑп.

11 Çӗр ырлăхне кӗтетӗп хресченле,
Çӗр хурлăхне курсассăн — тăвăнатăп!
Тин пиçнӗ çăкăр техӗмӗпеле
Кил-çуртăм ăшăнсассăн савăнатăп.
Хӗвел çутиллӗ çăкăр чӗллинче —
Анне аллин ăшши, кунçул хăвачӗ!
Вăл вăй парсассăн, курăнать инçе...
Çунат сарать хавхалану хăлачӗ.
...Умра — татах тăван çăл! Пӗшкӗнсе
Ун кăкăрне ӗмет хир асамачӗ.
Çак тӗлӗнтермӗш витӗр эп тухманччӗ,
Халь тухрăм та — çамрăкланать тӗнче.
Çамрăкланатăп хам та! — çивӗч куçăм
Курать кашни самантăн илемне.
Шевлеллӗ уçăм тӗслӗ ешӗл шуçăм
Сапать хӗлхемлӗ çутă ял енне.

12 Куç умĕнче — кунçулăм çуркунни!
Çĕн курăк çиййĕпе çарран ачалăх
Тапса сикет! Ак — çуйхашни, кулни!
Лĕп çумăр чӳхенни! Хĕрӳ хаваслăх!
Ырра иккĕленӳсĕр ĕненни,
Кӳренĕвĕн вĕри, таса куççулĕ...
Пин саслă сĕрлевре — анне чĕнни:
Мĕн хумхантарĕ чĕрене ун чухлĕ!
Чĕррик-чĕррик! кив алăк уçăлать.
Пуш витресем чăнкăртатса илеççĕ.
Автан сас панă май чăн хуçалла
Чăхсем те кĕвĕçӳллĕн кăтиклеççĕ,
Анне умне чупса-вĕçсе пырса.
Ак йыт çури вĕрсе илет хистевлĕ...
Мĕн чухлĕ курăну çутать аса!..
Анчах ак çакă пуринчен илемлĕ.

13 ...Кӗпин ҫиел аркийӗнчен тытса,
Аннепеле ҫырма хӗрне каятӑп,
Шарлак шӑнкӑрмине чӑп чуптуса —
Ӗҫетӗп сиплӗх шывӗ! Улӑп — ятӑм!
Сиксе тӑрса юман пура хӗрне,
Ҫӗртен ҫӑл тапнине сӑнатӑп тимлӗн,
Куратӑп та ун куҫӗ тӗпсӗрне —
Аяккалла таратӑп илӗм-тилӗм!
Хӑваласа ҫитетӗп аннене —
Пулӑшаяс пек хӑлӑпран тытатӑп.
Хӗвел шевли ӳкет те куҫ енне
Чӑп тулнӑ витререн — хавасланатӑп!
...Ҫак тӑван ял ҫӑлкуҫӗн шывӗнчен
Тутли нимскер пулман ачаш ачашӑн:
Вӑй илнӗ эп ун сиплӗ тумлинчен —
Тата мӗн кирлӗ ӳсекен калчашӑн!

14 Çурхи шывсем кĕрле-кĕрле иртсен,
Çӳреттĕмĕр сап-сарă юшкăн çийĕн —
Сип-симĕс чуллă, хăйăрлă кĕртсем
Шыв чакнăçем тухатчĕç сийĕн-сийĕн.
Шăрăхлатсан — кĕреттĕмĕр шыва.
Типсе çитсен, чаваттăмăр çăл куçĕ —
Хупахсенчен курка тăва-тăва
Ĕçеттĕмĕр... Миçе курка? Çук шучĕ!
Чупаттăмăр вĕлтрен лупашкине —
Хăва касса тăваттăмăр та ухă
Пуçлаттăмăр ачалăх вăййине...
Ларма-тăма пĕлмен-çке, пулнă шухă!
Ăшша пиçсен — янра валак патне:
Кĕпçепеле ĕçсен шыв питĕ тутлă,—
Шарлакĕ ун лаштра йăмра айне
Тухатчĕ юрласа, хĕлхемлĕ-вутлă.

Ялйышваскатчĕ ир-ирех ĕçĕ.
Эп кунĕ-кунĕпе килте хуçаччĕ.
Хал çитнĕ чухлĕ тунă тивĕçе —
Анне çителĕклех ĕç-пуç хушатчĕ.
Шуратнă çĕрулми, уçланă çу,
Хăяр-кишĕрсене шăвар — йăл илччĕр.
Чĕпсем кĕтмесĕрех иртет-и çу —
Хĕрен вĕçсе килсех тăратчĕ, пилсĕр!
Кăнтăрлапа, çиес килсе çитсен,
Кăвар, тăвар илсе çыра анаттăм —
Çĕн çĕрулми тăм чўлмекре пиçсен,
Çĕн хăярпа пĕрле шеп сăйланаттăм.
Унтан — вăййа! Унтан — шыва кĕме!
Унтан — чул айĕнчен тытаттăм пулă.
Унтан — хире, майра хуххи çиме...
Сисместĕн те — хĕвел каçать сăрт урлă.

16 Çырла пиçсе çитет те — вăрмана!
Юратнă вырăн — Киремет çаранĕ:
Унти çырла чи пыллăскер — ăна
Шур хурăнлăх сĕтекĕ тутлăх панă.
Унта — тип варлă тĕттĕм чăтлăхра —
Хăрушă Ерхентей хăй хуçаланнă,
Йăх пуçĕсем авал хăра-хăра,
Парне пара-пара ăна пуççапнă.
Чăнах та шиклĕ вырăн!.. Сых ятне
Çырла кăштах тăкатпăр — чӳк тăватпăр:
Шанса пĕтер-ха чăтлăх усалне! —
Каç сĕмĕ аниччен çех вăл хăватсăр...
...Çăл пурччĕ Киремет лупашкинче —
Чул айĕнчен тан тапнă пек тухатчĕ,
Ташлатчĕ ĕнчĕ ун шаркаминче,
Сип-симĕс курăк юхăмне хуплатчĕ.

17 Инçеччĕ вăл ялтан — те çаванпа
Кирек хăçан та шывĕ чун уççиччĕ,—
Ялан пире кĕтетчĕ саванса
Тăп-тăрăскер — пурне те симĕ çитĕ!
Ĕççи шăрăхĕнче ӳт пăшăхсан,
Типсе çунсан, мĕскер ăша кантарĕ? —
Рехетленет ĕçчен, кăштах чаксан —
Самантлăха! — вĕри, тăварлă тарĕ.
Юман пичкесенчен е лакăмран
Анах ĕçет хресчен, çулать те утă,
Унпах тăвать йӳç турăхран уйран,
Хăш чух унпа анчах вăл тутă...
...Хĕлле те пăрланмастчĕ çăл таппи,
Ун сукмакне татмастчĕ çил-тăман та.
Ун пек туйнатчĕ ял çыннин шăпи:
Йăлт — пурнăçшăн, хăй... типшĕнет пулсан та...

18 Пиçетчĕ улăхри чăтлăхсенче
Хура çырла е хурлăхан, е çĕмĕрт.
Вăй илнĕн çутçанталăк хӳттинче,
Çĕклетчĕ кăмăла çӳçенчĕк ĕмĕт.
Вĕркешлĕ туйăм... Тĕлĕнӳ... Илем
Куç тӳпине çутатчĕ илĕртӳллĕн.
Хӳтевсĕр чĕрлĕх ерипен, куллен
Вăрттăнлăхне уçатчĕ килĕшӳллĕн...
Пĕр тĕлĕнтермĕш юмахла çăлкуç
Пĕррехинче çаранлăхра эп тупрăм:
Чечек тĕмне асăрхануллăн уç —
Тухать вăл куç умне туллин, сатуррăн!
Хĕр куçĕ евĕр тĕпсĕр те таса,
Шалтан тапса тăрать пек симĕс çутă...
Пĕрремĕш хут çех пăхрăм тутанса —
Пĕрремĕш юрату хĕмленнĕн çунтăм...

19 Пӗрремӗш юрату... Вӑл яшлӑхра
Ҫав ҫӑл шевли пекех ҫуталчӗ пулӗ.
Епле тасаччӗ вӑл!.. Ак асӑмра
Ун тӑрӑ шаркамин сасси, куҫҫулӗ...
Епле хитреччӗ, ешӗлччӗ тӗнче!
Вӗҫетчӗ лӗпӗш пыллӑ курӑк ҫийӗн —
Ҫук, лӗпӗш мар, пике куҫ умӗнче —
Чуна вӑратнӑ ӗмӗт илемпийӗ!
Тутапала тута сӗртӗннипех
Пушар тухассине пӗлмен-туйманччӗ...
Ах, мӗншӗн, мӗншӗн кӑшт ҫил вӗрнипех
Вӑл сӳнчӗ?! Иртрӗ савӑшу саманчӗ...
...Ҫӑл шарками типмен! Эппин, кунта
Чунне вӑратӗ урӑх, ҫӗнӗ ӳсӗм.
Ҫут кӗмӗл юхтарать хупах курка...
Тӑван ҫӑлкуҫӑм, тав асаилӳшӗн!

20 Ял витĕр тухакан çул хĕрринче
Чи пысăк та чи тарăн çăл вĕретчĕ.
Ларатчĕ алтăр ун пури çинче —
Чакман унта çÿревçĕсен ĕречĕ.
Йăмра сулхăнĕнче ларса кансан,
Чун уççине ÿпĕнтерсессĕн алтăр,
Çул тăрăх малалла утма аван —
Ĕшеннĕ вата çын та пулмĕ халсăр.
...Пирте тăвансене пит тарават:
Е вырăс, е тутар, е мăкшă кÿршĕ —
Чăваш мĕн пуррипе хăна тăвать,
Çĕр каçаканшăн уçă ăшă пÿрчĕ.
Раççей чăвашĕсем тесе пире
Чĕнеççĕ тăвансем — чысне кура-ши
Ыр кăмăллă эпир, кĕрекере
Ÿпкелемен пире хăна тавраш...

21 Çерçикасси, тукас, мăн вăтакас,
Хăваллă анаткас — саркайăк енĕ —
Кашни тăван çăлкуçĕпе хавас,
Кашни ăна куç пек сыхлать: иленнĕ!
Кашни çăлкуçăн шывĕ хăй тути,
Кĕвви-юррийĕ те хăйле янравлă,
Хăй тĕслĕ куçĕ, шăнкăрмин çути,
Кунçулĕ çех е хурлă, е — шăнкравлă...
Мĕн чухлĕ ял-ши аслă Раççейре?
Миçе çăл куçĕ-ши тăван Раççейĕн?
Ĕçчен çĕр çыннисем, мухтав сире!—
Упратăр вĕсене савса, тирпейлĕн.
Мĕн пур хакли çĕр паракан шывран?! —
Çакна эпир час-час туйма пĕлместпĕр...
Тăван çĕр çăлĕ типмесен ыран,
Эпир пурнатпăр çĕр çинче, вилместпĕр.

22 ...Тусанлă çавраçил уй-хирсемпе
Вĕркенĕн, хресченле пурна пĕлмерĕм —
Ĕмĕтĕмпе ир çăлтăрне йĕрлерĕм
Ача чухнех шăпа пехилĕпе.
Ял акана тухать — эп акара,
Хирте ĕççи-тĕк — эп те вырмараччĕ,
Чун çех шаланкă евĕр макăратчĕ
Ăршаллă ĕмĕт тĕлкĕшен умра...
Çынсем апат çыртса канма выртсан,
Юратнă çăл умне анаттăм вăрттăн,
Пĕр-икĕ çаврăм сăвă хывăнсан —
Çунатланаттăм! Эй, салхулăх, вăркăн!
Тавралăх та курнатчĕ ырлăхла,
Иртетчĕ выçăхни те, ĕшенни те.
Пурнас килетчĕ темшĕн урăхла —
Телейлĕрех! Нуши хĕсетчĕ питĕ...

23 Епле хăрушă çав сăмах: нуша!
Епле янрать илемсĕррĕн те хӳтсĕр!
Хыпса илет вăл шухăша, ăша,
Такам асăрхаттарнăн: «Чăтăр! Тӳсĕр!»
Вăлах сасартăк чан çапать: «Пушар!»
Вăлах хыпар çитерчĕ: «Вăрçă!.. Итлĕр —
Тăван çĕршыв вутра!» «Тăр — пулăшар!—
Вăл чĕнчĕ халăха.—Тĕп пултăр Гитлер!..»
...Сӳнтерчĕ вăрçă яшлăх шуçăмне —
Хура пĕлĕтсемпе ăна хупларĕ...
Мĕн чухлĕ хурлăх тухрĕ куç умне!
Мĕн чухлĕ тăлăх кил ăшши тупмарĕ...
Мĕн чул шăпа арканчĕ çĕр çинче!
Мĕн чухлĕ çăл юнпа варланчĕ, типрĕ!..
Нуша!.. Вăл пур-тăк — хурлăхлă тĕнче,
Хĕвелсĕр те салхуллă пурнăç ирĕ.

24 Шап-шурӑ хут ҫинче — хура хыпар!..
Шап-шурӑ юр — хура курак тӑманӗ.
Тӗп тунӑ аттене хура тӑшманӗ!..
Хӑрушӑ хура-шур... Эй, ҫӑл, вӑй пар!
Хура куҫҫуль... Ҫӑл шывӗ те хура...
Мӗскершӗн вӑл ӗҫме те ҫук тӑварлӑ?
...Сӑнатӑп аннене хӑра-хӑра:
Епле йӗрет!! Епле пулас ман варлӑ?
Мӗн каласа ӑна кӑшт йӑпатас?!
Мӗнле сӑмах ун кӑмӑлне кӑшт уҫӗ?
Хӑҫан эс типӗн-ши, куҫҫуль ҫӑлкуҫӗ?!
Хӳхлев сасси... Епле ӑна чӑтас?
Епле хӑрушӑ эс, хура нуша!
Епле янран илемсӗррӗн те хӳтсӗр!
Хыпса илетӗн шухӑша, ӑша,
Чӗнсе асӑрхаттарнӑн: «Чӑтӑр! Тӳсӗр!..»

Тӳсмен-и?! Тӳснӗ Раҫҫейпе пӗрле
Тертне те, выҫлӑхне те, нушине те —
Ирӗклӗхе вӑй панӑ хресченле!..
Ҫӗр ҫыннисем, сиртен эп тӗлӗнетӗп!
Анчах эп тӗлӗнни мӗне сире,
Ӳпкевсӗр, хак ыйтмасӑр — сирӗн евӗр!—
Савма вӗренмесен тӑван ҫӗре:
Ҫӗртен писекенсен шӑпи хӗрхевсӗр...
Пулсассӑн та ака-суха лаши,
Эсир, тӑванӑмсем, иккӗленмесӗр
Ӗненнӗ: ҫитӗ ҫӗнтерӳ ӑшши!
Вӗҫленмӗ юнлӑ тӑвӑл та хӗвелсӗр...
Ҫапах чӗрре кӗреттӗм хӑш чухне:
Мӗскершӗн ҫав тери эсир хӑюсӑр?!
...Туйман ҫав тӳсӗмлӗх паттӑрлӑхне
Эп, ҫамрӑкскер: мӗскер вӑл, пурнӑҫ, унсӑр!..

26 ...Çурхи вĕçев пуçланнăччĕ — салхуллăн
Вĕçсе иртетчĕ кайăк хур карти.
Çӳл тӳпере чĕнӳ янратчĕ хурлăн
Хĕн çул-йĕрте çухалнăран малти.
Арпашăннăччĕ çунатсен ĕречĕ...
«Кайри — мала! Малти — кая!» — тесе,
Пулăшаяс пек, аннесем сĕрлетчĕç,
Чечеклĕ вĕлтĕр тутăрпа сĕлтсе...
...Ертӳçĕ пуç хурсан, чи халсăр кайăк
Тухаймĕ унăн чыслă вырăнне.
Вăхăтлăха карта саланĕ кайĕ,
Вăхăтлăха çухатĕ хăй çулне...
Анчах та, тивĕçне туйса, хăюллăн
Янравлă сасă парĕ те тепри —
Мала тухса, чĕнӳллĕ юрă юрлĕ!
Вăл пулĕ çĕнĕ вĕçевре тĕпри...

27 ...Епле саваттăм эп çĕр çыннине!
Хăш чух шеллеттĕм пуль — тен, кăшт айваннăн...
Юратнăшăн поэзи çăлкуçне
Каçар мана, ытарайми тăванăм.
Валак шарлакĕ, эсĕ те каçар
Эп сан умна сывпуллашма килнишĕн.
...Хыçра — тăла хутаç. Эппин, каяр!
Яш çӳревçе, Раççей çул-йĕрĕ, йышăн.
Автан авăттарса, тăван ялпа
Эй уйрăлтăм... Умра ак — Мăн Тӳремлĕх.
Вăл — Руç-Раççей! Сив сывлăмлă çулпа
Тĕнккерĕм çаруран — салхун, ӳркевлĕн...
— Эсир, тăван кĕтес çăлкуçĕсем,
Мана ан манăр, ывăнмасăр кĕтĕр.
Эп таврăнăп кунта, мехел çитсен...
Хăçан? Ăна пĕлсех каяймăн кĕçĕр...

28 Раççей çул-йĕрĕ вĕççĕр, çĕрĕ — аслă:
Сăрт, юханшыв, вăрман, ял хыççăн ял...
Килентерет ун сăнĕнчи мăнаçлăх!
Кив чиркӳсен тăрри çиçет йăл-ял
Унта-кунта шĕвек ылтăнĕпе —
Çав курăну салхуллă та илемлĕ.
Анчах Раççей хитре килĕшӳпе —
Çĕнни киввипеле пĕрлешнĕ меллĕн.
Пăхатăп та — таçта та çĕнелӳ!
Ку — чи хакли: эппин, хĕрӳлĕх сывă!
Раççей, пуртан кив кĕркуннӳ, хĕлӳ —
Кĕрлет çĕн çуркуннен кĕрлевлĕ шывĕ...
...Епле аван хир-вăрманпа утма!
Чĕр курăк, анăс, матрӳшке те эрĕм
Ыр шăрăшпа чĕнсе тухать ума,
Е юханшыв çиçсе илет сенкеррĕн.

29 Йӑви арканнӑ кӑйкӑр чӗппилле
Ялтан тухса кайсассӑн ҫамрӑк пуҫҫӑн,
Ҫӗршер ҫӑл юррине итле-итле
Ҫакна эп ӑнланма пуҫларӑм уҫҫӑн:
Такамшӑн та ҫӑл куҫӗ тарават —
Хиртс-и, вӑрманта-и, сӑрт ҫинче-и—
Пире вӑл вӑй парать, хӑна тӑвать,—
Таса сӗтекӗнче ҫӗр чунӗ, тейӗн...
Инкек кӳмест хӑйне упракана —
Типмесӗр, вӑйлӑн вӑл палкать пӗр вӗҫӗм,
Ҫын ун тӗлне манса кайсан кӑна
Тарать ҫӗр хӳттине... Шывне кам ӗҫӗ?!
Пин-пин ҫӑл куҫӗ... Чи хакли вара
Пӗртен-пӗрри — ҫӗр кӑвапин сӗтекӗ...
Вӑл пурнӑҫ тӗввипе тӗп тымара
Чӗртет, вӑлах — Тӑван ҫӗршыв кӗрнекӗ.

30 ...Ак эп тăратăп Чĕмпĕр сăртĕнче.
Ун хĕррипе юхать мăнаçлă Атăл.
Кунтан мана курнать мĕнпур тĕнче,
Кунта ӳсет ăстăнăмри хăватăм.
Тухатăп ăшă сывлăшлă çуртран,
Кив сукмакпа сăрт хысине çитетĕп —
Хĕвел çутатнă тăрă çăлкуçран
Раççейĕн симлĕ сĕтекне ĕçетĕп.
Çĕр сĕтĕнчи вăя ӳте, юна
Туртса илейнĕ май çакна сăнатăп:
Курна пуçлать вĕр-çĕнĕлле мана
Кунтан тăван Раççей те, самана та.
Тутантăм Ленин ĕçнĕ çăлкуçран! —
Тен, сиплĕх шывĕ сыпрăм?! — чĕрĕлетĕп..
Çут чăнлăх хăватне çак самантран
Туятăп ăсăмпа та, чĕремпе те.

31 Çавра курка — яка каска çинчĕ.
Ăсатăп чăп тулли — такам, тен, килĕ...
Анчах иртсе кайни — инçе-инçе,
Çаврайĕ-ши ăна халь кăмăл пилĕ?
Сасартăк вĕлтĕрт кусрĕ вĕтĕ чул
Сукмак енчен, çӳлтен,—чĕрем кăрт! сикрĕ:
Такам анать пулас?! Çук! Пушă çул!
Ку — Атăл çилĕ. Шăплăха вăл сирĕ...
Иртни — инçе... Çапах та асăма
Килет хастар çынсен мухтавлă йышĕ,
Чи хаклă, çутă сăн тухать ума...
Чĕремçĕм, вĕсене пурне те йышăн!
Çав аслă ятсене эп манăп-и?!
Вĕсемсĕр маншăн ватă Чĕмпĕр — чĕмсĕр...
Чăваш чĕлхин, чăваш çыннин шăпи
Мĕнле, мĕнле пулатчĕ-ши вĕсемсĕр?!.

32 ...Сăпка сулхăнĕнче — сăмахсăр сас,
Çăлкуç тĕкĕрĕнче — ик çын пит-куçĕ:
Асли те, кĕçĕнни те пит хавас —
Чăвашăн та çырулăхĕ ак уçă!
ВĔРЕНТЕКЕН маттур пĕлӳçĕпе
Калаçнă май сăпайлăн, шăкăл-шăкăл
Шарлак юрри чĕм кĕртнĕ сассемпе
Çĕн кĕвĕсем хывать сăрнай та шăпăр.
Вăй илнĕрен çак чĕрĕ çăлкуçран
Ман халăхăн поэзийĕ кун курчĕ.
Вĕрет вĕсен таппи пĕр пулнăран
Чăваш искусствин иксĕлми çăлкуçĕ!
...Пĕлӳçĕ Йăван Яковлевича
Ăна тупма, уçма камсем пилленĕ?!
Çав сарă сăпкари хĕвел-ача —
Ӳссе, кĕрешӳре хĕрсессĕн — пулнă Ленин.

33 Темччен эп тăтăм, шухăша çутса:
Тен, ку — Тăван çĕршывăн тĕп çăлкуçĕ? —
Кунтан ĕçсе ӳсмен-и ун çулпуçĕ?
Епле çăла упраççĕ юратса.
Шалтан — çĕр чĕринчен — тапса тухса,
Ун шарками пулать те Атăл шывĕ
Тĕнче океанне кĕрет юхса
Çын уçнă çул-йĕрпе... Тата çул хывĕ!..
Эппин, таппи ун типмĕ ĕмĕрне,
Эппин, таса сĕтекĕ пулĕ симлĕ,
Вăл чĕрлĕх вăйĕ парĕ çынсене,
Çула тухнисене хăюлăх пиллĕ!
Çĕн пурнăç вăй-хăват илет унран,
Ачашшăн кăкăр ĕмĕртнĕн Çĕр-амăш!
Руç пуçлансассăн урăх çăлкуçран,
Совет çĕршывĕн, тен, кунта пуçламăш...

34 ...Хавалӑмпа эп халь те ҫӗр ҫынни.
Янравлӑ утӑ уйӑхӗ пуҫланнӑ,
Яш-кӗрӗме ял улӑхӗ пуҫтарнӑ...
Йӗркен тӑрса нӳр курӑка ҫулни —
Чӗнӳллӗ тунсӑх, тутлӑ ырлӑх маншӑн,
Вашт сулӑнмалӑх пултӑр ҫех ҫаран!
Валем ҫӗкле, капан хыв — тӑрламашкӑн
Ҫӗн шӑчӑ пур, вӑл ҫивӗч сӑнӑран...
Телейлӗ эпӗ, сӑввӑмра пулсассӑн
Тин ҫулнӑ курӑк-чечексен шӑрши,
Вӗсен сиплӗхӗнчен илет те сассӑм
Тасалӑх — ӳсӗнет чӗре ӑшши.
«Уйчӳк ҫумӑрӗнче» лӳшкеннӗ евӗр,
Ӗҫ тарӗпе шӳсен ҫири кӗпе,
Мана тӑван ҫӗр хуҫинчен ют темӗр —
Унпа пӗрле эп кӳлӗннӗ тӗпе...

Пĕр ĕмĕтпе унпа пĕрле сăнатпăр
Раççей тӳпин чи çутă çăлтăрне.
Çак пĕрлĕхе упра пĕлмен — сăвапсăр:
Ахаль çĕртет вăл халăх çăкăрне.
Хуйха-суйха пĕрле тӳссе ирттернĕ —
Пĕрлех кĕтетпĕр савăк саманта.
Вăл кĕрпеле уй-хир ĕçне пĕтернĕ —
Поэма хатĕр акă манăн та.
Нимрен те пархатарлă тус-йыш ĕçĕ —
Мĕнле сăмах тупса ырла пĕлем?!
Юнташлă пулăр, çăкăрпа поэзи,
Çĕрпе тымарлă чăнлăхпа илем!
Хавхалантартăр çăлтăрлă пуласлăх,
Ан ютшăнтартăр чĕрене уй-хир!
Эй, çĕр çынни, çул пирĕн пултăр аслă,
Таса тӳпеллĕ пултăр ĕçлĕ ир!

36 Çитменлĕх, çӳп пек, хăй кĕрет куçа,
Ырра курма куçпа пĕрле чун кирлĕ.
Чун тӳрĕлĕхĕ — халăхпа çĕр пилĕ —
Вĕрентнĕ уйăрма тăмран хурçа...
Сăпайлăн тав тăватăп чĕрене
Киревсĕр кĕвĕçменшĕн, вĕчĕхменшĕн.
Хаваслăн ырă тетĕп ыррине,
Илем ан пултăр, тетĕп, вĕтĕ мелшĕн...
Ах, çăмăл каланмасть çав тӳр сăмах —
Ун çăлтăрне çутма хăюлăх кирлĕ:
Хăш чух каçпа йăпатакан юмах
Ирпе янрать трагеди евĕр вирлĕ...
Ан ултала! — хушатăп чĕрене.—
Пулман, ан пул нихçан та икĕпитлĕ.
Суя йĕрке ан çыр — çын йĕрĕнет,
Хĕрӳллĕ сăмаха çех халăх итлĕ.

37 Черченкĕ пулнă туйăм — юрату.
Шырав асаплăхне тӳссе ирттертĕм —
Ăшра çуралчĕ килĕшӳ, тату:
Тек улталанмăп, йӳтетсен те тертĕм.
Çак чăнлăх пиçĕхсе-ӳссе вăрах
Ăса, чуна кĕрсе вырнаçрĕ çирĕп:
Юратăвăм мĕн чухлĕ вăйлăрах —
Таса тӳпи ун çӳллĕ, хăй те ирĕк.
Кама куç хупиччен тăван тесси,
Мĕне юратасси те акă паллă,
Çаплах — кама, мĕне хӳтĕлесси:
Ют тапăнма хăйсан, чĕтремĕ алă.
Савма пĕлсен — тупатăн тус-тăван,
Савма пĕлсессĕн — тавăру те тӳрĕ!
...Çăл умĕнче çакна туян аван:
Мана çак туйăм вăйĕ сăвăç турĕ,

38 Çапах тем юлчĕ, юлчĕ асăмра:
Хресчен ĕçне, ăсне хакламанни те,
Вăл çăкăра хуласене кайни те,
Хăй ÿстерет пулин те тĕш-тырра...
...Шăнкăртатать çăл куçĕ ман умра.
Ку ял кăкне хăртман — тÿссе ирттернĕ
Кунçулĕнчи мĕнпур хĕн-йывăра —
Епле вăл çĕнелет! Епле типтерлĕ!
Ак пуç таятăп ун хуçисене:
Вĕсен хавалĕ — çĕн Раççей илемĕ!
Вĕсем пур чух ир çăлтăрĕ сÿнмест,
Куçа çутать хавхалану хĕлхемĕ.
Малтан мала утас килет çÿревçĕн,
Чĕре юрлать, çак илеме курсан,—
Çĕнелнĕ пурнăç чăнлăхĕ поэзин
Чи аслă, çутă чăнлăхĕ пулсан.

39 Раççей çул-йĕрĕ — вĕççĕр, çĕрĕ — аслă:
Сăрт, юханшыв, вăрман, ял хыççăн ял...
Килентерет ун сăнĕнчи мăнаçлăх:
Тӳпи нихçан ун пулас çук аял!
Эс, Руç-Раççей, хитре килĕшӳпе,—
Хальхи, иртни пĕрлешнĕ май пит меллĕн
Хаваслăн илĕртен инçетӳпе,
Çавра çĕн тăрăсем çутса илемлĕн.
Пăхатăп та — таçта та çĕнелӳ!
Ку — чи хакли: эппин, хĕрӳлĕх сывă!
Эппин, сӳнмен сан вăрттăн мехелӳ,
Ӳсет пулсассăн паттăрла хĕр-ывăл.
...Утатăп çутă сывлăмлă çулпа.
«Аван-и?!» — саламлать пек ял автанĕ.
Ман тĕл пулас килет кашни çăлпа,
Калас килет ун хуçине: «Тăванăм!»

40 Сăрт-ту. Çыран хĕрри. Çанталăк шăрăх.
Йĕппе чикет тип курăк урана —
Утатăп тăвалла мăн Атăл тăрăх
Вăй-халăма пĕлмесĕр упрама.
Хыпса-çунса çитеп те пуç таятăп
Чултуайне пытаннă кив çăла.
Унта — выртса канмалăх хӳшĕ янтă.
Çăл чăп тулли — куклен те ывăçла.
...Каç. Вут умне çывхарчĕ пĕр çуран çын.
Каларĕ çывăрма выртас чухне:
— Ку çăл шывне юратнă Стенька Разин,
Унпа сипленĕ суранне, чунне...
Ман ыйăха сирсе, Раççей çăлкуçĕ
Пăшăрханса юрларĕ çĕрĕпе:
Тен, такама асилчĕ, тĕлĕк курчĕ...
Ун юррине итлерĕм чĕрепе.

41 ...Юрлать ҫӑлкуҫ. Тем кӗвӗлет кӑвайт.
Ҫӳҫентерсе ярать ват ҫын калавӗ.
Епле нумай-нумай вӑл астӑвать!
Епле ун йывӑр пулнӑ пурнӑҫ лавӗ!
«...Концлагерь сӗмӗ. Тыткӑн. Юн. Суран...
Фашист тилҫин ҫын еврлӗ эсрелӗ
Чыса варлас тесе сӑхать чунран!..
Вӑйли — тӳсет. Тепри — кунта та меллӗ...
Кӑвайт кӑварӗнчен вут тарнӑ пек,
Ӳтре, юнра хавал хӗлхемӗ сӳннӗн,
Куҫа хупатӑн: тӳсӗм ҫитмӗ тек!
Е — тимсӗр сивӗнен, ӳте юр хӳнӗн...
Сасартӑк... кил енче — таҫта-таҫта!—
Шарр! авӑтса ярать те ял автанӗ —
Ҫӑл шӑнкӑрми чӗнме пуҫлать унта!!.
Ҫав чӗнӳпе ман тӳсӗмлӗх туптаннӑ...

42 Ютра аса килни темрен тăван!
Ӳт тыткăнра та — шухăш çулĕ ирĕк.—
Йĕркен-йĕркен пурне те астăван:
Ак — пĕчĕк юханшыв, ак — шурă çирĕк,
Ак — шыв юрлать хуп валакра вăрах,
Ак — юхăмран пăхать сенкер вутчулĕ...
Асаилӳ мĕн чухлĕ тасарах —
Этем те çирĕпрех пек çавăн чухлĕ!
...Чи хаклă, чи тăваннине манни
Чи путсĕр тăшмантан тискер, киревсĕр:
Вăл — сутăнчăк... Ăна тĕл пулманни —
Телейлĕ çын: ырра шанать кӳтмесĕр...
...Те чăтăма, те шăпама пула
Салтакăн çулĕ ялăмра вĕçленчĕ —
Тăварлă куççуле шăла-шăла
Тăван çăлкуç умне эп чĕркуçлентĕм...

43 ...Кĕтме пĕлет ыр кăмăллă Раççей,
Сутăнчăка вара — нихçан каçармĕ!» —
Вĕçлерĕ хурлă калавне мучей.
Часах ăна пĕркерĕ каç аçамĕ.
...Эп шухăшлăн итлерĕм шăплăха,
Арпашнă çăлтăрсен çулне йĕрлерĕм.
Тав турăм çĕнтерӳçĕ-халăха,
Ун канăçĕ хӳтевлĕ пултăр, терĕм.
...Юрлать çăлкуç. Тем кĕвĕлет кăвайт.
Таçта утсем янравлăн кĕçенеççĕ
Е, çулăм вăййине тухса вăльт-вальт,
Çӳл капансем чăлл çутăлса илеççĕ.
Анчах вут сӳннĕçем кăвар ăшши
Хĕр евĕр сĕртĕнет çемçен, ачашшăн.
Çил хыççăн тĕтĕм, армути шăрши
Минĕретет те — куç ыйха путасшăн.

44 ...Илем туйне чĕнет пыл ҫунă ир —
Пур чĕрлĕхе вăратнă ҫутҫанталăк.
Хыҫа юлсассăн сăрт тӳпи, уй-хир,
Сасартăк тухрĕ куҫ умне ҫăл-палăк.
Вăл пĕрхĕнсе тапать сăрт айĕнчен,
Хӳхлет, тем пĕлтересшĕн, ушкăн-ушкăн.
Тарса килсе хура ҫăхавсенчен,
Ун умĕнче ларма юратнă Пушкин...
Итленĕ тимлĕ юхăм юррине —
Тăрна карти пек парр! ҫĕкленнĕ шухăш.
Кунта вăл туйнă халăх чĕрине,
Каҫ-каҫ ял пикине чуптунă шуххăн...
...Илем шыракансен йăлипеле
Ҫак тĕпсĕр ҫăлкуҫран эмел эп сыпрăм.
— Вăй пар мана? Уҫ сассăма, сипле? —
Унран пехил хавалĕ лăпкăн ыйтрăм.

Раççей типми çăлкуççенчен пуян —
Вĕсен таса имне кăшт тутансассăн,
Хăвна эс Илле-паттăр пек туян,
Тăван çĕре мухтас килет чан саслăн.
Çăлкуçĕ — пурнăç... Чĕрĕлӳ хевти!
Ун шывĕ — Çĕр-аннемĕр сĕчĕ, тейĕн:
Пылак та мар, йӳçек те мар тути —
Ĕçсессĕн, вилĕмрен пире чĕртейĕ.
Йăх, халăх, Руç-Раççей, Тăван çĕршыв
Çăлкуççенчен пуçланнă, ят та илнĕ...
Çĕн шарлаксем умне çĕн çурт-йĕр хыв
Эс, çĕр çынни! Ун чух—çын йăхĕ вилмĕ...
Шур хурăнпа пĕрле йăмра, юман
Унта ӳссе кашлаччăр килĕшӳллĕн,
Çĕклентĕр сывлăш ешĕл çулçăран:
Вара — тӳпемĕр пулĕ тăрă, çӳллĕ,

16 Мĕн чухлĕ ял-ши аслă Раççейре?
Миçе çăл куçĕ-ши тăван Раççейĕн?
Кашнин умне çитесчĕ ман пĕрре —
Шывне ĕçесчĕ пĕшкĕнсе, тирпейлĕн.
Çитесчĕ хай чи авалхи патне —
Лере, «...ăçтан пуçланнă Вырăс çĕрĕ...» *
Çĕр хăй упрать пуль ун таса ятне,—
Пĕлетĕп: вăл типмен, таппи ун чĕрĕ!
...Халь — шăп тăратăп ак, пуçа тайса.
Чăнкăртатса илет те кĕмĕл уçă —
Ума тухать чи хаклă, чи таса,
Чи тарăн, ĕмĕр иксĕлми çăл куçĕ.
Хăй — Аслă Атăл — пуçланать унран!
Ун шывĕ, ун эмелĕ — пирĕн чĕрĕлĕх;
Йăл илнĕ мар-ши çак тĕп çăлкуçран
Раççей килйышĕнчи тăванлăх, пĕрлĕх?!.

* «...откуда есть пошла Русская земля». Повесть временных лет.

47 Çул малалла — шур чуллă Мускава!
Ав, çăлтăрсен пуххи çиçет ун çийĕн —
Çути шевле сарать, шăва-шăва
Тăп-тăрă тÿпере, çĕрте — сий-сийĕн...
...Мускав! Утатăп Хĕрлĕ Площадьпе —
Кĕрлет кунта çĕршер чĕлхеллĕ халăх.
Сенкер чăрăшсемпе чул çул йĕпе —
Çăвать çут çумăр, çил пур куç шăлмалăх...
Тăратăп вĕçсĕр-хĕрсĕр черете,
Ĕçес килни ăша вутла çунтарнăн.
Мĕнле çăлкуç палкать-ши çак çĕрте?! —
Тĕнче ĕçет унран — вăл тăрă, тарăн!..
Ун сиплĕ вăйĕпе танлаштарсан,
Мĕскер вăл, юмахсен мухтавлă шывĕ?!
Çак çăлăн чи таса таппи пуртан
Ман халăх та, эп хам та чунлă, сывă...

48 «Этем тени çĕре çĕнетмелле,
Юратмалла сăпайлăн, хак ыйтмасăр»,—
Тесе пурнатăп халăхпа пĕрле,
Таçти ютра суя чап шырамасăр.
Тен, пулчĕ йăнăшни, чĕре çунни,
Тен, кĕрмĕшрĕ сĕтел хăш чух пехетсĕр —
Чуна сутмарăм эпĕ, çĕр çынни,
Сăмахăмпа перкелешмерĕм ретсĕр.
...Раççей чăвашĕ эпĕ — чăвашсен
Пур шăнкăр шывлă иксĕлми çăлкуçĕ,
Шаркать вăл Улăп сăрчĕ айĕнчен —
Унтан шыв ĕçнĕрен ман сассăм уçă.
Силпи çăлкуçĕ, Çеçпĕл ĕçнĕ çăл,
Мухтавлă Шуршăл çăлĕ... Типмĕ, юхĕ
Вĕсен шăнкравлă шывĕ йăл та йăл!
Ана ĕçсе вăй илĕ Улăп йăхĕ.

49 ...Утатăп çаруран вĕри çулпа,
Йăх пуçĕ хăй тăван килне васканăн,—
Ман тĕл пулас килет кашни çăлпа,
Кашнин шывне ĕçсе курасчĕ манăн.
Миçе çăл куçĕ-ши Чăваш çĕршывĕн?
Мĕн чухлĕ ял ĕçет-ши вĕсенчен
Ӳстернĕ май нăк сывлăхлă хĕр-ывăл?
Эй, шаркăр, шарлаксем, çĕр чĕринчен!
Çĕр пин çăл куçĕ... Шухăшлă, янравлă,
Поэзилле илемлĕ ятсенче —
Чăвашăн чунĕ... Килĕшӳ ку, паллă:
Асамлă вăрттăнлăх пур вĕсенче...
Çĕр пин ят утнă май эп тĕл пулатăп —
Чăваш кунçулĕн вĕçсĕр эпосне
Эп вĕсенче йĕркен-йĕркен вулатăп,
Тĕпчетĕп халăхăн асне, ăсне.

Чăваш совет çĕршывĕ — ман умрă!
Кунта хăна эп — пурпĕр кăмăл уçă.
Тăванăн туйăнать сăрт-ту, йăмра,
Кив çиларманлĕ ялăн тăр çăлкуçĕ.
Унтан астиврĕм эпĕ, пуç тайса,
Сипетлĕ сĕткенне — кив эрлĕк иртрĕ.
«Пул ĕмĕр-ĕмĕр иксĕлми, таса! —
Тав турăм чĕререн.— Ан тип, юх ирĕк!
Çĕн çĕр чăвашĕсен юрри-тавне
Пурна киле ман сăввăмра эс илтĕн —
Вĕсен тунсăхĕпе юратăвне
Чĕре ăшши туса эп илсе килтĕм...»
...Хура Шывран Раççейĕн инçетне,
Унтан асаттесен çĕрне çул хыврăм —
Тутаннă май çĕршер çăлкуç шывне
Тăван, тус тупрăм — пурте сунчĕç ырлăх!

51 Хирне, ялне хитре ят панă халăх
Тăван çĕр илемне куç пек упрать —
Ун çăлĕсем пураллă, шур хăваллă,
Çӳçе-йăмраллă ялĕнчи урам.
Кашни ялта чăмпăлтатсассăн кӳлĕ,
Çеçке çурсассăн йывăçсем садра,
Тырри ӳссен парка пучахлă, çӳллĕ,
Чĕр курăк — утă çулнă вăхăтра,
Çырансенче каш! кашласассăн йывăç —
Çĕрпе этемĕн пулмĕччĕ суран,
Тусанлă тăвăл урмĕччĕ ыран,
Пĕве таппи те юлмĕччĕ пĕр ывăç...
Эй, пурнăç чĕртнĕ Çĕр-анне! Мана
Вучах чĕрттер кунта — тек сӳнмĕ çулăм!
...Хĕрӳ ĕçре çĕнетнĕçем сăнна
Ешĕлтерех, илемлĕрех эс пулăн.

52 Те вăрлăх тĕввинчи ас эпосне
Тĕпчевçĕ вăхăт вулама пуçланă —
Чун илтрĕ Çĕр-аннемĕн сассине:
«Кăкран ан татăл, ывăлăм-тăванăм...»
Çав аслă чĕнÿпе хавхаланса,
Çĕнелĕвĕн хĕрÿ ĕçне пикентĕм —
Е йывăç-тĕм лартса, е çул хывса,
Е тырă ÿстерсе çакна ĕнентĕм:
Хастарлăн илемлетнĕçем çĕре
Ÿсет, аслăланать-мĕн юрату та,—
Раççей — тăван анне пекех — пĕрре!
Пур халăхсемшĕн те тÿпи ун çутă.
Тупа туса калатпăр: ĕмĕрне
Ăна хуплаймĕ вутлă, тĕксĕм пĕлĕт! —
Тасан упрать çак чăнлăх элемне
Çĕршывăмри историлле çĕн пĕрлĕх.

53 Тўван ҫӗршыв... Ӑҫта ҫитес, каяс —
Ак тухӑҫ, анӑҫ, кӑнтӑр, ҫурҫӗр енӗ —
Кашни тӑван ҫӑлӗпеле хавас,
Ун симӗпе ҫех сӑйланма вӗреннӗ.
Кашнин тӑп-тӑрӑ шывӗ хӑй тути,
Кӗвви-юррийӗ те хӑйле янравлӑ,
Хӑй тӗслӗ куҫӗ, шӑнкӑрми ҫути,
Кунҫулӗ те кашнин хӑйле мухтавлӑ...
Ах, Руҫ-Раҫҫей! Упра ҫӑлусене!
Упра тасан, тирпейлӗн, пӑтратмасӑр!
Шур хулусен хисепӗ ӳсӗнет —
Ан юл, ан юл тулли ҫырмаллӑ ялсӑр!
Сан тӗпсӗр тӳпӳнте тӑрна сасси
Ан илтӗнтӗр ӳпкевлӗн те салхуллӑн...
Ах, йывӑр, йывӑр сансӑр юласси,
Тӑван ҫӑлкуҫ, ӑша тивсессӗн ҫулӑм!..

54 Поэт — ҫăл куҫĕ... Ҫĕр сĕтекĕпе
Пĕрлех сиплет этем чунне поэзи:
Чи хаклă, ĕмĕр чĕрĕ ятсемпе
Епле мухтанмăн, ырă ҫыннăм, эсĕ?!
Ҫĕр пин тĕрри, ҫĕр пин юрри, сăмахĕ,
Ҫĕр пин ҫăлкуҫĕ чăвашсен пуртан
Ҫĕнелĕвĕн юрри-сăвви юмах пек
Кĕвĕленет — ҫĕн эпоспа пĕр тан.
Ҫунни, ҫырни ан пултăр кăлăха —
Сăмахăм, ҫын ăшне тĕш евĕр акăн,
Пул пиҫнĕ ҫăкăр тутлăш — халăха
Вăй пар, ҫунатлантар куллен кун, ан кăн!
Мана Совет ҫĕршывĕ пурнăҫ пачĕ,
Ун ҫăлĕ уҫрĕ саҫсăмри ире.
Тăван ҫĕршыв, юратнă халăх, парти,
Пĕр пурнăҫăм, пин сăввăм — йăлт сире!

## ТУПМАЛЛИ

«Аннем чёри тапать ман кăкăрта...» . 4
ПЫЛ ÇУНĂ ИР
Сăвăсем . . . . . . . . . . 5
Вăрçă тĕлĕкĕ . . . . . . . . 7
Ачалăх . . . . . . . . . . 8
Салтак çырăвĕсем . . . . . . 9
Çĕнтерӳ ялавĕ . . . . . . . . 11
«— Анне, камсем вĕçеççĕ тӳпере...» . . 12
Хĕвел тĕттĕмленнĕ чух . . . . . 13
«Куç тишкерме пуçларĕ тĕнчене...» . . 15
Анне халалĕ . . . . . . . . 16
Хурçă чан . . . . . . . . . 17
Телей кайăкĕ . . . . . . . . 18
Мĕнле пурнан? . . . . . . . . 19
«Çыран. Пăр куписем...» . . . . . 20
Çитет хаваслă Май . . . . . . 21
«Çураки вĕçленчĕ!..» . . . . . . 24
«Хĕвелĕ! Çунтарать те çунтарать!» . . 26
Пыл çунă ир . . . . . . . . 28
«Арçынттей пичче çава туптать...» . . 29
«Ейӳ тĕтри пек шурĕ каçĕ...» . . . . 31
«Илĕм-тилĕм!..» . . . . . . . 33
Мунча юрри . . . . . . . . 34
«— Мĕскер хăвватлăрах, мĕн аслăрах...» . 36
«Пыл пухать пыл хурчĕ çеçкерен...» . . 37
Ĕççи . . . . . . . . . . . 38
«Ĕççи апачĕ — чи шеппи, тутли!..» . . 40
«Миçемĕш кун лӳшкет...» . . . . . 42
Çĕр тарĕ . . . . . . . . . . 44
«Ĕççи хĕрсех пырать...» . . . . . 45
Чакмапа Вутчуль . . . . . . . 46
«Йĕсленнĕ хăмăл...» . . . . . . 50
«Мĕнле ялсем! Мĕнле хитре ятсем!» . . 51
«Манса кайман-ши, теттĕм...» . . . . 53

Шура хуран . . . . . . . . 55
«Кĕр иртнĕпе пĕрех...» . . . . . 56
«Хуртлă улмасем ўкеççĕ ир...» . . . . 57
«Пĕри çывăхрине курмасть яр-уççăн...» . 58
«Пулас ял макечĕ ман умра...» . . . . 59
«Çуна çуначĕ — шалашка çине...» . . . 61
«— Йăлтах ăнлантăм пурнăç йĕркине...» 62
Чăваш çăкăрĕ . . . . . . . . 63
Ç у л . . . . . . . . . . 64
«Çăлтăрсен çути юхать ман витĕр...» . 65
«Çĕртен-шывран хакли çук тесе...» . . 66
Хыпар кĕтетĕп . . . . . . . 67
ЁМĔРЁМРИ ИЛЕМЛĔ САМАНТСЕМ
П о э м а . . . . . . . . . 69
ИЛЕМПИ
С ă в ă с е м . . . . . . . 105
«Ăна эп куртăм тўпере...» . . . . 107
«Тĕтре йăсланчĕ те шап-шуррăн...» . . 108
«Çурхи хĕвел пек йăлкăшса-çиçсе...» . . 109
«Сана эп тĕл пулсассăн куçа-куçăн...» . 110
«Каç. Чăлл çиçсе тем вĕçрĕ пĕлĕтрен...» . 111
«Çĕн кинсем пĕркенчĕк вĕçтереççĕ...» . . 112
«Утса иртетĕн те умра...» . . . . . 113
«Мана куçпа çех ан йăпат...» . . . . 114
«Çитмĕл тĕслĕ тĕрлĕ çеçкерен...» . . . 115
«Куç çулçи çийĕн шурĕ шурăмпуç çути...» 116
«Эс маншăн, Илемпи, чи çутă çăлтăр...» . 117
«Тĕлĕнетĕп...» . . . . . . . . 118
«Кăнтăр çутинче çĕре çĕнетрĕм...» . . . 119
«Хĕрарăма «илемсĕр эс» ан тейĕр...» . 120
«Чечек пек сăнупа чечен кўлепўнтен...» . 121
Илемпи илемĕ . . . . . . . . 123
«Яш чух шап-шурă роза парнелеттĕм...» 125
«Ир килнĕ чăштăр çиллĕ сивĕ...» . . . 126
«Тĕрлĕ тĕслĕ машинсен черечĕ...» . . . 127
«Çўл тўпере — татах тăрна ĕречĕ...» . . 128

«Хура элек — хура ҫӗлен...» . . . . 129
«Мӗн чухлӗ ҫиҫӗм тухнӑ-ши ман витӗр...» 130
«Эс — ман телейччӗ...» . . . . . 131
«Ан кай, ан вил...» . . . . . . 132
«— Саватӑн-и? — тесе час-час...» . . . 134
ШУР ЧАРЛАНСЕМ ЯЛА ВӖҪСЕ КИЛЕҪҪӖ
Поэма . . . . . . . . . 135
СЛАКПУҪ МӐЙӐРӖ
Сӑвӑсем . . . . . . . . 179
«Ик пӗчӗк сарӑ мӑйӑр...» . . . . . 181
«Юхать Слак хӑвӑрт...» . . . . . 183
«— Миҫере эс, йӑмра...» . . . . . 185
«Илем шыракансен йӑлипеле...» . . . 186
«Элчел ҫинчен халь шухӑшлас-и?» . . . 188
«Ҫулташ ыр тус пулсан...» . . . . 190
«Шап-шурӑ ҫӗмӗрт!..» . . . . . 192
«Мӗн пулчӗ-ши мана?» . . . . . 193
«Мӗскер ҫухатрӑм, мӗн туянтӑм?» . . . 194
«Куҫ харши ҫунатланма пуҫларӗ...» . . . 195
«Поэтсене юратӑр, пикесем...» . . . . 196
«Чипикаран, Чипикаран...» . . . . 197
«Сӑрт тӳпинче — хурӑнлӑхра...» . . . 198
«Эй, лайӑх ӗнтрӗк аннӑ чух...» . . . . 199
«Те хӑлат, те кӑйкӑр, те караппӑл...» . 201
Экспромт . . . . . . . . . 203
«Эп — ӑрӑмҫӑ. Суйлатӑп эп сӑмах...» . 204
«Мӗнле хӑват, мехел те пултарулӑх...» . 205
Кӗҫтенттин хресченсемпе сывпуллашни . 206
«Туртатчӗ пит нумай...» . . . . . 208
«— Мӗн вӑл, илем?..» . . . . . 210
«Тӗрленӗ савӑш куркинче — сӑра...» . . 211
РАҪҪЕЙ ҪӐЛКУҪӖСЕМ
Поэма . . . . . . . . . 213

Эндип Василий Иванович

МЕДВЯНАЯ РОСА

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор *П. Е. Димитриев*
Художник *В. Смирнов*
Художественный редактор *Е. Е. Михайлова*
Технический редактор *Г. С. Самсонова*
Корректор *Л. Т. Васильева*

Сдано в набор 26/III-1979 г. Подписано к печати 17/IX-1979 г. НТ 27659. Формат 70×108/32. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 8,50. Усл. печ. л. 11,90. Учетно-изд. л. 7,04. Заказ № 2073. Тираж 1500 экз. Цена 90 коп.

Чувашское книжное издательство.
Чебоксары, пр. Ленина, 4
Типография № 1 Управления по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли
Совета Министров Чувашской АССР,
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

3.65

0-90 коп.